3296
47
41-155

# Ф. П. ПАВЛОВ

# СОЧИНЕНИСЕМ

ЧӐВАШГОСИЗДАТ
1941

10
О.Т.К.



*Ф. П. Павлов*
*1892 — 1931*

# КОМПОЗИТОР, ДРАМАТУРГ

## *Ф. П. Павлов вилнĕренпе 10 çул тултарнă май*

Чăваш искусствинче ĕçленĕ чи паллă çынсенчен пĕри—Федор Павлович Павлов вилнĕренпе 10 çул çитрĕ. Çак талантлă композитора тата драматурга эпир вăл чăваш хорĕсен организаторĕ тата питĕ ăста дирижĕр пулса ĕçленине те лайăх пĕлетпĕр. Вăл музыка преподавателĕ пулнă, чăваш музыки историйĕ енĕпе питĕ нумай материалсем пухнă, музыка ыйтăвĕсем тăрăх хаçат-журналсенче нумай статьясем çырнă. Пирĕн литераторсемпе журналистсем Федор Павлович паллă юморист—сатирик пулнине те аван пĕлсе тăраççĕ.

Туберкулез чирĕ питĕ çамрăкла касса татрĕ çак хаклă работникăн кунçулне. Вăл 1931 çулта, июнĕн 2-мĕшĕнче, Сочири санаторинче вилчĕ. Ун чухне вăл 39 çулта çеç пулнă.

Ф. П. Павлов 1892 çулта, сентябрĕн 13-мĕшĕнче, Етĕрне уездĕнчи (халĕ Чăваш АССР

Çĕрпӳ районĕ) Патăръял ятлă ялта, вăтам хресчен çемьинче çуралнă. Ялти шкулта вĕренсе тухнă хыççăн вăл Иккассинчи 2 класлă шкулта вĕреннĕ. 1907 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Ку шкулта вĕренсе тухнă хыççăн вăл учитель пулнă. Вăл питĕ лайăх вĕреннине тата музыка енĕпе питĕ пултаруллă пулнине шута илсе, часах ăна çав шкулах музыка преподавателĕ пулма чĕнсе илнĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçленĕ чухне Федор Павлович чăваш чĕлхипе литературин никĕсне хываканăн, чăваш поэзийĕ классикĕн Константин Васильевич Ивановăн питĕ çывăх юлташĕ пулнă. Чăваш искусствин фронтĕнче ĕçлес кăмăлĕсемпе ĕмĕчĕсем вĕсен иккĕшин пĕрле çĕкленнĕ, иккĕшĕ искусство çинчен нумай калаçса, нумай плансем туса, ĕçлеме ĕмĕтленнĕ. К. В. Иванов литературăпа живопись енĕпе, Ф. П. Павлов музыкăпа литературăра ĕçлеме хатĕрленнĕ, ĕçленĕ те. Вĕсен пуçĕнче ун чухнех чăваш оперин сăн-сăпачĕ калăпланнă. Иккĕшĕ те драматургипе интересленнĕ. К. В. Иванов „Нарспи" поэма тăрăх опера либреттине те палăртать, сцена валли декораци те çырать. Ф. П. Павлов оркестрпа хор тата соло валли „Уяв" ятлă сценка та çырать. Чĕмпĕр шкулĕнче, „Иван Сусанин" оперăна лартса

выляса парасси енӗпе те вӗсем иккӗшӗ пӗрле ӗçленӗ. Ку операна 1913 çулта преподавательсемпе вӗренекенсен вăйӗпех лартнă. Пысăк рольсенчен пӗрне вылякане—исполнителӗ Ф. П. Павлов (баритон) пулнă. Вăлах юлашки действинче дирижёр пулнă. Художник-декоратор К. В. Иванов пулнă.

Хулари театрсемпе концертсене те Ф. П. Павловпа К. В. Иванов çав шухăшпа хӗмленсех пӗрле çӳренӗ. Ахальрен мар Федор Павлович Константин Васильевича питӗ лайăх кăмăлпа асăнатчӗ, вăл çырнă поэмăшăн хавасланса, çав хушăрах вăл çамрăклах вилнишӗн хурланса каласа паратчӗ.

1913 çулта Федор Павлович, ытти шкула кайма май килменнипе, духовнăй семинарине вӗренме кӗрет. Унта та вăл пуринчен ытларах хорпала музыка ӗçне вӗренет.

1916—1917 çулсенче вăл Кушлавăшра тата Балдайра (Етӗрне у.)—пуçламăш шкулта вӗрентет, 1917—18 çç. пӗр вăхăтра Шемшерте (Шупашкар у.) халăх судьи пулса ӗçлет. Хусанта юридически курсра вӗренет. Унтан Хусанта Çурçӗрпе Хӗвелтухăç енчи халăхсен археологи, истори тата этнографи институтне вӗренме кӗнӗ. 1920—21 çулсенче Чăваш республикинче (Çатракассинче, Хурамалта) учитель пулса пурăнать, хоркружоксем организацилет, Шупашкар уездӗнчи

çутĕç пай пуçлăхĕн заместителĕ, унтан Тутар республикинчи Çутĕç Комиссариачĕн искусство инструкторĕ пулса ĕçлет. Ăна Чăваш секци пуçлăхĕн заместителĕ те тăваççĕ.

Чăвашсен Автономлă облаçне тунă хыççăн Шупашкара куçать, Çутĕç пайĕн музыка уйрăмĕнче ĕçлет. Шупашкарти Педтехникумра тата музыка шкулĕнче юрăпа музыка ĕçне вĕрентет. Техникумра хор организацилет. 1923 çулта ку хор Мускавра ялхуçалăх выставкинче пулать, ăна Ф. П. Павлов ертсе пырать. Унта 8 юррине граммофон пластинки çине ӳкерсе илеççĕ (вĕсенчен нумайĕшĕ Ф. П. Павлов хăй гармониленĕскерсем: „Вĕлле хурчĕ", „Шупашкар туйи", „Çырма хĕрне", „Олту", „Хăйматлăх юрри"). „Евгений Онегин"оперăран „Хор поселян" юрра чăвашла куçарса, ăна хăйĕн хорне вĕрентет. 1922 çулта хăй укçипе „Ялта" драмăна пичетлесе кăларать.

1923 çулта Ф. П. Павлова Чăваш АССР Главсуд членне суйлаççĕ, тата тĕрлĕ вăхăтсенче вăл хăшпĕр учреждениенче (Çĕрĕç комиссариачĕ) юрисконсульт пулса ĕçлет. Çав хушăрах музыка ĕçне те пăрахмасть. Чăваш музыкĕ çинчен материалсем пуçтарать, кĕнекесем кăларать, юрăсем çырать, чăваш юррисене юрлакансенчен çырса илсе

илемлетет, хаçат-журналсенче тĕрлĕ статьясем пичетлет. Чăваш республикин хорĕнче 2—3 çул хушши аслă дирижёр пулса ĕçлет. Музыка техникумĕнче вĕрентет (сольфеджио, хоровое пение), концертсенче тăтăшах скрипкăпа тухать (трио, квартет). Чăваш республикин Государство хорĕпе Мускава, Горькие, Хусана тата Чăваш АССР районĕсем тăрăх кайса çӳрет.

Хăй сырма палăртса хунă оперетăна тата музыкальнăй комедие çырма тытăнса пăхать, хăйĕн пĕлӳлĕхне çĕнетес, музыка енĕпе тата лайăхрах вĕренес тесе, вăл Ленинграда, Музыка консерваторине вĕренме кĕрет. Унта чăваш студенчĕсен хорне ертсе пырать, çĕнĕ юрăсем çырать.

Консерваторине Федор Павлович ятарласа композиторсен ĕçне вĕренме кайсаччĕ. Анчах çĕнетнĕ пĕлӳне вăл пире параймарĕ, хăй çырма кăмăлланă вăйăллă юррисене çырса хăвараймарĕ. Унăн сывлăхне ӳпке чирĕ сăхса пырса, ăна вăхăтсăрах нӳр çĕре чикрĕ. Хăй сывлăхĕ начарланнине туйса Ф. П. Павлов 1931 çулта кăнтăр енне, Сочи санаторине сывалма кайрĕ. Профессорсем хăйне сыватма хытă тăрăшни çинчен пĕлтерсе, хаçат-журналсенче ĕçлекен юлташĕсем патне çырусем яратчĕ. Анчах та унăн организмĕ хытах хавшаса çитнĕ пулнă. Часах Со-

чирен: июнĕн 2-мĕшĕнче, каçхине 7 сехет те 18 минутра Федор Павлович вилчĕ—тенĕ хыпара илтĕмĕр.

Чăваш хорĕсене организацилессипе чăваш юррисене нумай сасăпа, музыкăпа пĕрле юрлама илемлетни тĕлĕшĕпе Ф. П. питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл хора питĕ ăста ертсе пынинчен нумайăшĕ тĕлĕнсе, хавасланса калаçатчĕç, хаçатсем çине çыратчĕç.

Федор Павловича, тарăн шухăшласа, чĕререн тивмелле витĕмлĕ çыракан ăста музыкçă, художник—лирик темелле. Унăн музыкĕ, тĕплĕрех илсе пăхсассăн, чăваш ялĕн пурăнăçĕпе хăйĕн кăмăлĕсене çыхăнтарнă лирика. Паллах, унăн пултарулăхĕ пĕр вырăнта, ним улшăнусăр тăнă темелле мар.

Ф. Павлов музыкине эпир унăн „Сăрнай", „Ача-пăча юррисем", „Çĕнĕ юрăсем", „Çĕнĕ сăрнай" сборникĕсем тăрăх, тата духовой оркестрпа калама çырнă маршĕ, скрипкăпа фортепиано валли çырнă произведенийĕсем, тата симфониллĕ оркестрпа каламалли „Сăрнайпа палнай" тăрăх пĕлетпĕр.

Малтанхи юрăсенче Ф. П. чăваш халăх кĕввисене илсе гармониленĕ кăна мар, вăл хăйĕн шухăшĕ-кăмăлĕсене художествăллă музыкăпа палăртнă. Кайран çырнă юррисенче те кашнинчех (кулăшлисенче те) лирика сăрхăнать, пур юрринче те вăл хăйĕн тĕп

шухăшĕсене палăртать. Юррисенче унăн савăнăçлă кĕвĕсемпе пĕрлех, чăвашсен пусмăрлă пурăнăçĕнчен юлнă хурлăхлă та салхуллă кĕвĕсем сисĕнеççĕ.

Чăвашсен авалтан пыракан этнографиллĕ юррисене Ф. Павлов питĕ ăста гармониленĕ („Туй", „Хăйматлăх юрри", „Сĕрен", „Тăрна" т. ыт. те). Юлашки вăхăталла Ф. Павлов чăваш ĕçхалăхне валли, паянхи кунсемпе çыхăнтарса, çĕнĕ юрăсем пара пуçларĕ. („Харăс, харăссăн утар", „Колхоз юрри", „Çуркуннехи кайăксем", „Çĕнĕ улах юрри", „Çамрăксен юрри" т. ыт. те).

Ф. Павлов юррисене çакнашкал тĕп тапхăрсене уйăрма пулать.

1. Халăх музыкинчен илнĕ, анчах хăйĕн кăмăлне те палăртакан лирика: „Шупашкар туйи", „Сапсар кĕрĕк", „Вĕлле хурчĕ", „Йĕс таканлă", „Пирĕн урам" т. ыт. Ку юрăсенче пусмăрлă пурнăçран юлнă хурлăхлă кĕвĕсем илтĕнеççĕ. (Статьяра кĕвĕсемпе кăтартма çук пирки, юрăсен сăмахĕсене илсе, хамăр шухăшсене çирĕплетсе пырар).

„Ĕмĕр вăрăм, пуçăм çамрăк!
Епле пурăнса иртерем-ши?"
(„Шупашкар туйи").
Ах, шухăшăм, шухăшăм,
Мĕншĕн эсĕ пăтранан?"
(„Вĕлле хурчĕ").

„Вӗлле хурчӗ“ ятлӑ юрра Ф. П. Павлов питӗ юрататчӗ. Унӑн сӑввине те, кӗввине те хӑех ҫырнӑ. Вӑл хӑйӗн ҫамрӑк чухнехи кӑмӑлне, хӑйӗн пӗрлешеймен савнине аса илсе, телейлӗ ҫемье пурнӑҫӗшӗн тунсӑхласа ҫырнӑ юрӑ вӑл.

„Вӗлле хурчӗ ылттӑн хурт
Шав ҫаврӑнать, нӑрлатать.
Ман ӑшра та ҫавнашкал
Тӗрлӗ шухӑш пӑтранать“.
(„Вӗлле хурчӗ“)

„Пирӗн ҫамрӑк чӗресем пусӑрӑнмасть,
Тем чул хурлансан та,
Ҫынна курӑнмасть“.
(„Чӗнтӗрлӗ те кӗпер“)

тенисем Ф. Павловӑн пӗтӗм пултарулӑхне кӗрӗймен пулин те, хӑшпӗр юррисене вӗсен тути ҫапнах.

2. Иккӗмӗш вырӑнта Ф. П.-н этнографиллӗ юррисем: „Туй“, „Хӑйматлӑх юрри“, „Олту“, „Вӗҫкӗн“, „Сӗрен“, „Тӳттӗл“, „Ташӑ кӗвви“ т. ыт. вӑйӑ-уяв чухнехи юрӑсем,— йӑласене, ялти кивӗ пурнӑҫран юлнӑ енсене кӑтартакан юрӑсем тӑраҫҫӗ. Йӑла йӗркисемпе, кӗвӗсемпех хавасланса кайса:

„Алтӑр тӗпӗ сыв пултӑр“,

тенисем, ҫав хушӑрах, хӗре тавар пек укҫалла сутнине, хӗрӗнчен ытла япалине (туп-

рине) хапсăнса тăвакан туйсене тарăхса кăтартни те пур („Хăйматлăх юрри“).

Ф. Павлов халăх искусстви илемлĕхне пуç тайса, хĕмленсе тăракан кăмăла, „çамрăк чĕрине“, тăван кĕвĕпе, музыка искусствипе лăплантарма пăхнине сисетпĕр. Пĕренчен вăл наци музыкĕн расналăхне хытах палăртакан „пилĕк тонлă гаммăсене“ çĕмĕрсе, наци кĕввине „çичĕ тонлă анлă гамма“ (Европа музыкĕн сăнĕ) кĕртет, кивввине нимĕн тивми хĕрхенсе тăрасшăн мар вăл („Чĕнтĕрлĕ те кĕпер“), вырăссен паллă композиторĕнчен Чайковскирен музыка ĕçне вĕренет, çав хушăрах Ф. П. чăваш халăхĕн „типлă обстановкăсенчи типлă сăнлăхĕсене“ çĕклеге кăтартма нацилле расналăхне палăртма тăрăшать.

„Вылямашкăн, кулмашкăн
Тухъя пуçлă хĕр чипер“.
(„Олту“).

3. Юлашки вăхăтри тапхăр—Ф. П. Павлов массăллă-революцилле юрăсем çырнă тапхăр:

„Харăс, харăссăн утар!
Хĕрлĕ ялав, хĕрлĕ ялав айĕнче“.
(„Хĕрлĕ ялав“).

„Пирĕн çамрăк чĕрере
Сулхăн тытма кирлĕ мар“.
(„Ай улми“).

„Уничерен тухар-и,
Айтăр колхоз тăвар-и те
Электрицă çутар-и".
(„Колхоз юрри").
„Маттур салтак пулар-и те
Совет çĕршывне сыхлар-и".
(„Хĕрлĕ çара каякансен юрри").

Кунта Ф. П. революцие чун-чĕререн йышăнни курăнать. Ку юрăсен революцилĕхĕ асăннă сăвăсенче, поэтсен сăмахĕнче кăна мар, кĕввисенче те лайăх палăрать. Сăввисемпе музыкĕ унăн питĕ килĕшсе пыраççĕ. Ку юрăсене чылай çĕрте питĕ килĕштерсе юрлаççĕ, пахалаççĕ вĕсене.

Ф. П. Павлов тата ĕç юррисем, колхоз çамрăкĕсене валли вăйăллă юрăсем çырас шăнччĕ. Хăшпĕр поэта сăмахĕсене çырса хатĕрлеме те хушнă.

Музыка фронтĕнче питĕ тăрăшса ĕçлени, музыка пирки çырнисем те Ф. П. Павлов чăваш юрри-кĕввине чунтан юратнине, чăваш юрри-музыкĕ ĕçхалăхне культурăлатасси тĕлĕшĕпе пысăк хĕçпăшал пулса тăнине вăл аван пĕлнине кăтартаççĕ.

Музыка ăсти кăна мар Ф. П. Павлов, вăл пирĕн чи малтанхи драматургсенчен пĕри. Ана эпир „Судра" тата „Ялта" пьесăсен авторне тивĕçлипе хак хурса аса илетпĕр.

Ку пьесăсене нумайăшĕ пĕлеççĕ, нумай çĕрте выляна. Вĕсем Ф. П. Павловăн чи паллă произведенийĕсем, пирĕн литературăра вĕсем чылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Кусемсĕр пуçне Ф. П. Павлов сăвăсем, калавсем, фельетонсем те çырнă.

„Судра" комеди Ф. П. Павловăн чи вăйлă, пит те тĕплĕн туса çитерне произведенийĕ. Чăвашсен малтанхи тата чи лайăх комедийĕ тесе пахалатпăр эпир ăна. 1918 çултах ăна сцена çинче лартма тытăннă, 1919 çултах вăл „Шурăмпуç" журналра пичетленсе тухнă. Пьесăн кашни сăмахне чăн-чăн юморпа витĕр çапмаллах витĕмлетсе çырнă, çавăнпа та вăл халиччен пирĕн сцена çинчен анмасть.

Ф. П. Павлов ĕçе пысăк ăсталăха пăхăнса, питĕ тĕплĕ тума тăрăшни çак пьесăра питĕ лайăх палăрать. „Судра" комедийĕн типĕсене пĕрре сцена çинче курнă хыççăн пачах асран каймалла мар сăнласа панă. Комедийĕн кашни геройĕ хăйĕн „типлă" вырăнĕнче пулни витĕр курăнса тăрать. Ăна çырасса лайăх, пурте ăнланмалла, халăх хăй калаçакан илемлĕ чĕлхепе çырнă.

Кам-ха вăл Ухтеркке?—Çав тери кăмăллă та кăшт айванрах, пакăлтатма юратакан старик. Вăл, пачах вĕренмен, патша Российĕнчи тискер йĕркесен, вак хуçалăхлă ялăн

ĕмĕрхи пусмăрĕпе тĕрлĕ йăла тĕшмĕшĕсен тыткăнĕнче пурăннă çын типĕ. Çапах та вăл йĕркелĕхшĕн тăрать, суд ĕçе тĕрĕс таттса парасса шанать. Хăй çемьинчи вак-тĕвек çитменлĕхсене, чăкăлтăшсене те вăл суд урлă татасшăн, хўтлĕх шырать. Ватă çынна Сăпани пек кинĕсем картманни пурах вăл чăваш ялĕнче. Çынна „тĕнче ухмаххи" тесе калакан, „камшăн пулсан—шăллăм, сирĕн пеккисемшĕн пулсан, шăллăм мар—я хосподин Герасим Федорович Криворотов второй" тесе çатăлтатакан „катăк çăварсем" те пур. Вĕсем, хăйсен интересĕшĕн пулсан, çынна таçта шăтăка тĕртсе яма та хатĕр. Суда чăннипе, тĕрĕссипе ĕç мĕнле пулнине каласшăн Каюра Крахьянĕ пек инкесене хăратса, чавсапа тĕксе тăрсах, вĕсем ĕçе хăйсем майлă тутараççĕ.

Ухтерккесен урăхланнăрах типĕ Ф. Павловăн тепĕр пьессинче те („Ялта"-ра) пур, вăл—Муççа. Муççа кулаксем умĕнче шарласах каймасть, хăйĕн евчĕ пулса çўрекен карчăкĕнчен, Йăскартан, вăл кун пек йăлана хăнăхса пынă. Кулаксен ĕçки-çикине те ерме хатĕр. Вак хуçалăхлă хресчен идеологийĕпе пиççе пурăннăскер, вăл мĕнле те пулин хăйĕн ĕçне майлаштарасшăн, хăйĕн çирĕп политики çук унăн, кам вăйлăрах—çавăн майлă сулăнать. Яла революци хĕмĕ

пырса кĕрсессĕнех, вăл çав тĕрĕсмарлăхсене, кулаксен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма сасă парать.

„Лармастăп та, пиллеместĕп те...“—тет вăл хыттăнах, Çтаппансене юнасах калать.

„Эпĕ тахçанах Муççа пиччей.. Эпĕ ухмах мар“—тет вăл туй вăхăтĕнче, Ванюк салтакран килнине пĕлсен.

Катăк Çăварсен малалла аталаннă типĕ те „Ялта“ драмăра пур. Вăл—ял куштанĕ, иртĕнсе кайнă кулак—Çтаппан. Вăл, ялта ятлă пуян тата куштан пулнипе, Ухтерккесене, Муççасене, Крахьянсене хăй çеммипе ташлатать. Староста та унтан хăрать. Хăйĕн ирсĕр ĕçĕсене çиеле кăларассишĕн Çтаппан Крахьянсене, чавсипе тĕртсе хăратса кăна мар, укçапа сутăн илет. Вăл чăрсăрлансах пырать, ял халăхне ним вырăнне хумасăр, мĕн авалтанпа пыракан йăласене таптасах та хăй чапне сарма тăрăшать (пĕрре качча кайнă хĕре пысăк туй тусах качча илни, хăй арăмĕ вилмесĕрех тăлăх арăма улталаса, ун патне киле кĕренçи пулса, пурлăхне хăй патне туртать т. ыт. те).

Сăпани пек кинсемпе Крахъян пек инкесене те Ф. П. Павлов тĕрĕс ӳкерсе панă.

Комедире Ф. Павлов халăх хушшинчи йă-

йасене, витĕмлĕ сăмах çаврăнăçĕсене лайăх пĕлни курăнса тăрать. Халăх хушшинчи юморпала сатирăна вăл питĕ пысăк вырăна хунă.

„**Ялта**" драмăра автор империализмлă вăрçă вăхăтĕнчи чăваш ялне кăтартса панă. Ку произведенин паха енĕ—ялти куштансен пурнăçне, вĕсем чухăнсене мăшкăласа иртĕнсе пурăннине питлени пулса тăрать. Пьеса ял халăхĕн, чухăнсемпе вăтамсен, çав ирсĕрлĕхпе кĕрешме кирлине систерет. Пьесăна çăмăл чĕлхепе çырнă, халăх юррисем кĕртсе илемлетнĕ.

Пьесăра ĕненмелле мар тата искусственнă сюжета кĕртнĕ вырăнсем те пур. Сăмахран, „тăлăх арăм" вырăнче шутланакан Елюка пысăк туй тусах качча пани (чăваш хушшинче ун пек йăла пулман), Çтаппана—куштана çителĕклĕ таран, вĕçне çитиех уçса кăтартманни, ăна илемлетерех сăнлăхлани т. ыт. те. Çак çитменлĕхсене, ĕненмелле мар туйăнакан вырăнсене сахаллатас тесе, драмăна 1932 çулта кăштах урăхлатнă, ăна постановка валли çĕнетнĕ.

„Ялта" çĕнĕ вариантпа, çĕнĕ редакципе икĕ хутчен пичетленсе тухнă. Икĕ варианчĕн те хăйне расна пахалăхĕсем пуррине асра тытса, ку сборнике пьесăн икĕ вариантне те кĕртетпĕр.

Ф. П. Павлован пьессисем те, содержанийĕ енĕпе тарăнтараххăн илсе пăхсассăн, юррисемпе пĕр сăнлăрах пек теме юрать.

Пусмăрлă пурăнăç вăхăтĕнчи хресчен, çити-çитми пурнăçпа асапланса çитнĕскер, хут вĕренменскер, кăмăллă старик, „тĕлĕнмелле“ Ухтеркке хăй кинĕпе сутлашни, вактĕвекшĕн, пĕр татăк кукăльшĕн вĕсем чакалашни, пĕр-пĕрне вичкĕн сăмахсемпе тăрăнтарса тăрмашни... пысăк хирĕçĕвех мар пурăнăçра. Культурăллă чĕлхепе тăнлантарса парсассăн, вăл ĕнтĕ майланать... тени—çăмăллăн ачашласа каякан, кăмăла çав хушăрах витĕр хĕртсе илекен кулăш (юмор) виткипе витĕнет („Судра“).

Лайăх сăнаса ўкерсе илнĕ ялăн сăн-сăпачĕ: ытарма çук, кăмăла килекен çамрăклăх вăййисем, çыннисен çутă ĕмĕчĕсем, çав хушăрах капитализм тапхăрĕнчи, тĕшмĕшлĕхсен тыткăнĕнчи таталакан ĕмĕтсем палăраççĕ.

Çиелтен пăхсассăн—лăпкă пек курăнакан чăваш ялĕ, шаларах кĕрсессĕн—пурнăçăн ниме хĕрхенмен „хытă алли“, класла пусмăрлăх законĕсем, „турă çырни“ тенисемпе тахçантанпа пыракан йăла йĕркисемпе тĕшмĕшлĕх тăллисенчен хăтăласшăн ял, майĕпе çеç пулин те, вирлĕн капланса пыракан класс кĕрешĕвлĕ ял тухса тăрать куç умне.

Музыкăри пекех Ф. Павлован литератур

лă творчествинче хăйĕн интимнăй пурнăçĕнчен илнĕ, хăйĕн чĕрине ĕмĕр манми ырattарнă япаласем те сăнлăхланса кĕрсе юлнă. Çÿлерех асăннă „Вĕлле хурчĕ“, „Чĕнтĕрлĕ те кĕпер“ юрăсенчи кĕвĕсемех вĕсем.

Çавăн пек пытанчăк шухăшсене сăнлăхласа вырнаçтарнă пулин те, хăйĕн юррисене те, пьессисене те Ф. П. Павлов халăха питĕ çывăх, ăнланмалла çырнă. Вăл ĕçе пысăк ăсталăхпа, тĕплĕн, лайăх якатса тунă. Çавăнпа та, авторăн хăшпĕр произведенийĕсем класс кĕрешĕвĕнчен аяккарахра тăнă пек курăнаççĕ пулин те, Ф. П. Павлов творчестви пирĕн искусствăра питĕ пысăк, хаклă пурлăх пулса тăрать.

Ф. П. Павлов вилнĕренпе 10 çул çитнине асăннă май ку сборнике эпир унăн пьессисене, пĕр шÿтлĕ калавне, икĕ сăввине тата пĕр статьине кĕртетпĕр. Статья Ф. П. Павлов юрă ăсти пулнине, вăл мĕнле обстановкăра вĕренсе ÿснине, К. В. Ивановпа пĕрле пулнине, хăй музыка тĕлĕшĕпе ĕçленине те кăштах кăтартса парать.

Ф. Павлов гармониленĕ тата хăй çырнă юрăсемпе ытти музыкăллă произведенийĕсем уйрăм сборникре пичетленсе тухаççĕ.

Унăн ытти произведенийĕсене те (раснах музыкăпа искусство ыйтăвĕсем тăрăх çырнă статьисене) пухмалла.

Ёнтӗ К. В. Ивановпа Ф. П. Павлов ӗмӗчӗсем пурнӑҫа кӗчӗҫ. Пирӗн ирӗклӗ ҫӗршывра ирӗклӗ чӑваш юррисем уҫҫӑн янӑраҫҫӗ. Чӑваш театрӗнче чӑвашла постановкӑсем пулаҫҫӗ.

К. В. Иванов поэмипе сӑввисене пӗтӗм чӑваш хушшинче пӗлеҫҫӗ, чӑваш шкулӗсенче кашни класрапа пӗрех вӗренеҫҫӗ вӗсене. Темиҫе чӗлхене куҫарса К. В. Иванов творчествине ытти тӑван республикӑсенче те юратса вулаҫҫӗ.

Ф. П. Павлов юррисем те кӳршӗ халӑх хушшинче сарӑлса пыраҫҫӗ, вӗсем радио тӑрӑх пӗтӗм Совет Союзӗпе янӑраҫҫӗ.

К. В. Ивановпа Ф. П. Павловӑн произведенийӗсем тӑрӑх пирӗн чи малтанхи оперӑсене ҫырма тытӑннӑ („Нарспи", „Ялтә").

Ф. П. Павловӑн пьессисем пьеса халлӗн те мӗнпур чӑвашсем хушшинче сарӑлчӗҫ.

Халӗ, Сталинла Конституци хӗвелӗ ӑшшинче, ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ творчествӑллӑ вӑйсем, искусство ӑстисем ӳссе пыраҫҫӗ. Чӑваш литературипе искусствинче те К. Ивановпа Ф. Павлов пуҫарнӑ ӗҫсем тӗреклӗн малалла атәланса пыраҫҫӗ.

Ӗҫхалӑхӗн социализмран коммунизма куҫнӑ тапхӑрти пысӑк искусствине—формипе нациллӗ, содержанийӗпе пролетариллӗ искусствӑна—тӑвас ӗҫре Ф. П. Павлов творчест-

випе те тивĕçлипе усă курса, ун тăрăх та искусство ăсталăхне тата лайăхрах вĕренсе пырăпăр.

Çакă Ф. П. Павлова чи тивĕçлипе асăнни пулать.

*Н. Васянка.*

# СОЧИНЕНИСЕМ

# СУДРА

## ПĔР СЫПĂКЛĂ КОМЕДИ

### ВЫЛЯКАНСЕМ:

**Миравай—судья.**
**Секретарь.**
**Ухтеркке.** } судлашакансем.
**Сăпани—унăн кинĕ**
**Катăк Çăвар,** } свидетельсем.
**Каюра Крахъянĕ**
**1-мĕш заседатель.**
**2-мĕш заседатель.**
**Суда пынă çынсем.**

### СЦЕНА

Сцена—суд пӳлĕмĕ. Хыçалта алăк. Сулахай енче тепĕр алăк. Сылтăм енче хĕрлĕ пустав витнĕ сĕтел; сĕтелĕ тăрăхăшпе куракансем еннелле тăрать. Сĕтел хыçĕнче виçĕ пукан, миравайпа заседательсем валли. Сĕтел çинче саккун кĕнекисем, суд ĕçĕсем, чернильница тата судья вăчăри. Кăшт аяккарах тепĕр пĕчĕк сĕтел, вăл—секретарь валли. Тĕп алăк патĕнче, сылтăм енче шкап, сулахай енче—йывăç диван. Стена çинче сехет, тĕслĕрен хаклă картинăсем.

Суда килнĕ çынсем диван çинче тăваттăн калаçса ларaççĕ. Калаçни куракансене илтĕнмест.[1] Ларакансенчен пĕри чĕлĕм туртать, тепри суханпа çăкăр çиет. Калаçса ларнă чух сулахай алăкран секретарь тухать. Алăк хыçĕнче суда килнĕ çынсем шавлани илтĕнет.

[1] Редактор асăрхаттарнисене вула.

## 1-мĕш курăнни.

Секретарь тата тăватă çын.

**Секретарь.** Судьясем килеççĕ. Тухăр кунтан! (*Ларакансем тухса каяççĕ, алăк урлă каçсан, çавăрăнса пăхса тăраççĕ.*)

## 2-мĕш курăнни.

Секретарь.

**Секретарь.** Фу, ты... Паян халăх пасарти пекех... Коридор çитмен вĕсене, кунта кĕрсе ларнă тата! Епле! (*Ларать, кĕсъерен сехет кăларса пăхать. Стена çумĕнчи сехет çине пăхать. Хăйĕн сехетне хăлхи патне тытса пăхать.*) Виднă, паян та суд каçа юлать. Вăхăт—виççĕрен иртсе тăватă сехет çине кайнă. Судьясемшĕн пулсан мĕн,—лараççĕ вĕсем пăхса, а ман, секретарĕн, ал хытса кайичченех çырас пулать. Паян та—çыр-çыр, çыр-çыр,—шĕвĕр пӳрне лапчăнсах ларчĕ Эпĕ хам судья пулсан, нихăçан та пĕр кунтах çав тери нумай ĕç пăхас çук. Яр ăна пĕр çичĕ, ай, сакăр ĕç. Вăл пур, нихăçан та вуниккĕрен кая лартмасть. Паян вунвиççĕ... Чортова дюжина! Хе-хе-хе! Шуйттан дюжĕнĕ тухсан вара, нихăçан та ахаль иртмест. Е кулмалли ĕç тухать е тата макăрмалли. Паян мĕн пулĕ-ши? Кам ĕçне малтан ярас-

ши? Э-э... Ухтерккенне ярам-ха. Ку—тĕлĕнтермелле старик, заявлени парса хăварнă чухне те шалт култарса пĕтерчĕ. (*Сулахай алăк ҫинелле пăхать.*) Ах, килеҫҫĕ! (*Ура ҫине тăрать.*)

### 3-мĕш курăнни.

Секретарь, миравай, 1-мĕш тата 2-мĕш заседатель.

(Миравайпа заседательсем сĕтел хушшине пырса лараҫҫĕ. Вĕсем ларсан секретарь те ларать. Миравай куҫлăх тăхăнать, вăчăрине ҫакса ярать, унтан аллипе сулса, секретаре хушать.)

**Секретарь** (*тăрса*). Суд пуҫланчĕ.

**Миравай.** Слушается дело о семействе гражданина деревни Кереметь-Пусь Артемия Ухтеркина. Позвать сюда Ухтеркина!

**Секретарь** (*алăк патне пырса*). Ухтеркин Артемий! Артемий Ухтеркин!

**Ухтеркке** (*сцена хыҫĕнче*). Я-х!

**Секретарь.** Кĕр часрах!

**Ухтеркке.** Кĕретĕп, халех!

### 4-мĕш курăнни.

Ҫавсемех тата Ухтеркке.

**Ухтеркке** (*ҫынсене сирсе кĕрет*). Ы-ый, ҫынĕсем килсе тулнă, иртсе кĕмелле те мар. Ярччĕ-ха, кĕме памастăн... Яр, тетĕп!..

**Секретарь.** Ярăр ăна!

**Ухтеркке.** Ĕнтĕ кĕтĕм, ывăлăм, кĕтĕм.

(*Çелĕкне хывса хул хушшине хĕстерет, судьясене ал пама тăрать, ăна ал памаççĕ.*) Стравствăй!

**Миравай.** Мĕн?

**Ухтеркке.** Стравствăй, тетĕп!

**Миравай.** Судра ал памастăп.

**Ухтеркке.** Çаплах ийя, çаплах!

**Миравай.** Тăр вăт унта.

**Ухтеркке.** Юрать, тăрам.

**Миравай.** Позвать обвиняемую Степаниду Ухтеркину!

**Секретарь.** Ухтеркина Степанида! (*Хытă-рах.*) Степанида Ухтеркина! Пур-и вăл унта?

**Сасăсем.** Пурччĕ...

**Секретарь.** Чĕнĕр ăна.

**Сасăсем.** Сăпани! Сан ят тухрĕ, кĕр часрах!

**Сăпани** (*сцена хыçĕнче*). Кĕретĕп, халех.

**Секретарь.** Час!

### 5-мĕш курăнни.

Çавсемех, тата Сăпани.

**Сăпани** (*аран хĕсĕнсе кĕрет*). Ярха, пăяхам, часрах! Ах, турă, хĕстерсе лартрĕç...

**Секретарь.** Эсĕ-и Степанида Ухтеркина?

**Ухтеркке.** Ийя, ман кин вăл, усал.

**Миравай.** Не разговаривать!

**Ухтеркке.** Не расковору...

**Сăпани.** Кам, эпĕ-и?

**Секретарь.** Эсĕ çав, тата камран ыйтатăп.

**Сăпани.** Эпех пулĕ терĕм. Килте те Сăпани тетчĕç те...

**Секретарь.** Ай, суда килсен, пукане пултăн-им?

**Сăпани.** Пĕлмерĕм.

**Секретарь** (*витлесе*). Пĕлмерĕм!

**Миравай.** Степанида Ухтеркина!

**Сăпани.** Мĕн.

**Миравай.** Тăр маларах... Хунеçу çумнерех...

**Сăпани.** Юрать, тăрам. (*Ухтеркке çумне пырса тăрать. Ухтеркке ăна чавсипе тĕкет. Сăпани хирĕç тĕкет.*)

**Ухтеркке.** Ан тĕккеле! Мĕн, хăратас тетĕн-и, шăрчăк!

**Сăпани.** Ăçта эпĕ сана тĕкрĕм? Эсĕ ху малтан мана тĕкрĕн!

**Ухтеркке.** Ăçта эпĕ сана малтан тĕкрĕм?

**Миравай.** Ан çĕмĕрлĕр кунта! Кунта, суд вĕт!

**Ухтеркке.** Çаплах, ийя, çаплах...

**Миравай.** Не разговаривать!

**Ухтеркке.** Не расковору...

**Миравай.** Позвать сюда свидетеля Герасима Криворотова.

**Секретарь.** Криворотов! Герасим Криворотов! Пур-и вăл унта?

**Сасăсем.** Пурччĕ...

**Секретарь.** Чĕнĕр ăна!

**Сасăсем.** Катăк Çăвар! Сан ят тухрĕ! Кĕр часрах!

**Катăк Çăвар** (*сцена хыçĕнче*). Мы!
**Секретарь.** Кĕр часрах!
**Катăк Çăвар.** Кĕретĕп ,халех!..Çул пар, эй!

### 6-мĕш курăнни.

Çавсемех тата Катăк Çăвар.

**Секретарь.** Криворотов эсĕ-и?
**Катăк Çăвар.** Это так точчĕн!..
**Секретарь.** Мĕн точен?
**Катăк Çăвар.** Тойĕç, Криворотов — мы, сначчăт... чăвашла каласан—Катăк Çăвар...
**Миравай.** Криворотов!..
**Катăк Çăвар.** Чево исволĕте?
**Миравай.** Тух тула.
**Катăк Çăвар.** Мĕншĕн? Эпĕ кирлĕ пулмарăм-им тата?
**Миравай.** Эсĕ свидетель...
**Ухтеркке.** Çаплах, ийя, çаплах, хоспотин миравай, Катăк Çăвар вăл ман свитетлĕ. Вăл сана пĕтĕмпех каласа парать...
**Миравай.** Молчать!
**Ухтеркке.** Çук, урăх шарламастăп.
**Миравай.** Криворотов...
**Катăк Çăвар.** Чево исволĕте?
**Миравай.** Так вот, эсĕ свидетель.
**Катăк Çăвар.** Так точчĕн...
**Миравай.** Мĕн таклаттаратăн, улатакка мар вĕт эсĕ?

**Катăк Çăвар.** Никак нет, хоспота причашнăйĕ!

**Миравай.** Так вот, итле эсĕ малтан, мĕн калатăп эпĕ сана. Эсĕ свидетель, а свидетельсенчен кайран ыйтатпăр, çавăнпа эсĕ халь тух.

**Катăк Çăвар.** Слушаюс, хоспота причашнăйĕ! (*Тухать.*)

**Миравай.** Ступай. Позвать сюда свидетельницу Агриппину Каюрину.

**Секретарь.** Агриппина Каюрина!

**Сасăсем.** Каюра Крахъянĕ...

**Крахъян** (*сцена хыçĕнче*). Пур, пур, кунта-а!..

**Секретарь.** Кĕр часрах!

**Крахъян.** Кĕретĕп, халех...

## 7-мĕш курăнни.

Миравай, 1-мĕш заседатель, 2-мĕш заседатель, секретарь, Ухтеркке, Сăпани тата Крахъян.

**Крахъян.** Пăяхам, çул пар-ха, эпĕ кĕрем...

**Ухтеркке.** Крахъян, кунтарах кил, хĕрĕм...

**Миравай.** Не разговаривать!

**Ухтеркке.** Не расковору...

**Миравай.** Молчать!

**Ухтеркке.** Çук, урăх шарламастăп.

**Секретарь.** Агриппина Каюрина эсĕ пулатăн-и?

**Крахъян.** Эпех пулĕ, терĕм. Килте те Крахъян тетчĕç те...

**Миравай.** Тух калла.

**Крахъян** (*тухма тăрать, унтан çавăрăнса*). Ман киле каяс-и-мĕн апла?

**Миравай.** Киле мар, тула тух. Эсĕ свидетель...

**Ухтеркке.** Çаплах, ийя, çаплах, хоспотин миравай. Крахъян вăл ман çвигетлĕ. Эпĕ ăна качча илес тетĕп.

**Миравай.** Ухтеркке! Калатăп сана, ан шарла тесе. Мĕнле тăна кĕместĕн эсĕ?

**Ухтеркке.** Çук, урăх шарламастăп.

**Миравай.** Чарăн! Мĕнле туту ывăнмасть санăн?

**Ухтеркке.** Ара, тутан унăн шăмми çук çав.

**1-мĕш заседатель.** Ан янтра! Мĕскер пелкетĕн!

**Крахъян.** Тухас-и, эппин?

**Миравай.** Тух та ниçта та ан кай, сана тепре чĕнетпĕр.

**Крахъян.** Юрать. Тухам, эппин. (*Тухать.*)

## 8-мĕш курăнни.

Çавсемех, Крахъянсăр пуçне.

**Миравай.** Ну-с, все явились?

**Секретарь.** Все.

**Миравай.** Та-ак... Следовательно, начнем! (*Куçлăхне юсать, ĕç уçать те, вулать.*)

Гражданин Артемий Ухтеркин заявил мне, мировому судье, что третьего дня сноха, Степанида, выгнала его из собственного дома, причем кинула ему в спину сухим навозным комом...

**Ухтеркке.** Çаплах, ийя, çаплах...

**1-мӗш заседатель.** Ан шарла, чӑрмантаратӑн.

**Ухтеркке.** Çук, чӑрмантармастӑп; мӗншӗн чӑрмантарас? Эсӗ, хоспотин миравай, вулах, эпӗ урӑх шарламастӑп.

**Миравай.** Говорят тебе, не разговаривать...

**Ухтеркке.** Не расковору.

**Миравай** (*Ухтерккe çине хыттӑн пӑхать*). Гм...

**Ухтеркке** (*куракансем еннелле*). Йытӑ çиешшӗ чӗлхи, нимӗн те çавӑрса калаймасть. Кӑлтӑркки калана пекех тухать.

**Миравай.** Мӗн мӑкӑртататӑн эсӗ унта?

**Ухтеркке.** Сӑмаха çавӑрса калаймарӑмçке. Пирӗн чӗлхи сыпӑçмасть.

**Миравай.** Ну, ладно. Урӑх ан чӑрмантар.

**Ухтеркке.** Çук, урӑх чӑрмантармастӑп...

**Миравай** (*хулпуççине силлентерет*). А потому он, Ухтеркин, просит привлечь сноху, Степаниду, к законной ответственности. Причем указал свидетелей, одножителя Герасима Криворотова и одножительницу Агриппину Каюрину.

**Ухтеркке.** Çаплах, ийя, çаплах.

**Миравай.** Ухтеркке, каçармастăн-и эсĕ кинӳне? Каçар, вара ĕçĕ те пĕтет.

**Ухтеркке.** Çук, çу ук! Каçармастăп! Ман каçарма вăй çитмест, хоспотин миравай.

**Миравай.** Мĕнле вăй çитмест? Каçарма вăй кирлĕ мар вет?

**Ухтеркке.** Кирлĕ çав, хоспотин миравай! Мана вăл тислĕк муклашкипе печĕ те, ман халĕ те çурăм ыратать, кукăрăлма та памасть. Эпĕ тепре авланас теттĕмччĕ, халĕ ĕнтĕ, çурăм ыратнă пирки, авланма та çарăнса тăтăм.

**Миравай.** Каçармастăн пулсан, судне тăиатпăр!

**Ухтеркке.** Ара! судне ту çав, судне ту! Ăçтан каçарас ман ăна, хоспотин миравай! Вăл мана çăкăр та памасть. Пĕлтĕр пĕрре çăкăра алранах туртса илчĕ...

**Миравай.** Катая ан кай!

**Ухтеркке.** Катара мар, хоспотин миравай, хамăр килтех туртса илчĕ. (*Миравай аллипе сулать.*)

**Ухтеркке.** Чим-ха, хоспотин миравай, каласа пĕтерем... Çăкăра алран туртса илчĕ те ятлаçма пуçларĕ: Ы-ы-ы! эсремет пырĕ! Çиессе те çын пек çиме пĕлместĕн, лаша пек хыпатăн, тет. Сан тĕпсĕр катка хырăмна, çăкăр мар,салат пăтти чыхса тултарасчĕ! тет.

**Миравай.** Калатăп сана: пĕлтĕрхине ан тапрат.

**Ухтеркке.** Çаплах, ара, çаплах. Пĕлтĕрхине тапратмастăп...

**Миравай** (*аллине сулать*).

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа пĕтерем-ха. Ийя, çапла каларĕ те, вара, мĕн, ман алри çăкăра кăрт! туртса илчĕ!

**Сăпани.** Çук, эпĕ унтан çăкăр туртса илмен. Суять вăл, ан ĕненĕр ăна.

**Ухтеркке.** Ара, туртса илтĕн çав!

**1-мĕш заседатель.** Ан çĕмĕрлĕр!

**Ухтеркке.** Çук, çĕмĕрлместпĕр...

**Миравай.** Ухтеркке, кала эсĕ мĕн кирлине.

**Ухтеркке.** Çаплах, ара, çаплах. Мĕн кирлинех калатăп. Çăкăра ман алран туртса илчĕ те, вара, йытта: Саккул! на!—терĕ. (*Миравай аллипе сулать.*)

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа пĕтерем-ха. Вара, йытти ман хырăма кĕрес çăкăра кап! хыпрĕ. Эпĕ çăкăрне каялла туртса илесшĕнччĕ, йытти хампар айне тарса кĕчĕ. Мĕншĕн вилес мар вăл йыттăн! Вăл та пулин мана çын вырăнне хумарĕ.

**Сăпани.** Мĕн суятăн, вилменскер! Ăçта эпĕ çăкăрне йытта патăм? Хам çирĕм-ĕç. Йыттине те... пурăнас йытта вĕлертĕн. Сасси лайăхчĕ!

**1-мĕш заседатель.** Ан шарла! Ыйтаççĕ акă санран та.

**Ухтеркке.** Эпĕ – ватă çын. Эпĕ – суймастăп! Эсĕ ху суятăн! Ы-ы, суя çăмхи!

**Миравай.** Эсир йытăпа суя çинчен сывлăша ан янратăр. Иксĕр хушăрта мĕн пулнине калăр. Ухтеркке, эсĕ кала.

**Ухтеркке.** Çаплах, ийя, çаплах, хоспотин миравай! Эсĕ халĕ курма-ан ман кин янранине. Пĕр пелкеме пуçласан, чĕлхи те ывăнмасть унăн, çаплах пелкет.

**Миравай.** Калатăп сана, Ухтеркке, аяккалла ан пăрăн. Эсĕ мана ĕç çинчен кала!

**Ухтеркке.** Çаплах, ара, çаплах; аяккалла пăрăнмастăп, ĕç çинченех калатăп. Пăрăнсан май килмерĕ вара вăл. Астумастăн-и, хоспотин миравай, Çавал арманче, пĕлтĕр, хуçа мельникĕ пăрăс çинчен аяккалла пăрăннă та...

**Миравай** (*аллипе сулать*).

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа пĕтерем-ха. Пăрăс çинчен аяккалла пăрăннă та, арман хыçне шампăлт! чăмнă. Вăт, хоспотин миравай, çапла вăл аяккалла пăрăнсан.

**Миравай.** Ун çинчен ыйтмаççĕ санран. Сана кинў мĕн турĕ, çавна кала!

**Ухтеркке.** Е-е... а, халь те! Кин-и? Кин кайран, çăкăрне чармарĕ вара...

**Миравай.** Эсĕ кун çинчен мар! Виçĕмкун мĕн пулни çинчен кала.

**Ухтеркке.** А, а.. халь те! Виçĕмкун пулни... Е-е... Виçĕмкун çăкăр çинчен мар, кукăль çинчен тухса кайрĕ мар-и, каTăршнăй пуçĕ...

**Миравай.** Ха-ха-ха! Кала, апла пулсан, кала.

**Ухтеркке.** Ийя, кукăль çинчен тухса кайрĕ çав. Мĕн, кин кукăль пĕçернĕ те, кукăль çиет. Эпĕ пур, текех тип çăкăр паккатăп; çăкри те пулин кăн-кăвак кăвакарса кайнă. Хăнкăла шăрши çурать, сăмса патне те леç-мелле мар.

**Сăпани.** Суять вăл. Ан ĕненĕр ăна.

**1-мĕш заседатель.** Ан шарла...

**Ухтеркке.** Эпĕ—ватă çын! Эпĕ—суймастăп. Эсĕ ан пўл мана, старике... Çук, хоспОтин миравай, суймастăп. Вăл хăй суять. Эпĕ нихăçан та суя суймастăп. Эсĕ мана ĕнен, ватă çынна.

**Миравай.** Ну, малалла кала.

**Ухтеркке.** Çаплах, ара, çаплах; малалла калатăп... Ман кин кукăль пĕçернĕ те кукăль çиет. Кинĕ-ĕ-ĕ-м! терĕм, мана, ват çынна, кукăль шăл çеммиччĕ те, терĕм. Сан кукăль тутлă-ши? терĕм. Çапла каларăм анчах, мана кин—хар-р! кăшкăрса пăрахрĕ. Çăха-ан-н! терĕ,—кукăль тата сана, терĕ, сана мунча чулĕччĕ!—терĕ.

**Сăпани.** Ăçта апла каларăм! Мĕн суятăн, вилмен? Суять вăл, ан ĕненĕр ăна. Çăхан тесе эпĕ çăвар та уçман. Вăл хăй мана тем-

скер те-пĕр каласа пĕтерчĕ. Епле! Сăмакункă персе тултарнă, хăсасшăн ĕклетсе çӳрет. Кукăль тата сана, сăмакункă карланкине!

**1-мĕш заседатель.** Эсĕ тăхта-ха, ан шарла. Ыйтĕç акă санран та.

**Ухтеркке.** Ара, каларăн çав: çăхан пырĕ! терĕн. Эсĕ апла каламан пулсан, кукăльне те çинĕ пулăттăм. Вара, пĕр кăмака кукăле ху пĕчченех хыпса ятăн. Эсĕ ху çăхан пырĕ. Сан пекки ялта кам пур, якăлти?

**Миравай.** Мĕн кĕрлетĕр? Эсир кунта иксĕр ятлаçма килмен вĕт. Ухтеркке! Кала эсĕ чипер: кинӳ сана чăнах килтен хăваласа кăларса ячĕ-и?

**Ухтеркке.** Ара, кăларчĕ çав, кăларчĕ. Вăт, тупата туршăн, кăларчĕ. Хăваласа кăларсах ячĕ!

**Миравай.** Ухтеркке! Хăçан вăл сана çурăмран тислĕкпе печĕ?

**Ухтеркке.** Мĕн? Хăлхана кĕреймерĕ-çке, ывăлăм.

**Миравай.** Эк-кей! Эпĕ ăçтан сан ывăлу пулатăп?

**Ухтеркке.** Çаплах, ара, çаплах. Ухмах мар-и эпир. Хут вĕрентмен пире. Пĕр çĕр чавалама вĕрентнĕ те, çĕр чаваласах вилетпĕр. Вилсен вара, çăвара карса выртатпăр.

**Миравай.** Итле! Кинӳ сана хăçан çурăмран тислĕк муклашкипе печĕ?

**Ухтеркке.** Ийя! Печĕ çав, хоспотин миравай, печĕ. Кукăль çисе тăранчĕ те, сăрлă пыр, кăмака çине çывăрма хăпарса выртрĕ, кушак çури пек... (*Миравай аллипе сулать.*)

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа пĕтерем-ха... Хăпарса выртрĕ те, мĕн, хăрлаттарчĕ вара ыйăха. Харр-харр-хар! тутарать... Ку кин ман çывăрса вилсех каять-и-ха, тетĕп. А, вăл пур, çаплах хăрлаттарать. Куна пĕлнĕ пулсан, вилтĕр пулатчĕ пĕрех хутчен.

**Сăпани.** Мĕн суятăн, суеçĕ! Ăçта эпĕ çывăртăм? Ахаль анчах выртрăм-иç! Эсĕ ху, ватă сысна пек, кунĕн-çĕрĕн çывăратăн, выльăх-чĕрлĕх пăхма та тухмастăн вара.

**Ухтеркке.** Эсĕ ан пӳл мана, старике. Эпĕ йĕркипе калатăп! Итле-ха, хоспотин миравай. Ыйăхран тăчĕ те, шыв ĕçме тăчĕ, шыв çук... Вара каллех мана ятлаçма пуçларĕ. Ы-ы, сулланчăк! тет. Каткара шыв çук, шыв патне те каймастăн, уссăр кĕлетке, тет. (*Миравай аллипе сулать.*)

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа пĕтерем... Ара, пăхчĕ-ха, çапла каламалла-и унăн мана, ватă сынна? Ху кай шыв патне, терĕм. Эсĕ—çамрăк сын, терĕм. Кăмака çинче манăн, ватă сынăн, выртас пулать, терĕм. Çапла каларăм ку... Унччен те пулмарĕ, кин кăмака çинчен ялт! сиксе анчĕ. Вара пуçа çĕклеме те па-

марĕ: пӳртрен ӳпне те питне тĕксе кăларса ячĕ.

**Сăпани.** Ăçта эпĕ сана тĕксе кăларса ятăм? Мĕн суятăн, пĕтесскер? Эсĕ ху мана малтан кутран тапрăн.

**Ухтеркке.** Ăçта эпĕ сана кутран тапрăм? Эсĕ ху мана малтан çатма аврипе тутаран тĕкрĕн. Асав шăла катса пăрахрăн та, пыра ларса, кĕçех вилеттĕм.

**Сăпани** (*Ухтерккене пырса тутинчен тèкет*). Ы-ы, кӳпменскер!

**Ухтеркке.** Айяй! пĕтерчĕ, пĕтерчĕ!..

**Миравай** (*аллипе сĕтел çине çапса*). Ан çĕмĕрлĕр кунта! Кунта суд вĕт! Ха, епле вĕсем тупнă янтрамалли?.. Шăп!!! Ухтеркке! Кала эсĕ чипер, мĕн кирлине!

**Ухтеркке.** Çаплах, ара, çаплах! Мĕн кирлинех калатăп...

**Миравай.** Санпа пуплеме, старик, малтан апат çиес пулать. Унсăрăн санпала пĕтĕмпех аптрамалла.

**Ухтеркке.** Çаплах, ара, çаплах! Выçă хырăмпа камăн пуплес килĕ. Паян кунта ларса каç та пулать, паян хырăм тàхçанах выçнă. Апатсăр ăçтан пурăнатăн? Апат вăл вăй-питти вĕт. Эсĕ хуть нумаях çиейместĕн пулĕ, хоспотин миравай, а эпĕ-тĕк!.. (*Миравай аллипе сулать.*)

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа кăтартам. Ĕлĕк-

рех ман пек çиекен ялĕпе те çукчĕ. Ну, вара хам та çимеллипех çиеттĕмччĕ!.. Çăкăра урлă тытаттăмччĕ те, пăх-ха, хоспотин миравай, акă çапла тытаттăмччĕ те (*сĕтел çинчи кĕнекене илсе, сыртса кăтартать*), шатăрт! çыртаттăмччĕ. (*Миравай аллипе сулать.*)

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа пĕтерем! Вара пĕр çăкăра пĕтĕмпе çисе яраттăмччĕ. Çисе ярсан, виçĕ алтăр шыв ĕçеттĕмччĕ. Вара хырăм акă çапла сарăлса каятчĕ...

**Миравай.** Ан пупле ытлашши!

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа пĕтерем...

**Миравай.** Ав!..

**Ухтеркке.** Çук, урăх шарламастăп...

**Миравай.** Санран ун çинчен ыйтмаççĕ вĕт!

**Ухтеркке.** Тăнланаймарăм-çке, ывăлăм! Темскер çинчен ыйтатăн эсĕ манран. Хăлхи йӳплĕ мар-и манăн. Пĕр йӳппинчен кĕрет те, тепĕр йӳппинчен вĕлт! тухса каять... (*Хуллен.*) Эпĕ пĕчĕкçĕ чухне ман хăлха шăтăкне йӳплĕ хӳре кĕнĕ, тет. Çавăнпа ман хăлха йӳплĕ, пулнă, тет. Ăна эпĕ анчах мар, ялĕпелех пĕлеççĕ.

**Миравай.** Аптрамалла санпала. Кала эсĕ, вара, малалла: кинӳ мĕн турĕ сана?

**Ухтеркке.** Малалла çаплах: çатма аврипех çапать.

**Миравай.** Çапнăшăн ăна ывăлу мĕншĕн чармасть. Сан кинӳн упăшки пулĕ вĕт?

**Ухтеркке.** Упăшки? Упăшки çук çа-ав... Салтака кайрĕ. Пĕлтĕр вĕсем шăкăртах вун çын кайрĕç. Пĕри ман Петĕр, тепри Каюра Куçми, тепри Шукăль Микулай, тепри Мускав Энтрисен, тепри Çĕнçĕр Тинехпи...

**Миравай.** Ытлашши пуплетĕн!

**Ухтеркке.** Çук, каккуй ытлашши, тата нумай... Тата тепри камччĕ-ха... Э-э, тепри Мăнтăр Савали... Палламастăн-и эсĕ ăна, хоспотин миравай? Хăш чухне вăл сирĕн пеккисене аш сутса çÿрет.

**Миравай.** Мăнтăр Савалипе мĕн тăвас пирĕн. Сана ун çинчен ыйтмаççĕ вĕт. Кала эсĕ хăвăн ывăлу çинчен.

**Ухтеркке.** Э-э... Мин ывăл-и... Ман, киле таврăнаймарĕ, салтакрах пуçне çирĕ, мăнтарăн ачи... (*Хуллен.*) Ăна унта пунттă тунăшăн персе пăрахнă, тет. Эсĕ хоспотин миравай, никама та ан кала... (*Хытă.*) Эпĕ вăл вилнине тĕлĕкрех куртăм. Çĕрпÿ хули çунать, пек. Урам туллиех çын утать, пек... Паян пасар мар-çке, мĕн çынĕ утать, ара, ку? тетĕп, пек. Унтан, çумăр çăвать, пек. Çумăр та мар çынсем те мар, пек. Темскерсем çĕрпе пĕлĕт хушшинче утаççĕ, пек.

**Миравай** (*аллипе сулать*).

**Ухтеркке.** Чим-ха, каласа пĕтерем... Эпĕ: мĕн? тетĕп. А вăл, пирĕн Петĕрсем пунттă туни пулнă..

**Миравай.** Кинӳ ҫинчен кала.

**Ухтеркке.** Ҫаплах, ийя, ҫаплах. Кин ҫинченех калатӑп. Уншӑн пулсан, хуть—вил, хуть—чӗрӗл. Вӑл—уншӑн пулсан, хӑнт! та тумасть. Пӗр пасара йӑкӑртатма пӗлет те, шукӑль, тата мана кышлама пӗлет. Вара, то тех пор ҫӗмӗрлет, то тех пор ҫӗмӗрлет: йытӑ пекех янрать, ҫӑвар уҫма та памасть.

**Сӑпани.** Ан ӗненӗр ӑна. Суять вӑл. Пӗтӗмпех суять. Эпӗ ӑна ятлаҫассине те нихӑҫан та ятлаҫман тата килтен те нихӑҫан та хӑваласа кӑларман.

**Ухтеркке.** Ийя, кӑлартӑн, хӑваласа кӑларсах ятӑн. Эсӗ хӑваласа кӑларман пулсан, эпӗ суда та памастӑмччӗ.

**Миравай.** Ухтеркке! Эсӗ кинӳпе ан пупле, пире кала!

**Ухтеркке.** Ҫаплах, ийя, ҫаплах! Сирех калатӑп. Кин мана чӑнахах пӳртрен хӑваласа кӑларса ячӗ. Суймастӑп. Кӑларса ячӗ те, эпӗ хуллен пусма картлашкипе ҫӗре анаттӑмччӗ. Кин хыҫран сиксе тухрӗ те, мана ӗнсерен тӳ-ӳнт! тутарчӗ. Вара эпӗ пӑлтӑр-палтӑр! чикеленсе кайрӑм, шыв лапашкине чӑпӑл-чапӑл! кӗрсе ӳкрӗм. Мӗн, лартӑм вара унта...

**Сӑпани.** Ӑҫта эпӗ сана тӗксе ятӑм? Ы-ых, пӗтесскер, суя суять тата!..

**Ухтеркке.** Ара, тӗксе ятӑн ҫав. Эсӗ тӗксе яман пулсан, шыв лапашкине, мӗн, эпӗ, ай,

юри кӗрсе лараттӑмччӗ. Итле-ха, хоспотин миравай. Тунма пуҫларӗ, усал. А эпӗ, ватӑ ҫын, суя суймастӑп. Ара, вӑл тӗксе яман пулсан, эпӗ йӗме те йӗпетместӗмччӗ, кута та вараламастӑмччӗ. Ман халь те кут хуп-хурах. Ӗненместӗн пулсан, пӑх-ха, хоспотин миравай. Маншӑн пулсан суя ҫук! (*Ҫавӑрӑнса кӑтартать.*)

**Миравай** (*аллипе сӗтел ҫине ҫапса*). Тӑр чипер, ухмах! Мӗн пӑркаланатӑн? Часрах кала: малалла мӗн пулчӗ?

**Ухтеркке.** Малалла ҫаплах...

**Миравай.** Мӗн ҫаплах?

**Ухтеркке.** Пылчӑк лапашкинчен упаленсе тухрӑм та, вара, суймастӑп, чышкӑпа юнасах каларӑм: Ки-и-ин! терӗм, эпӗ сана куншӑн каҫармастӑп! терӗм. Суда паратӑп! терӗм. А мӗншӗн вӑл мана, старике, тӗксе ярать? Ай, хальхи саккунпа, кинӗсен ашшӗсене ӗн-серен тўплеттермелле?

**Сӑпани.** Суять вӑл, ан ӗненӗр ӑна!..

**Ухтеркке.** Эсӗ ан пўл мана, старике! Эпӗ йӗркипе калатӑп. Итле-ха, хоспотин миравай. Вара эпӗ суда тухса утрӑм. Кин мана кӑш-кӑрать: тухса сӗтӗрӗнех, упӑте хӑраххи! сӗ-тӗрӗнех, намӑссӑр! тет. Ҫапла каларӗ ку... Эпей! Тислӗк муклашки илчӗ те, мана ҫу-рӑмран яра пачӗ! Муклашки иртсе кайтӑр тесе, пӗшкӗнме тӑнӑччӗ, ҫу-ук, ман ватӑ

шăмшак вăр-варах çавăрнаймасть. Вара çурăмран, мĕн, кăшт аяларах, çакăнтан тиврĕ. Хам сисеймерĕм те, леп! турĕ.

**Сăпани.** Суять вăл. Ан ĕненĕр ăна, лаччĕ анчах турĕ.

**Ухтеркке.** Эсĕ ан пўл мана, старике. Эпĕ йĕркипе калатăп. Итле-ха, хоспотин миравай. Вара унтан мана тем те пĕр те каларĕ, тем те пĕр каларĕ. Суда мар санăн, вată сăрнайăн, киремет айне кайса тăрăнасчĕ, терĕ. Çу-ук! Каçармастăп эпĕ ăна, хоспотин миравай! Нихăçан та каçармастăп. Вилсе каям,— каçармастăп. Вилсен те вăл ман çине пырса тăпра ан пăрахтăр. Вăт, çавăнпа эсĕ ăна, хоспотин миравай, мĕнле те пулин чар!

**Миравай.** Чаратпăр.

**Ухтеркке.** Чар, чар! Ўлĕмрен ман алăри çăкăра туртса илмелле мар ту! Кукăль те çимелле ту!..

**Миравай.** Вара, унпа çитет-и сана?

**Ухтеркке.** Çитмесĕр!.. Çитет, çитет.

**Миравай.** Апла пулсан, эсĕ ăна касамата хуптарас теместĕн-им?

**Ухтеркке.** Мĕ-ĕн! Касамата? Çук, çук, çу-ук? Касамат тесе çăварна та ан уç! Эсĕ ăна ахалех чар! (*Хуллен.*) Эпĕ сана уншăн ахаль тумастăп, алликĕ пус паратăп...

**Миравай.** Ха-ха-ха! Ах-ха-ха-ха!!

**1-мĕш заседатель.** Хе-хе-хе!

**2-мёш заседатель.** Хы-хым-хым!

**Ухтеркке** (*вёсене курса кулать*). Ăхи-ăхи-ăхи-хик!

**Миравай.** Ха-ха-ха! Ну, Ухтеркке! Эсĕ питĕ тĕлĕнмелле çын! Ахаль мар сана, мучей, Ухтеркке тесе каланă!

**Ухтеркке.** Ара, çаплах! Ахаль ăçтан апла кулатăн çынна!

**Миравай.** Ну, Ухтеркке! Каçар кинне. Вара ĕçĕ те пĕтет.

**Ухтеркке.** Çук, çу-ук! Каçармастăп! Ман свитетлĕсем пур. Пенине урамра çынсем курчĕç. Катăк Çăварпа Каюра Крахъянĕ пăхса тăчĕç. Ĕненместĕр пулсан, эпĕ причак çиме те пултаратăп.

**Миравай.** Ыйтатпăр свидетельсенчен... Позвать сюда свидетеля Герасима Криворотова!

**Секретарь.** Криворотов!

**Сасăсем.** Катăк çăвар... чĕнеççĕ.

**Катăк Çăвар.** Мы! (*Кĕрет*).

### 9-мĕш курăнни.

Çавсемех тата Катăк Çăвар.

**Катăк Çăвар.** Чево исволĕте?

**Миравай.** Криворотов, эсĕ—свидетель...

**Катăк Çăвар.** Так точчĕн, хоспота причашнăйĕ!

**Ухтеркке.** Çаплах, ийя, çаплах, хоспотин

миравай! Вăл ман свитетлĕ. Вăл сана пĕтĕмпех каласа парать.

**1-мĕш заседатель.** Ан шарла! Санран ыйтмаççĕ халь.

**Миравай.** Криворотов, сан ĕнтĕ мĕн ыйтнине пĕтĕмпех чăн калас пулать.

**Катăк Çăвар.** Никак нет, хоспота причашнăйĕ, эпĕ ку ĕçпе нимĕн те пĕлместĕп.

**Ухтеркке.** Ара, куртăн вĕт, мĕн тунатăн?

**Катăк Çăвар.** Курман.

**Ухтеркке.** Э-е, Катăк шăллăм, эсĕ апла, мĕнле ара? Эпĕ сана лайăх ача тесе?

**Катăк Çăвар.** Ан янтра, тĕнче ухмаххи! Кам шатри шăллăмĕ пур сан валли? Ухмах! Камшăн пулсан—шăллăм, сирĕн пеккишĕн пулсан—шăллăм мар, хоспотин Герасим Федорович Криворотов Второй! Пĕлетĕн-и эсĕ ăна?

**Ухтеркке** (*аллипе шарт çапать*). Вăт кутăн!

**Катăк Çăвар.** Хоспота причашнăйĕ! Вăл мана кĕлевĕç тăвасшăн свитетĕле тăратнă. Эпĕ ку ĕçпе нимĕн те пĕлместĕп.

**Ухтеркке.** Кутăн! Кутăн! (*1-мĕш заседатель Ухтерккене аллипе юнать.*)

**Миравай.** Криворотов, итле эсĕ малтан. Санран халех пĕлни-пĕлменни çинчен ыйтмаççĕ.

**Катăк Çăвар.** Пĕлетĕп, çаплах.

**Миравай**. Раз эсӗ свидетель, сан мӗн ыйтнине чӑн калас пулать. Чӑн каламасан, сана хуна лайӑх пулмасть. Судра суя суйнӑшӑн тӗрмене хупаҫҫӗ.

**Катӑк Ҫӑвар**. Это так точчӗн, хоспота причашнӑйӗ.

**Миравай**. Апла пулсан, кала: виҫӗмкун эсир Крахъянпа иксӗр урамра тӑтӑр-и?

**Катӑк Ҫӑвар**. Это так точчӗн... (*Сӑпани ҫине пӑхса илет.*) Э-э, тӑман, тӑман. Виҫӗмкун эпӗ урама та тухман!

**Миравай**. Каларӑм, вӗт, эпӗ сана, чӑннипе калас пулать, тесе. Мӗншӗн суятӑн?

**Катӑк Ҫавар**. Никак нет, хоспота причашнӑйӗ! Чӑна-чӑн калатӑп. Халиччен суя суйманна, тин ҫӑвара вараламастӑп.

**Миравай**. Мӗнле тата эсӗ икӗ тӗслӗ каласа ятӑн?

**Катӑк Ҫӑвар**. Это, так точчӗн, ман темскерле, чӗлхе ҫыхланчӗ.

**Миравай**. Кала малалла: эсир урамра тӑнӑ чух Сӑпани ашшӗне тислӗкпе печӗ-и?

**Ухтеркке**. Ийя, печӗ ҫав, хоспотин миравай, печӗ!

**Катӑк Ҫӑвар**. Никак нет, хоспота причашнӑйӗ.

**Миравай**. Куртӑн пулсан, мӗншӗн чӑннипе каламастӑн?

**Катӑк Ҫӑвар**. Я—слопотнӑй гражданин,

хоспода причашнăйĕ. Ни суймастăп, ни курнине тунмастăп. Анчах та, ку ĕç çинчен эпĕ нимĕн те пĕлместĕп. Курман илтмен.

**Миравай.** А, пĕлмесĕн-и эсĕ: Сăпани вăл ашшĕне пĕртак хĕсĕрлемест-и?

**Ухтеркке.** Ийя, хĕсĕрлет çав, господин миравай, хĕсĕрлеме пуçласан, алăк патнех персе хуйăрлать. (*1-мĕш заседатель Ухтерккене аллипе юнать.*)

**Катăк çăвар.** Никак нет, хоспота причашнăйĕ. Ухтеркке вăл хăй пуплекелет Сăпани çинчен, яла тухсан.

**Ухтеркке.** Хоспотин миравай, эсĕ унтан урăх ан та ыйт! Вăл кутăна перет.

**Миравай.** Криворотов, кала-ха тата: ашшĕне Сăпани килтен хăваласа кăларса ямасть-и?

**Катăк Çăвар.** Не могу снать, хоспода причашнăйĕ! Курман илтмен.

**Ухтеркке.** Хоспотин миравай! Вĕсем Сăпанипе иккĕшĕ пĕр шутлă! Ан ĕнен эсĕ вĕсене. Катăк Çăвар вăл ман кине качча илесшĕн астарать. Ĕнер те вĕсем иккĕшĕ пасара пĕрле кайрĕç.

**Катăк Çăвар.** Никак нет, хоспота причашнăйĕ! Ни пасар не пывал, ни Сăпани не кулял. (*Ухтерккене.*) Ы-ы. вата сăрнай. Эпĕ ĕнер Сăпание, пасарта мар, тĕлĕкре те курман.

**Ухтеркке.** Эсӗ питне кӗҫҫе ҫӗленӗ, ҫавӑнпа намӑса пӗлместӗн.

**Сӑпани.** Вӗсем, хӑйсем, Крахъянпа иккӗшӗ пӗр шутлӑ. Ӗнер атте мана тӗрлеттерет: Крахъяна качча илем анчах, тет. Вара сана, киремете, пуҫҫапмӑттамӑрччӗ, тет. Ан пуҫҫап! Мӗн тӑвап эпӗ сан пуҫҫапнипе!

**Миравай.** Криворотов! Тата мӗн пӗлетӗн?

**Катӑк Сӑвар.** Ничево, урӑх нимӗн те пӗлместӗп.

**Миравай.** Довольно! Ухтеркке, сан кинне каҫарас пулать. Свидетель сан майлӑ пӗртте каламасть.

**Ухтеркке.** Ҫук, ҫук! Каҫармастӑп. Аҫа ҫапсан та каҫармастӑп. Ман Крахъян пур, вӑл пӗтӗмпех каласа парать. (*Крахъяна чӗнет*) Крахъян, кил-ха кунта! Кил.

**1-мӗш заседатель.** Ан кӑшкӑр! Сансӑрӑнах чӗнеҫҫӗ.

**Миравай.** Ухтеркке! Тӑр эсӗ ху вырӑнна!

**Ухтеркке.** Юрать, тӑрам.

**Миравай.** Позвать сюда свидетельницу Агриппину Каюрину.

**Секретарь.** Агриппина Каюрина?

**Сасӑсем.** Крахъян! Каюра Крахъянӗ...

**Крахъян.** Кунта!

**Секретарь.** Кӗр.

**Крахъян.** Кӗретӗп халех!

## 10-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех тата Крахъян.

**Миравай.** Крахъян! Тӑр кунтарах! (*Крахъян сӗтел патнерех пырса тӑрать.*)

**Катӑк Ҫӑвар.** (*Крахъян иртсе кайнӑ чух ӑна чавсинчен туртать те, хӑлхинчен шӑппӑн калать*). Ан кала, ан кала. Тун, пӗтӗмпех тун. Тунмасан, эпӗ сан ҫинчен ялӗпех ят сарап.

**Миравай.** Крахъян, курнине чӑннипе кала. Суя суйсассӑн, хуна лайӑх пулмасть.

**Крахъян.** Юрать, калам.

**Ухтеркке.** Крахъян, эсӗ: печӗ, те. (*1-мӗш заседатель Ухтерккене аллипе сулать.*)

**Миравай.** Крахъян, эсӗ виҫӗмкун урамра тӑтӑн-и?

**Крахъян.** Тӑтӑм. Катӑк Ҫӑварпа иксӗмӗр тӑраттӑмӑрччӗ эпир... (*Катӑк Ҫӑвар Крахъяна пырса чавсинчен хытӑ туртать.*)

**Крахъян.** Э-э, тӑман, тӑман! Виҫӗмкун эпӗ урама та тухман.

**Катӑк Ҫӑвар.** Хоспота причашнӑй, Крахъянпа эпир урамра виҫӗмкун мар, тӑватӑмкун тӑнӑччӗ кӗтех... Ахаль пулсан, тӑрас ҫукчӗ те, вӗсем умне пӗр тутар пулӑ сутма пынӑ та, пулӑ швеший-ши тесе, пытӑм.

**1-мӗш заседатель.** Ан шарла! Санран ыйтмаҫҫӗ!

**Ухтеркке.** Суять! Тăватăмкун пирĕн умра тутар мар, кушак çури те пулман. Хам пĕлсе тăратăп.

**Миравай.** Крахъян, куртăн-и эсĕ ашшĕне Сăпани тислĕкпе пенине? (*Катăк Çăвар Крахъяна чавсинчен пырса туртать.*)

**Крахъян.** Çу-ук, курман! Пĕлместĕп эпĕ нимĕн те.

**Ухтеркке.** Крахъян! Курнине мĕншĕн каламастăн?

**Заседатель.** Ан шарла! Санран ыйтмаççĕ!

**Ухтеркке.** Çу-ук, шарламастăп. Крахъян туннăран анчах калатăп.

**Миравай.** Крахъян, Сăпани вăл ашшĕпе мĕнле пурăнать? (*Катăк Çăвар Крахъяна чавсинчен пырса туртать.*)

**Крахъян.** Çу-ук, пĕлместĕп эпĕ нимĕн те. Çаплах пурнаççĕ пуль.

**Ухтеркке.** Крахъян, мĕншĕн тунатăн?

**1-мĕш заседатель.** Эй! (*Ухтерккене аллипе юнать.*)

**Миравай.** Сăпани вăл ашшĕне хĕсĕрлемест-и?

**Ухтеркке.** Крахъян, кала!

**Крахъян.** Çу-ук, пĕлместĕп эпĕ нимĕн те.

**Ухтеркке** (*аллисене шарт! çапать*). Акă тамаша!

**Миравай.** Крахъян, кала-ха тата! Сăпани вăл ашшĕне килĕнчен хăваласа ямасть-и? (*Катăк Çăвар Крахъяна тĕртет.*)

**Крахъян.** Çук. Хуть те мăйран шăршлă вĕренпе кăкарсан та нимĕн те пĕлместĕп. Ни илтмен, ни курман, çăвар та уçман...

**Ухтеркке** (*аллисене шарт! çапать*). Ну, Крахъян!

**Миравай.** Нимĕн те пĕлместĕн-и?

**Крахъян.** Пĕр пĕрчĕ те пĕлместĕп.

**Миравай.** Çитет.

**Ухтеркке.** Крахъян, мĕн ара эсĕ?

**Миравай.** Ухтеркке!

**Ухтеркке.** Я-х!

**Миравай.** Сан кинне каçарас пулать анчах... Пĕр свидетель те путлĕ кăтартмасть.

**Ухтеркке.** Ара, чим-ха! Хоспотин Миравай! Кукăль çиме чармасть пулсан, ман вара, каçарас шутăм та инçех мар. Хăй каçартăр!

**Миравай.** Сăпани, малалла аçуна кукăль çиме чармăн-и эсĕ?

**Сăпани.** Эпĕ ăна халь те нихăçан та чарман.

**Ухтеркке.** Кин! Эсĕ, вара, малалла та ан чар!

**Сăпани.** Кукăль мар, хуть те хуплу туса çи!

**Ухтеркке.** Вăт ман кинĕм, пукане тус!

**Сăпани.** Атте! Эсĕ те вара мана пĕр япала тума ан чар!

**Ухтеркке.** Мĕн ара?

**Сăпани.** Эпĕ Катăк Çăвара киле кĕртес тетĕп те...

**Ухтеркке.** Ара, кĕрт, паянах кĕрт! Кĕрÿ! Тавай, пар аллуна!

**Катӑк Ҫӑвар.** Малалла лайӑх пурӑнар ӗнтӗ.

**Ухтеркке.** Эпӗ те авланатӑп! Крахъян! Качча пыратӑн-и? Ман пӗр качака пур!

**Крахъян.** Сӑпани кин чармасть пулсан, эпӗ пӑрӑнсах тӑмастӑп. Ман хамӑн та пӗр сурӑх пур!

**Ухтеркке.** Кин, кинӗм! Чармастӑн-и?

**Сӑпани.** Маншӑн пулсан, хуть те ҫирӗм ҫиччӗ авлан.

**Ухтеркке.** Авланатӑп, паянах авланатӑп!

**Миравай.** Ухтеркке! Ӗнтӗ кинне каҫаратӑн пулӗ вӗт?!

**Ухтеркке.** Мошнӗ! Каҫаратӑп! Ҫыраг: каҫарчӗ, те. Авланать, те.

**Миравай.** Ха-ха-ха!

**Секретарь.** Хе-хе-хе!

**1-мӗш заседатель.** Хо-хо-хо!

**2-мӗш заседатель.** Ыхм-ыхм-ыхм!!!

**Ухтеркке.** Крахъян! Ӗнтӗ пирӗн, иксӗмӗрӗн, кунта урӑх ӗҫ те ҫук! Прощай, хоспатин миравай!

**Катӑк Ҫӑвар.** Прощайте, хоспата причашнӑйӗ! (*Судъясем кулаҫҫӗ.*)

ЧАРШАВ.

# Я Л Т А

## 4 ПАЙЛĂ ДРАМА

**1922 çулта пичетлесе кăларнă вариант**

### ДРАМĂРИ ÇЫНСЕМ

Пăрчкан—тăлăх арăм.
Елюк—унăн амаçури хĕрĕ.
Ванюк—каччă.
Çтаппан—авланнă çын.
Йăскар—карчăк.
Муççа—унăн упăшки.
Палля—салтак.
Старăста.
Çамрăк ача.
Ватă çын.
Туйпуçĕ.
Хăйматлăх.
Кĕреке пуçĕн юлташĕ.
1-мĕш туй ачи, 2-мĕш туй ачи.
1-мĕш туй арăмĕ, 2-мĕш туй арăмĕ.
Хĕрсем, ачасем, каччăсем, хĕрçумсем, туй халăхсем, туй ачисем, туй арăмсем тата ыттисем те.

Драмăри ĕç империализм вăрçи вăхăтĕнче, 1914—1916 çулсенче пулнă.

# ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Пăрчкан пӳртĕнче

## 1-мĕш куранни.

Елюк. Пăрчкан (*канса выртать*).

**Елюк** (*кĕрет*). Ĕнтĕ сурăхсене хупрăм.
**Пăрчкан.** Купăста шăвартăн-и?
**Елюк.** Шăвартăм.
**Пăрчкан.** Ĕнисене мĕн патăн?
**Елюк.** Пахчаран курăк çулса патăм.
**Пăрчкан.** Лашисене тата?
**Елюк.** Лашисене те шăвартăм, апат патăм.
**Пăрчкан.** Мĕн патăн?
**Елюк.** Сĕлĕ.
**Пăрчкан.** Юрĕ, апла пулсан. Ĕнтĕ кайса çыврах.
**Елюк.** Анне, ман пĕртте ыйăх килмест.
**Пăрчкан.** Мĕн тата?
**Елюк.** Эпĕ урама каятăп...
**Пăрчкан** (*тăрса ларать*). Мĕн? Ан чупса çӳренĕ пултăр!
**Елюк.** Анне, хĕрсем пурте урамра, юрăсем юрлаççĕ, епле манăн пĕчченех кайса çыврас?
**Пăрчкан.** Ан пелке, чупкăн! Пĕр-пĕр асăнмалăх тупăн-ха хуна валли.

**Елюк.** Анне, мĕншĕн апла калатăн?

**Пăрчкан.** Эпĕ санран аслăрах-и, аслăрах мар-и? (*Ӳпкелесе.*) Итле-ха. Ма эсĕ ман сăмахран тухатăн? Эпĕ хуна çуратнă анну мар пулсан та, ман саншăн чĕре ыратать.

**Елюк.** Анне, эсĕ яланах çапла калатăн.

**Пăрчкан.** Эх, Елюк. Вилсе каййăп та, кураймăп, çав. „Ёлĕк анне çапла калатчĕ“, тесе, сахал мар астăвăн вара.

**Елюк.** Анне, темскер çинчен калаçатăн эсĕ, эпĕ ăнланаймастăп.

**Пăрчкан.** Тĕрĕс каларăн. Чăнах та ним те пĕлместĕн эсĕ. Çипуç ырă, хырăм тутă тата мĕн кирлĕ?

**Елюк** Мана ним те кирлĕ мар.

**Пăрчкан.** Ухмах! Аçупа анну камшăн тăрăшнă тата? Пирĕн пуянлăх юр пек çӳлтен çуса пулман. Ёлĕкренпе çĕр тара илсе пухнă ăна Эсĕ вăл хурапа шурра тĕлĕкре те курман. Аçу вилсен пĕтĕмпех хам пуç çине юлчĕ те çурăма лаййăх тарлаттарчĕ.

**Елюк.** Анне, мĕншĕн-ха çилленетĕн? Эпĕ сан сăмахăнтан пĕртте тухмастăп-çке? Эпĕ хĕрсемпе вылямα анчах каятăп.

**Пăрчкан.** Эх, ачам, эпĕ сана хуна юратса калатăп. Ман шухăшпа, санăн çав çара çипуçлă ушкăнпа çӳреме питех килĕшмест. Асту: эсĕ пуян хĕрĕ, çавна ан ман.

**Елюк.** Анне, эпир вылятпăр анчах. Каятăп, анне?

**Пăрчкан.** Каях, эппин. Чармастăп. (*Елюк тухса кайма тăрсан.*) Елюк! Асту: Ванюкран аяккалларах пăрăн.

**Елюк.** Мĕншĕн, анне? Ванюк вăл питĕ ырă каччă-çке?

**Пăрчкан.** Юратмастăп эпĕ сан Ванюкна.

### 2-мĕш курăнни.

Çавсемех. Йăскар кĕрет.

**Йăскар.** Ман килес, Пăрчкан йăмăк.

**Пăрчкан.** Ах, килсем, килсем, Йăскар акай. Малалла ирт.

**Йăскар** (*пуç таять, сăхсăхать*). Килнĕскер, иртĕпĕр. Сывă-и, çӳретĕр-и?

**Пăрчкан.** Çӳретпĕр-ха хуллен. Эсĕ ху лайăх-и? (*Ал парасçĕ.*)

**Йăскар** (*Елюка*). Чупать-и, хĕрĕм?

**Елюк.** Лайăх-ха, кинемей. (*Ал парасçĕ.*) Анне, эпĕ каятăп.

**Пăрчкан.** Кай та, час таврăн.

**Елюк.** Халех килетĕп.

**Йăскар.** Çӳрех, хĕрĕм, çӳрех. Сирĕн çӳремесĕр камăн çӳрес. Акă эпир, ват супнăсем, çĕрнĕ кăмпа пекех: пĕр ларсан вырăнтан та тапранаймастпăр. Çӳрех, хĕрĕм, сирĕн çӳрес пулать. (*Елюк тухса каять.*)

## 3-мĕш курăнни.

Пăрчкан. Йăскар.

**Йăскар.** Пăрчкан йăмăк, ача-пăчасен çӳрес те пулать, тетĕп. Эпир хамăр та ача чухне сахалах çӳремен. (*Сăмсине тапак туртать.*)

**Пăрчкан.** Ача-пăчах пулнă çав.

**Йăскар.** Ах, Пăрчкан йăмăк, ĕлĕкхи пурăнăçа лайăх иртте ртĕмĕр те. Мĕн чухлĕ туттă çинĕ, мĕн чухлĕ сăра ĕçнĕ, эреке юхтарнă. Ĕçкĕ чухне ĕçкĕре, туй чухне туйра. Çук, халь вăл енчен ĕлĕкхи чухлĕ пултараймаççĕ. Тепĕр тесен, хам та, эпĕ ĕлĕкхипе танаштарсан, упăте пек анчах тăрса юлнă.

**Пăрчкан.** Эсĕ, акай, апла мар-ха, лар-ха. Эпĕ сăра ăсса тухам.

**Йăскар.** Ах, ан чăрман, Пăрчкан йăмăк. Эпĕ кĕрсе анчах курас терĕм.

**Парчкан.** И, Йăскар акай, эпĕ часах ăсса тухатăп. Сана пĕрре тахçанах ĕçтерес тенĕччĕ. (*Витре илсе тухать.*)

## 4-мĕш курăнни.

Йăскар пĕчченех.

**Йăскар.** Э, вăрманти тăмана. Пĕрре мар, çирĕм те ĕçтерĕн халĕ. Пĕлетĕп эпĕ сан шухăшусене, витĕрех куратăп. Хĕре часрах хăпăтса кăларса, ху пĕччен хуçа пулса юласшăн эсĕ. Унтан вара—упăшка кĕртесшĕн.

Ха, ватӑ кӗлетке пулсан та, упӑшкапа выляса пурӑнасшӑн. Ҫавӑ ӗнтӗ: мӑнтӑр темскер те тутарӗ. Хушӑн пулсан, кирек мӗн хӑтлан. Мана мӗн? Ман ӗҫес те ҫиес, ҫийӗнчен укҫа илес. Ах, паян пыр ярӑнатчӗ-ха. Ӗнтӗ пехлетӗп. *(Урамра ачасем юрлани илтӗнет.)*

## 5-мӗш курӑнни.

Йӑскар. Пӑрчкан кӗрет.

**Пӑрчкан.** Акӑ, эпӗ, килтӗм те.

**Йӑскар.** Ма чӑрманатӑнах. Ман пӗртте ӗҫес килмест.

**Пӑрчкан.** Ай, мӗн калаҫатӑн, Йӑскар акай. Епле вара эпӗ сана хам пӳртрен хӑна тумасӑр кӑларса ярӑп? *(Сӑра тултарать. Малтан хӑй ӗҫет, унтан Йӑскара парать.)*

**Йӑскар.** И, Пӑрчкан йӑмӑк, кӑҫал ӗҫни... Ҫӑвар ӑшӗ те шӑршланса карӗ пулӗ. Ӗҫетпӗр, ӗҫетпӗр—таҫта каять, тепле хырӑм чӑтать. *(Ӗҫет.)*

**Пӑрчкан.** Сӑри сивӗрех пулмарӗ-ши?

**Йӑскар.** Ман хырӑм ӑна тиркемест. Ман хӑвӑлӗ асланнӑ мар-и? *(Ӗҫет.)* Сӑри... Питӗ тутлӑ... Пыл пекех. Тав сана, Пӑрчкан йӑмӑк!

**Пӑрчкан.** Тавах-ха, кӑҫал, мӗн, курсах та кайман-ха. Сана пӗрре питӗ хытӑ ӗҫтерес тенӗччӗ.

**Йăскар.** Сисетĕп. Мĕн тумаллине туса парăп.

**Пăрчкан.** Йăскар акай, эсĕ хăçан ман ăша кĕрсе тухнă?

**Йăскар.** Манран ним те пытараймăн.

**Пăрчкан.** Çтаппан арăмĕ мĕнле?

**Йăскар.** Тирĕпе шăмми анчах юлнă. Нумая пултараймасть. Чĕм татăлнă.

**Пăрчкан.** Мĕнле чир унăн?

**Йăскар.** Хĕрарăмăн телейĕ çавнашкал ĕнтĕ. Ачана чипер çуратма пултараймасан... (*Ĕçет.*) вара этем пĕтĕмпех пăрахăça тухать.

**Пăрчкан.** Çтаппанĕ хăй мĕн?

**Йăскар.** Çтаппанĕ-и?

**Пăрчкан.** Э-э...

**Йăскар.** Çтаппан вăл урăх арăм шырать.

**Пăрчкан.** Чăнах-и?

**Йăскар.** Суймастăп.

**Пăрчкан.** Ĕç-ха... Эпĕ сана тахçанах пĕр сăмах калас тенĕччĕ.

**Йăскар.** Калах, пĕр сăмах пулсан. Эпĕ никама та калас çук.

**Пăрчкан.** Мĕн... Çтаппан мана килĕштермĕ-ши?

**Йăскар.** Ха... Акă мĕн! Ай тата шухăш кĕчĕ?

**Пăрчкан.** Темскер. Шухăш кĕчĕ пек çав.

**Йăскар.** Мм... апла. Анчах...

**Пăрчкан.** Мĕн тата?

**Йăскар.** Карт тухмасть.

**Пăрчкан.** Эпĕ сана ахаль тумăп, Йăскар акай.

**Йăскар.** Ан çиллен, сарçу катса çитерсен те пулмасть. Ху шухăшла: эсĕ тепĕр пилĕк çултан ватăлса ларатăн. Çтаппан халех ваталас çук. Сана урăх тупса парăп. Кама килĕштеретĕн?

**Пăрчкан.** Çтаппан мар пулсан, мана ытти кирек хăшĕ те юрать. Пуянлăх, тепĕр тесен, хамăн та çитет.

**Йăскар.** Пĕлететĕп. Ах, тыт-ха, ĕçрĕм ĕнтĕ. (*Урамра юрлани илтĕнет.*)

**Пăрчкан.** И, ĕç-ха, ĕç! Паллах пирĕн Елюксем кĕртленсе çÿреççĕ. Ванюк сыпăçнă та, уйăрăлма та пĕлмест. Ăçта Елюк, унталла. Те качча илесшĕн тата хăйĕн ухмах ăсĕпе?

**Йăскар.** И, Ванюк Елюка тĕлĕкре те кураймĕ. Çавах та эсĕ вĕсене сыхла. Каччăпа хĕр вăл—кушакпа çу, тенĕ. Тавара пăссан, илекен пулмĕ.

**Пăрчкан.** Эпĕ те çапла шухăшлатăп çав: хĕр ятне пăсасси ним те мар, тетĕп. Чăнах та, кайса сыхлас пулĕ. Эсĕ, акай, мана ан пăх: хăвах тултарса ĕç.

**Йăскар.** Тытах. Мана çитрĕ. Ĕнтĕ кăштах выртса канасчĕ. Ватă шăмшак мар-и? Йĕпене сиссенех туртма пуçлать.

**Пăрчкан.** Канах, канах. Эпĕ Елюка кайса шырам-ха. (*Тухса каять.*)

## 6-мĕш курăнни.

Йăскар пĕчченех.

**Йăскар**. Каях, ара. Канма ăна сансăр пуçне те пĕлетпĕр. (*Сăра тултарса ĕçет. Ĕçсе ярсан, витри тĕпне пăхса.*) Якалчĕ! (*Урамра юрлани илтĕнет.*) Юрлăрах, юрлăрах. Ăна эпĕ те юрлатăп. (*Хуллен юрлать. Унтан, сулкаланса, тĕпел кукринче пĕр-иккĕ çавăрнать те, сак çине выртса çывăрса каять. Ыйăхра пĕр-икĕ çаврăм юрласа илет.*)

## 7-мĕш курăнни.

Елюк кĕрет. Йăскар выртать.

**Елюк** (*урлă-пирлĕ пăхкалать*). Епле никам та çук вара? (*Каялла алăк патне чупса пырса.*) Ванюк, Ванюк! Ан кай, ан кай! Кĕр пӳрте, пӳртре никам та çук.

## 8-мĕш курăнни.

Елюк. Ванюк кĕрет, Йăскар выртать.

**Ванюк.** Чăнах никам та çук-и?
**Елюк.** Никам та.
**Ванюк.** Тусăм! (*Елюка ыталать.*)
**Елюк.** Ай, намăс...
**Ванюк.** Эпĕ сана юрататăп.
**Елюк.** Ванюк, эсĕ мана манмăн-и?

**Ванюк.** Ăçтан мăнас ман сана? Эсĕ манăн çутă хĕвелĕм-çке.

**Елюк.** Чăнах-и?

**Ванюк.** Уйăхшăн та, хĕвелшĕн те. (*Йăскар вăранса пуçне çĕклет.*) Елюк!

**Елюк.** М?..

**Ванюк.** Чуптутар?

**Елюк.** Ай! (*Вăтанса, Ванюк кăкăрĕ çине пуçне чикет.*)

**Ванюк.** Елюк... Елюк..

**Елюк** (*пуçне ерипен çĕклесе, Ванюка куçран пăхать*).

**Ванюк** (*Елюка чуптăвать*).

**Йăскар.** А... Эпĕ мĕн, тетĕп? Вăкăр пăрува çуллать мĕн.

**Ванюк** (*пуçне хăвăрт çĕклет*). Кам пур кунта? Мана темскерле сасă илтĕнчĕ.

**Елюк.** Эсĕ йăнăшрăн. Пўртре никам та çук. Ларар-и?

**Ванюк.** Ларар. (*Лараççĕ.*) Елюк, эсĕ хитре хĕр.

**Елюк.** Эсĕ эпĕ хитрине тин куратăн-и?

**Ванюк.** Тин мар. Эпĕ сана пĕчĕккĕренех юрататăп. Эсĕ маншăн питĕ хитре.

**Елюк.** Эсĕ те маншăн питĕ хитре.

**Ванюк.** Ĕлĕк атте калатчĕ: „Çынна тўрех куçран пăх“, тетчĕ,—„куçĕ санран тарса кушак-кайăк пек пытанмасть пулсан,—вăл вара сан çын“,—тетчĕ.

**Елюк.** Ха-ха-ха! Епле кулăшла калаçатăн эсĕ, Ванюк? Ман куçăмсем камăнни пек тата?

**Ванюк.** Санăн çутă çăлтăр пек. Эпĕ кунĕн-çĕрĕн сана куçран пăхса ларăттăмччĕ: вĕсем çăл пек тарăн.(*чуптуса хытса каять.*)Ах!..

**Елюк.** Ванюк, Ванюк, мĕн пулчĕ сана? Çилентĕн-им?

**Ванюк** (*чĕнмест*).

**Елюк** (*Ванюка куçĕнчен пăхса*). Ванюк, эсĕ ӳсĕрĕлсе кайнă пек пултăн?

**Ванюк.** Санăн çӳхе туту ӳсĕртсе ячĕ мана. Эх, Елюк! Сана çиленме манăн вăйăм çитмест. Эпĕ сана акă çапла ал çине çĕклĕттĕм те пĕтĕм тĕнчене кăтартăттăм: „Çакă манăн!“ тейĕттĕм. Ах, савнă Елюк, питĕ хытă юрататăп-çке эпĕ сана!

**Елюк.** Хăçан качча илĕн эсĕ мана?

**Ванюк.** Хăçан?.. Кĕçĕрех! Пĕлетĕн-и?

**Елюк.** Кĕçĕрех ытла хăвăрт. Эпĕ хатĕрленмен.

**Ванюк.** Мĕн хатĕрленмелли пур? Пурпĕр сана аннӳ туй туса качча парас çук мана. Вăрттăн тухас пулать.

**Елюк.** Чăнах та, мана анне сана качча парас çук. Юрĕ. Хĕр вăрланă тăвăпăр. Анчах хăçан тухас? Кĕçĕрех ытла хăвăрт мар-и?

**Ванюк.** Кĕçĕрех, чунăм, кĕçĕрех.

**Елюк** (*Ванюка ыталаса илет*). Юрĕ, апла пулсан.

## 9-мĕш курăнни.

Йăскар. Елюкпа Ванюк. Пăрчкан, ун хыççăн Çтаппан тата Муççа кĕреççĕ.

Елюкпа Ванюк пĕр пĕринчен хăвăрт уйăрăлаççĕ. Елюк питне саппунпа хуплать. Ванюк пуçне çĕклесе. мĕн пулассине кĕтсе тăрать. Çтаппан алăкран кĕрет те унтах тăрать. Йăскар тăрса ларать, сăмсине тапак туртать. Муççа унта-кунта çавăрăнкаласа сĕтел çывăхне пырать, сăра витри çине ăшшăн пăхма пуçлать. Пăрчкан Елюка хĕнеме пуçлать.

**Пăрчкан.** Эсĕ каччăпа-и? Эсĕ каччăпа-и? Ах, лиска йытă. Акă сана, акă сана!

**Елюк.** Ай, ан çап, анне!

**Йăскар.** Ап-чăхху! Ап-чăх!

**Муççа.** Айуй! Ман тапак пуракки те кунта тем?

**Йăскар.** Эсĕ тата мĕн шыраса çÿретĕн, тапак пуракĕн хупăлчийĕ?

**Ванюк.** Пăрчкан акай, ан тив эсĕ Елюка.

**Пăрчкан.** Сана тата мĕн кирлĕ? Эсĕ унăн упăшки-им?

**Елюк.** Анне, ан ятлаç эсĕ Ванюка...

**Пăрчкан.** Тата кирлĕ-и? Ах, йытă! Епле вĕсем пĕр-пĕрин хутне кĕреççĕ.

**Ванюк.** Пăрчкан акай, ан тив Елюка. Эпĕ ăна качча илетĕп. (*Пăрчканран хуллине туртса илет те ывăтса ярать.*)

**Пăрчкан.** А, эсĕ унăн хутне кĕретĕн-и? Чим, эпĕ сана качча илтерем. (*Тĕпелтен турчăка е çатма аври илсе, Ванюкп тутаран тĕкме тăрать.*) Тухса кай ман пӳртрен, тухса кай! Тухса кай!

**Йăскар.** Пăрчкан йăмăх, асту!

**Муççа.** Пăрчкан йăмăк, çатма аврине пăрахах! (*Муççапа Йăскар Пăрчканран çатма аврине туртса илеççĕ.*)

**Пăрчкан.** Ах, турă, вĕсем пурте мана хирĕç! Ах турă! Çтаппан ывăлсем, Çтаппан ывăлсем! Хурах! Хурах! (*Уласа макăрса ярать.*)

**Çтаппан** (*урай варне паттăр пек йывăррăн утса тухать*). Ванюк! Кай тухса!

**Ванюк.** Хуллен!

**Çтаппан.** Кай тухса! Унсăрăн эпĕ сана халех кантăр тыллана пек хуçкаласа пăрахăп.

**Муççа.** Ванюк ывăлăм, каях эсĕ, каях; çапăçу пулĕ, каях.

**Ванюк** (*Çтаппана пӳрнипе юнаса*). Эй, халăх юнне ĕçекен вăрăм туна! Асту! Эпĕ, çакă пӳртре сан çине ал хурса, алла та вараламастăп, анчах, ирĕкре тĕл пулсан, санпа кĕрешме хатĕр. Акă çакă чăмăр сан пуçна тивсен — е пуçу саланса кайĕ е ĕмĕрлĕхе сĕрĕм тивсе юлĕ!

**Çтаппан.** Ну!.. (*Çапма аллине çĕклет.*)

**Ванюк.** Ан тапран вырăнтан!

**Пăрчкан.** Тухса кай ман пӳртрен, тухса кай! (*Елюка.*) Эсĕ те тухса хăп!

**Ванюк.** Кайăпăр, каяс пулсан. Анчах эпĕ кунтан пĕччен каймастăп. Айта, Елюк, пĕрле, чăнах та эпир çакă пӳртрен тухса кайăпăр.

**Елюк.** Ăçта кайăпăр, Ванюк? (*Ванюк çумне пырса тăрать.*)

**Ванюк.** Ман пата, пурпĕр, иксĕмĕрĕн пĕр мăшăр пулас пулать.

**Пăрчкан.** А-ах, шуйттансем! Пĕтерчĕç! (*Йĕрет.*)

**Йăскар.** Апла мар-ха, Ванюк шăллăм! Апла ял кулать. Эпир акă çапла тăвăпăр: эсĕ, хĕрĕм, венчетчен ман патăмра пурăн, кайран вара Ванюк пӳртне сана туйпа ăсатăпăр.

**Муççа.** Ха, ĕнтĕ эпĕ те хĕр паратăп. Ай люн, май люн—манăн варли лутра хурăн!

**Йăскар.** Кайăпăр, ачасем. Япалисене кайран та илсе кайăпăр.

**Пăрчкан.** Тухса хăпăрах, вăрă-хурахсем! Мана сирĕн япаласем кирлĕ мар. Найăр, халех сĕтĕрсе кайăр! (*Елюк сăхманĕсене, ситарĕсене илсе перет.*)

**Ванюк.** Айта, Елюк!

**Елюк.** Сывă пул, çуратнă килçурт!

**Пăрчкан.** Кайăрах, пĕтĕр, çĕр айнех путăр! (*Ванюкпа Елюк, вĕсем хыçĕнчен Йăскарпа Муççа тухса каяççĕ. Муççа алăкран каялла çавăрăнса кĕрет.*)

## 10-мĕш курăнни.

Пăрчкан. Çтаппан. Муççа.

**Пăрчкан.** Ах, мĕн турĕç мана ку вăрă-хурахсем.

**Муççа.** Ман кунта калпак юлнă пулас. (*Çĕлĕкне шыранă чух чăтаймасăр витре çине ăшшăн пăхса илет.*)

**Пăрчкан.** Эх, Муççа хырăмĕ, Муççа хырăмĕ!

**Муççа.** А, хырăмĕ ĕнтĕ вăл ман çаплах. Ан ятлах ĕнтĕ, Пăрчкан йăмăк, чăрмантартăмăр.

**Çтаппан.** Муççа! Тепре шăл шуррине уçатăн пулсан, халех кăларса перетĕп.

**Муççа.** Э, эпĕ хамах каятăп, Çтаппан шăллăм, хамах каятăп.

**Çтаппан** (*Муççа тухса кайнă чух сылтăм аллипе сулахай ывăç тупанне çапать*). Чшст! (*Муççа тухса каять.*)

## 11-мĕш курăнни.

Пăрчкан. Çтаппан (*урай тăрăх хытă утса çӳрет.*)

**Çтаппан.** Пĕрре пурне те кăларса перес, терĕм те, тата кăштах тăхтас, терĕм, хам пӳртре мар, терĕм.

**Пăрчкан.** Ах, ма кăларса пемерĕн-ха вĕсене? Кăларса перес пулатчĕ вĕсене.

**Çтаппан.** Ан кулян, кирлĕ пулсан, эпĕ вĕсене кайран та тытса хĕнеме пултаратăп.

**Пăрчкан.** Ах, Çтаппан ывăлсем, тытса хĕне вĕсене, тархасшăн. Ванюкне пуçне çапса шăтар, Йăскарне кутĕнчен тап, Муççине тата тытса силлесен те çитĕ. (*Çывăхарах пырса.*) Эпĕ сана уншăн пулăштух ĕçтерĕп.

**Çтаппан.** Пулăштуха ăна эпир хамăр та тупăпăр, а санăн... (*Çывăхарах пырать.*) ман валли... кăшт тутлăраххи пулмалла, а?..

**Пăрчкан** (*пĕлмен пек пулса*). Мĕн-ши вăл тутлăраххи?

**Çтаппан**. Акă çакă (*Пăрчкана ярса тытать*).

**Пăрчкан** (*вĕçерĕнсе тухать*). Ай... (*Çтаппана юнать.*) юрамасть.

**Çтаппан.** Мĕншĕн? Эсĕ ман кăмăла питĕ каятăн, кăштах выляса пăхма юрĕ-çке?

**Пăрчкан.** Вылямa? Эпĕ сан валли, вылямa, кушак çури марçке? Намăса ăçта хурас? Эпĕ ĕнтĕ тин хĕр мар, ватăлнă.

**Çтаппан.** Э, намăс вăл тĕтĕм мар, куçа çимест. Ватти çамрăккине эпĕ питех уямастăп. Çамрăк хĕрсем вĕсем пиçсе çитмен çырла пек анчах. Эсĕ чăмăр, çемçе, çавăнпа сана чуптума та авантарах пулмалла.

**Пăрчкан.** Санăн чуптума хăвăн арăму пур та?

**Çтаппан.** Эх, арăм!.. Ман ăна курсан хăсас килет.

**Пăрчкан.** Ха-ха-ха! Ан култарах. Анчах ман упăшка вилни виçĕ çул. Çав виçĕ çул хушшинче эпĕ, выляма мар, вăл шухăша пуçра та тытман. (*Аяккалла*). Ах, чĕре сиксех тухать, мĕн тăвас?

**Çтаппан.** Тытман пулсан, халь тытма та каях мар... Тытманни вăл тата лайăхрах...

**Пăрчкан** (*шăппăн*). Çынсем пĕлсен?... а?.. Намăс?..

**Çтаппан.** Кунта никам та çук, урамра тĕттĕм.

**Пăрчкан.** Чăнах та кунта никам та çук... тĕттĕм... Ах, мĕнле çын эсĕ?..

**Çтаппан.** Ан шарла... (*Пăрчкана ярса тытать.*)

ЧАРШАВ.

## ИККЁМЁШ ПАЙЁ

Ванюк пӳрчӗ.

### 1-мӗш куранни.

Елюк сăпка сиктерет.

**Елюк** (*юрлать. Сăпка юрри кӗввипе*).

Ня-ни-не—ту-ни-не,
А-чи-не—у-ри-не...
Тăппи-таппи çӳреме,
Кăрăс-кăрăс тутарма...

Амăшне—пуçне,
Ачине—çунатне,
Вăштăн-вăштăн вӗçтерме,
Лăпăш-лăпăш сиктерме...

### 2-мӗш куранни.

Елюк. Ванюк кӗрет.

**Ванюк.** Тулта шăкăртах пуçтартăм. Ӗнтӗ ирхи апат çиме те юрать. Елюк, хатӗрле апат. Ачине унччен эпӗ хам та сиктерӗп.

**Елюк.** Юрӗ, Ванюк, пăх-ха: вăл пӗртте çывăрмасть, куçне уçнă та пăхса выртать.

**Ванюк.** Ăçта-ха вăл? (*Ванюкпа Елюк иккӗшӗ сăпка ăшне пӗшкӗнсе пăхаççӗ.*) Ха, чăнах: епле вăл чăрлаттарса пăхса выртать. А, Елюк, эсӗ апат хатӗрле-ха, хатӗрле.

**Елюк.** Халех. Апачӗ те ним те ҫук та, мӗнех хатӗрлес-ши?

**Ванюк.** Кӑвас пӗтни-ха, вара?

**Елюк.** Пур кӑштах.

**Ванюк.** Кӑвас ҫине сухан яр. А ку шӑхличи валли качака суса кӗр. Вара ҫитрӗ те пире.

**Елюк.** Юрӗ, ҫапла тӑвӑпӑр. (*Качака сума тухса каять.*)

## 3-мӗш курӑнни.

Ванюк пӗчченех.

**Ванюк** (*ачине*). Мӗн туса выртатӑн-ха эсӗ, улпут? Ха, аллисене чӑсать тата. Маттур, маттур. Ҫывӑрах, ывӑлӑм, ҫывӑрах.

## 4-мӗш курӑнни.

Ванюк. Пӑрчкан кӗрет.

**Пӑрчкан.** Ман килес, ан ятлӑр. Пурӑнаҫҫи?

**Ванюк.** Вилме шухӑшламан-ха. Ху мӗнле пурӑнатӑн?

**Пӑрчкан.** Пурӑнкалас пулать ирӗксӗр, мӗн тӑвас тетӗн?

**Ванюк** (*пуҫне ҫӗклет*). Мӗнле ирӗксӗр? Пуҫна ма ҫыхрӑн?

**Пӑрчкан.** Ах, ан калах, Ванюк. Ҫтаппан ҫапса шӑтарчӗ.

**Ванюк.** Эхе. Тыткалама пӗлет пулас, мур,

пĕрре алла лексен. Астăватни, пĕрре сан пӳртĕнте мана тытса хĕнеме тăчĕ? Анчах ури чĕтрерĕ пулмалла—çыхланмарĕ. Çавах эпĕ ăна маттур пулĕ тесе шухăшлатăп.

**Пăрчкан.** Мĕн пулнине каçарах, Ванюк кĕрӳ. Мана, ухмах хĕрарăма, улталарĕ вăл, усал. Ман пĕтĕм пуянлăха хăй аллине пуç-тарса илчĕ.

**Ванюк.** Антив, ăна пуянлăх чăрмантарас çук. Арăмĕ ĕçлемест, тарçă тытас пулать.

**Пăрчкан.** И, арăмне çаплах çĕмĕрет. Вырăнтан тăма та памасть. Кăшт ура çине тăрса çӳреме пуçласанах, хĕнеме тытăнать.

**Ванюк.** Ха, упа хăраххи.

**Пăрчкан.** Каяс пуль.

**Ванюк.** Ма лармастăн?

**Пăрчкан.** Çтаппана шыратăп та... Сирĕн пата килсе ларман-ши, терĕм; çавăнпа килсе пăхас, терĕм.

**Ванюк.** Çук. Çтаппан пирĕн пата килмен. Мĕн-ма кунта килес унăн?

**Пăрчкан.** Елюк пуçне çавăратăп, тесе мухтанать, тет.

**Ванюк.** Ха-ха-ха! Çавăрттарăп эпĕ ăна лайăх, пĕрре ярса илсен.

**Пăрчкан.** Тен, хăвăн салтака каймалла пулсан, йытăланĕ те вăл, ăна никам та чараймĕ. (*Ку сăмахсене калана чух Елюк алăкран кĕрет.*)

## 5-мĕш куранни.

Ванюк. Пăрчкан. Елюк.

**Елюк.** Ачи çывăрать-и?

**Ванюк.** Çывăрать.

**Елюк.** Анне, мĕнле салтака каймалла пулсан, тетĕн эсĕ?

**Пăрчкан.** Паян кантурсем килнĕ. Ванюкпа пĕр çулхисене чĕнеççĕ, тет.

**Ванюк.** Килсе чĕнмен-ха халĕ, унччен апат çиер.

**Пăрчкан.** Каяс-ха, сывă пулăр.

**Елюк.** Анне, апат çиме юл.

**Ванюк.** Апат çиме лар. Çитĕ ĕнтĕ, малашне пĕр-пĕрне çиленмесĕр пурăнăпăр.

**Пăрчкан.** Ларса çиес-им апла?

**Ванюкпа Елюк.** Ларса çи. Ларса çи.

**Елюк.** Çимесĕр... (*Апат çиме лараççĕ. Елюк çимесĕр, Ванюк çине пăхса ларать.*)

**Ванюк.** Ма çиместĕн? эсĕ?

**Елюк.** Сана салтака илсе каясран хăратăп.

**Ванюк.** Ан хăра, эпир кайсан вăрçи те пĕтет.

**Пăрчкан.** Пĕттĕрччĕ вăл, вăрçи. Вара, кайсан та, пуç пĕтмĕччĕ. (*Шаккаççĕ.*)

**Сасă.** Килте-и?

**Ванюк** (*тăрса чӳречерен пăхать*). Килте. Кам вăл? Çыгăр мучей, эсĕ мар-и?

**Сасă.** Эпĕ.

**Ванюк.** Кĕр пӳрте.

**Сасă.** Кĕрес те пулĕ.

**Елюк.** Ванюк, мĕншĕн килнĕ вăл?

**Ванюк** (*шухăша кайса*). Темме...

**Елюк.** Ах турă, старăста!.. (*Пурте сĕтел хушшинчен тухаççĕ. Пăрчкан апат пуçтарма тытăнать.*)

## 6-мĕш курăнни.

Елюк, Ванюк. Пăрчкан. Старăста кĕрет.

**Старăста.** Ман килес, вăй патăр.

**Ванюк.** Килех, маларах ирт.

**Старăста** (*ал парать*). Лайăх пурăнаççи, ушкăнпе?

**Ванюк.** Тавта-пуç! Пурăнатпăр-ха хуллен. Ху лайăх-и?

**Старăста.** Çӳретпĕр. Пирĕн ĕçĕ çавнашкал та...

**Елюк.** Мĕн тата?

**Старăста.** Çавнашкал ĕнтĕ. Паян кантура каяс пулать, ыран приюма...

**Елюк** (*йĕрет*). Ах...

**Ванюк.** Елюк, ан макăр-ха, тархасшăн... (*Сăпка çине кăтартса.*) Авă сан... выртать. Эсĕ çавна пăх... Эпир ĕнтĕ... карăмăр... (*Питне аллипе хуплать. Урамра салтак юрри*

*илтӗнет. Юрлакансем Ванюк пӳрчӗ патнелле килеҫҫӗ.)*

**Старăста.** Ăна ӗнтӗ, Ванюк шăллăм, макăрса та ним те тăвас ҫук. Ӗҫӗ ҫапла та... Ну, эпӗ каям ха... Ман тата ик-виҫ ҫӗре ҫитес пулать. Сывă пулăр. (*Тухса каять.*)

**Ванюк.** Сывă пул, мучей! (*Урамра: «Тпру!» тенӗ сасă илтӗнет.*)

## 7-мӗш куранни.

Ванюк. Елюк. Пăрчкан. Салтак ачисем (*кӗреҫҫӗ*).

**Салтак ачисем.** Сывă-и, ушкăнпе?

**Ванюк.** Сывах-ха, юлташсем! Елюк, сăра тултар.

**Палля.** Сăрапа тăрса нумай пулать, Ванюк. Эпир кайма тухнă. Сана лартса каяс, терӗмӗр.

**Ванюк.** Епле ман пӳртрен виҫ курка ӗҫмесӗрех тухăпăр? (*Елюк Ванюка сăра тултарса парать. Ванюк ӗҫет те, тата тултарса, салтак ачисене ӗҫтерет.*) *Салтак ачисем юрлаҫҫӗ:*

1. Ҫăлтăр виттӗр ҫул куранать, (2 хут)
   Эпир каяс ҫул пуль ҫав. (2)

2. Уйăх виттӗр ҫул курăнать, (2)
   Эпир ҫӳрес ҫул пуль ҫав. (2)

**Ванюк.** Ан макăр-ха, Елюк чунăм. Кантур инçех мар, каçчен кайса килĕпĕр...

**Палля.** Аракмат ырă хуçасене. Еçрĕмĕр, хăна пултăмăр, ĕнтĕ каяс та пулать.

**Ванюк.** Каййăпăр, Елюк, тумтир пар...

**Елюк** (*сăхманпа картус парать*). Ванюк... часрах таврăн...

**Ванюк.** Эх, карăмăр! (*Ванюк салтак ачисемпе пĕрле ыталанса юрласа тухса каять*).

1. Мăн çул урлă каçнă чух (2)
Яштак хурăн хуçăлчĕ,
Симĕс çулçи тăкăнчĕ.

2. Тăвансенчен уйăрăлнă чух (2)
Яштак пĕвĕм авăнчĕ,
Çемçе кăмăл хуçăлчĕ. (*Тухса каяççĕ.*)

Елюк ăсатма хыççăн тухать. Пăрчкан сăпка патĕнче юлать.

## 8-мĕш курăнни.

Пăрчкан, Елюк.

Пăрчкан ача сиктерет. Урамра Палля сасси: „Эй, малти!" Шăнкăрав сасси илтĕнми пулать. Елюк макăрса кĕрет.

**Елюк.** Карĕç!..

**Пăрчкан.** Макăрса та ним тăвас çук.

**Елюк.** Сана апла калама ним те мар. Ман мĕнле чăтас?

**Пăрчкан.** Эпĕ каям-ха. Сыв пул. Ан мăкăр. Макăрса та ним тăвас çук. (*Тухса каять.*)

**Елюк.** Сыв пул.

## 9-мĕш курăнни.

Елюк пĕчченех.

**Елюк.** Чĕре паçăрах сисрĕ. Турă çавăрса килтĕрех. Пĕччен пулсан тата тепĕр майлăччĕ. (*Сăпка çине пăхса.*) Çакăйшăн чун хăрать. (*Сăпка юррине хуллен юрлать.*)

Нянине, тупине,
Ачине, урине...

Юмăç ярам-ха, мĕн тухать? (*Çатма аври тăрăшне аллипе тытса сăвать.*) Пĕрре... иккĕ... виççĕ... тăваттă... пиллĕк... улттă... çиччĕ... Ах, ырă пулас çук! (*Алăкран шаккаççĕ.*) Кам вăл?

## 10-мĕш курăнни.

Елюк Çтаппан.

**Çтаппан** (*алăкра*). Кĕме юрать-и? (*Кĕрет.*)

**Елюк.** Ванюксем карĕç...

**Çтаппан.** Килнĕ-килменех ан хăваласам. Куртăм кайнине. Çавăнпа сана хĕрхенсе кĕтĕм.

**Елюк.** Мана хĕрхенекен сансăрах пур.

**Çтаппан.** Сăмахĕсем хăватлă. Эпĕ ун пеккине юрататăп.

**Елюк.** Мĕн кирлĕ сана?

**Çтаппан.** Ан ятла, Елюк. Нимĕн те кирлĕ мар. Сана анчах кĕрсе курас терĕм.

**Елюк.** Эсĕ ўсĕр!

**Çтаппан.** Пулĕ те пулĕ. Анчах ĕçнĕшĕн айăп тăвăн-и эсĕ мана?

**Елюк.** Санпа калаçса тăма ман кăмăлăм çук. Кала мĕн кирлине?

**Çтаппан.** Лăплан, лăплан, Елюк. Мана ытлашши нимĕн те кирлĕ мар. (*Ачаш сасăпа.*) Эх, Елюк! Ниçта пырсан та эпĕ хам валли канăçлăх тупаймастăп. Эсĕ хĕр чухне сана курсассăн, манăн чун хĕпĕртетчĕ. Халĕ, сана çын арăмĕ вырăнче куратăп та, ман ăш çурăлсах тухать.

**Елюк.** Эй, путсĕр ултавçă! Тăван арăмна хĕне кĕртсе ятăн, ман аннене çыпăçса, ăна намăс кăтартрăн. Çитĕ сана, мана ан тив. Пăрах хăвăн ўсĕр шухăшусене.

**Çтаппан.** Эпĕ ўсĕр мар, Елюк. Ĕçнĕ пулсассăн та, ўсĕр мар. Ман пуçăм урă чухнехинчен те урăрах. Эпĕ хам кăкăра акă çапла уçса кăтартма пултарсан, эсĕ мана кăштах та пулин хĕрхенĕттĕнччĕ. Эсĕ калатăн: „арăму", тетĕн,—„анне", тетĕн. Ман арăм ман каччă ĕмĕрне типĕтрĕ. Хĕне карĕ те, кăмăлĕ пăсăлчĕ. Вара пăчăкăпа сĕрнĕ пек вăрçма пуçларĕ. Мĕншĕн эпĕ айăплă вăл хĕне кайнăшăн? Вара, пурнăç ăнман пир-

ки, эпĕ хам килтен хам сивĕнтĕм. Сан аннӳ çумне те çавăнпа пырса çыхлантăм. Ку вара тата арăмран та усалтарах пулчĕ. Хăй вăтă пирки тытăнчĕ вара кĕвĕçме, аяккалла пăхма та памасть, кĕвĕçет. Эсĕ, тет, мĕн куçна чаркаласа пыратăн, тет, мăнтăр хĕрсене шыратăн-им? тет. Кайрантан кайран çутçанталăкшăн кĕвĕçме пуçларĕ. „Мĕн тек урамалла пăхатăн“, тет. Вара, чун тăвăрланса çитрĕ те, чăтаймарăм—тухса тартăм санăн аннӳ патĕнчен. Вара ман чĕре тата ытларах суранланса карĕ. Çав тĕлех тата пĕрре сана чиркӳре турра кĕлтунине куртăм. Эсĕ мана туртăн таса ангелĕ пек курăнса карăн. Çавăнтан пуçласа, эсĕ ман чĕрене ăмăрткайăк чĕрнисемпе чавса илнĕ пек (*аллипе чавнă пек туса кăтартать*) кĕрсе лартăн. Юрататăн-и эсĕ мана?

**Елюк.** Эсĕ хăрушă этем. Сан сăмаххусене итлесе сивĕсĕр шăнса каймалла. Эпир çакă начар пӳртре те телейлĕ пурăнатпăр. Упăшка мана юратать, манăн сăпкара пĕчĕкçеççĕ ача выртать—пурнăç нимрен те каях мар. Эсĕ хăвăн телейне халиччен тупаймарăн пулсан,—çакăнта ан шыра. Каях хăвăн çулупа—пулĕ ăçта та пулсан сан валли те тӳпе.

**Çтаппан** (*чупса пырать*). А, кăмăлпа юратмастăн пулсан—эпĕ сана вăйпа илĕп.

**Елюк.** Ах! (*Сăпка хыçне тарса ӳкет.*) Ма-

на илес тесен, сăпкана çĕмĕрсе, ман ача урлă пусса каç!

**Çтаппан** (*чарăнса, пуçне икĕ аллипе хĕстерсе тытать*). Мĕн турăм эпĕ? Каçар мана тархасшăн, Елюк!

**Елюк** (*алăк патнелле кăтартса*). Тухса кай, çылăхлă чун!

**Çтаппан.** Каçар, Елюк, каçар. (*Чĕркуççи çине тăрать. Урамран салтак юрри илтĕнме пуçлать.*)

**Елюк.** Тухса кай часрах! Халех тухса каймасан, сана, Ванюк килсен, йытта вĕлернĕ пек вĕлерĕ.

**Çтаппан.** Вĕлертĕр! Эсĕ каçармасăр эпĕ вырăнтан тапранмастăп! (*Урамра шăнкăрав сасси тата Палля сасси: „Тпру“!*)

**Елюк** (*ăнтан кайса, Çтаппан патне чышкине чăмăртаса чупса пырать*). Тухса кай часрах, шуйттан! Эсĕ мана пĕтересшĕн-и? (*Ванюк кĕресрен хăраса, алăка çаклатса лартать. Çтаппан тухса тарма алăк патне чупса пырать. Тултан шаккаççĕ. Ванюк сасси:* „Елюк, уç, эпир таврăнтăмăр!“)

**Çтаппан.** Ы-ых! (*хăраса каялла чакать. Елюк чупса пырса чӳрече уçать, Çтаппана тухса кайма кăтартать. Çтаппан чӳрече виттĕр сикет. Ванюк тултан татах таккать:* „Елюк, уç! Илтместĕн им эсĕ? Уç!“ *Елюк уçать.*)

## II-мӗш курӑнни.

Елюк, Ванюк, Салтак ачисем.

(*Ванюкпа салтак ачисем кӗреççӗ.*)

**Ванюк.** Мӗншӗн час уçмарӑн?

**Елюк** (*хӑраса*). Ванюк!..

**Ванюк** (*пӑлханса*). Елюк, мӗн пулчӗ сана? Эсӗ чӗтретӗн? Куççем санӑн саланса кайнӑ? Эсӗ ху та шап-шурӑ шуралса кайнӑ.

**Елюк.** Ах, Ванюк...

**Ванюк.** Мӗн пулчӗ, кала часрах! Эсӗ мана уртарса yратӑн! (*Чӳрече уççине курса.*) Ку чӳрече мӗншӗн уçӑ? (*Пӗлсе.*) А, сан пата çын килнӗ-и? Кала тӳррипе, унсӑрӑн пурпӗр чунна кӑларса илӗп!

**Елюк** (*чӗркуçленсе*). Чунтан-вартан юратнӑ Ванюк, каçар мана, эпӗ айӑплӑ мар.

**Ванюк.** Мӗн тата, кала часрах!

**Елюк.** Эсир тухса кайсанах... эпӗ ача çывратма хатӗрлентӗм.

**Ванюк.** Ну?

**Елюк.** Çав вӑхӑтра Çтаппан килсе кӗчӗ те, мана пусмӑрлама тытӑнчӗ.

**Ванюк** (*аллипе пуçне тытать. Сывлӑша туртса илсе, ухмаха ернӗ пек кулса ярать, унтан араслан пек вӑйлӑн кӑшкӑрса калать*). Ӑçта вӑл халь? Парӑр мана ӑна çакӑнта! Аçта вӑл, ӑçта-а?

**Елюк.** Эсĕ вĕлересрен хăраса, эпĕ ăна чӳрече витĕр кăларса ятăм. Çавăнпа, вăл тухса сикеччен, эпĕ алăка уçмарăм.

**Ванюк** (*Елюка çапма аллине çĕклет*). Эсĕ те мана улталас тетĕн-и, йытă ами? (*Ванюка аллинчен тытса чарасçĕ. Ванюк çемĕçсе кайса, сак çине кайса ӳкет. Елюк ун çине чупса пырса ӳкет.*)

**Елюк.** Эпĕ айăплă мар, Ванюк, каçар мана!

**Ванюк** (*хуллен, çемçе сасăпа*). Тупса килĕр кунта Çтаппана, тархасшăн тупса килĕр, ман ăна курас килет.

**Палля.** Айтăр, ăна тытса килетпĕр!

**Салтак ачисем.** Айтăр, айтăр! (*Тухса каяççĕ*).

## 12-мĕш курăнни.

Елюкпа Ванюк.

**Ванюк** (*тăрса ларать*). Елюк! Пăх мана куçран. Чăн калатăн-и е суятăн-и?

**Елюк.** Чăн калатăп, Ванюк. Вăл мана пусмăрлама килчĕ. Вара хăйĕн ӳсĕр пуçĕпе тĕрлĕ кирлĕ-мара лĕпĕртетсе ларчĕ. Ларчĕ ларчĕ те, мана çыпăçма тытăнчĕ вара. Вăл ман паталла ура ярса пуссанах, эпĕ сăпка хыçне тарса ӳкрĕм. Вара: „Малтан ман ачана вĕлер“, терĕм,—„Вара, сăпка урлă пусса каçса, мана тин тыт“, терĕм.

**Ванюк.** Халавлă пултăр санăн таса ăрăву, Елюк. Санăн сăмахху тĕрĕс, эпĕ ăна сан куçăнта тĕкĕр витĕр курнă пек куратăп.

**Елюк.** Чăн çапла, Ванюк. Эсĕ ĕнтĕ мана çиленместĕн-и, Ванюк?

**Ванюк.** Ăçтан çиленес ман сана? Эсĕ чăн каларăн. Темме ăш çунать манăн, часрах шыв парччĕ, кăштах та пулин çăвар ăшне йĕпетесчĕ.

**Елюк** (*сăра парать*). Паçăрхи сăра пур, акă, ĕç.

**Ванюк** (*ĕçет*). Тата пар.

**Елюк.** Пĕтĕмпех ĕç.

**Ванюк** (*тата ĕçет*). Ĕнтĕ ăш канчĕ. Ну, ĕнтĕ, шуйттан, сана кĕл тутармалăх хатĕрлерĕм. (*Тултан сасăсем илтĕнеççĕ: „Ан юл! Айта“! Салтак ачисем Çтаппана икĕ аллинчен тытса кĕреççĕ.*)

## 13-мĕш курăнни.

Елюк, Ванюк, Çтаппанпа салтак ачисем.

**Палля.** Акă, хайхи упана тытрăмăр.

**Ванюк** (*măшкăлласа*). Кил, кил, Çтаппан. Мĕн-ма эсĕ пирĕн хушăмăра килесшĕн мар? Е пирĕнпе хутшăнма йĕрĕнетĕн-и? Ай, çын арăмĕсене чуптума анчах лайăх-и?

**Çтаппан.** Каçар мана, ырă Ванюк! (*Чĕркуçленет.*)

**Ванюк** (*аслати пек кăшкăрса ярать*). А-ы, эсĕ каçар? Эсĕ каçар-и? (*Çтаппан патне чупса пырса, урипе питĕнчен тапма тăрать. Çтаппан ура çине сиксе тăрать. Ванюк Çтаппана пырса çапать, ăна юлташĕсем тытса чараççĕ. Елюк ачине тытать.*)

**Çтаппан.** Каçар, Ванюк! Эпĕ ӳсĕр пулнă...

**Ванюк.** Ӳсĕр!.. Сана хăвăн арăму çитмест, мăнтăр! Тăлăх арăмсемпе пӳтсĕрленсе çӳрерĕн те, тата ман вырăна килсе вараласа каяс терĕн-и? Акă сана! Акă сана!..

**Палля.** Çитĕ ĕнтĕ, Ванюк, чарăн.

## 14-мĕш курăнни.

Çавсемех. (*Йăскар чупса кĕрет.*)

**Йăскар.** Çтаппан кунта-и? (*Çтаппана курса*). Çтаппан, айта часрах киле, арăму вилсе карĕ.

**Ванюк.** Акă сана тепре, арăмушăн.

**Çтаппан.** Ан тив, Ванюк, йывăр суран ан ту.

**Ванюк.** А-ы, йывăр суран? Чунна кăларса илем эпĕ санне! Тьфу! Шуйттан аçи, тепĕр тесен... Намăссăр çын, тухса çухал ман куçăмран!.. (*Çтаппан тухса каять.*)

**Салтак ачисем.** Ха-ха-ха! Тупрĕ хăйĕн валли!

## 15-мĕш курăнни.

Елюк. Ванюк. Салтак ачисем.

**Ванюк.** Эх, ĕмĕр сакки, мĕншĕн эсĕ питĕ сарлака... (*Йĕрсе ярать.*)

**Елюк.** Ан макăр, Ванюк.

**Ванюк.** Çук. Эпĕ макăрмастăп. Эх, кала, Мĕтри, купăсна! (*Мĕтри купăс калама тытăнать.*) Ярăр ташша! (*Иккĕн тухса ташлаççĕ. Елюк ачине сăпкана хурать те салтак ачисене сăра ĕçтерет.*)

**Палля.** Çитĕ, юлташсем, каяр пулĕ ĕнтĕ.

**Палля юлташĕ.** Каç нумая карĕ, каяр пулĕ.

**Ванюк.** Ларăр...

**Палля.** Тавтапуç! Сирĕн те канас пулать, хамăрăн та выртса çывăрас пулать, тата ыран та ирех каяс пулать. Сывă пул, Ванюк!

**Салтак ачисем.** Сывă пулăр!

**Ванюкпа Елюк** (*ăсатаççĕ*). Сывă пулăр! Ятлаçа ан кайăр!

## 16-мĕш курăнни.

Ванюкпа Елюк.

**Ванюк** (*кăштах тăрсан*). Ывăнтăм. Вăй лаштах карĕ.

**Елюк.** Ванюк, ман чĕре сиксех тухать. Ырă пулмасть пулĕ?

**Ванюк.** Ним те мар. Эсĕ хăранă. Ăшчик тапранчĕ пулмалла санăн. Ах, ывăнтăм. Сасартăк ыйăх пусса килчĕ. Çывăрас.

**Елюк.** Вырт, вырт, эпĕ те выртатăп. (*Ванюк çывăрма выртать, Елюк ачине пырса сиктерет. Хăйă сÿнтерет. Тултан уйăх çути кĕме пуçлать.*) Темме чĕре сиксех тухать. Ку чĕре манăн ырра сисмест пулĕ.

**Ванюк** (*ыйăхлă сасăпа*). Çывăр, Елюк. Шутлассине ыран та шутлăпăр.

**Елюк.** Юрĕ. Ача çывăратам-ха. (*Сăпка юррине хуллен, сăмахсăр юрлать.*) Çывăрчĕ.

Ванюк умне пырса ларать. Унтан ачине илсе тĕпел кукрине çывăрма выртать. Уйăх çути вăйланать. Кăшт вăхăт иртсен, чÿречерен Çтаппан мĕлки курăнать. Вăл чÿрече витĕр хуллен йăпшăнса кĕрет. Аллинче улăм кĕлти. Вăл сцена урлă каçса, алăкран тухать. Кĕлтине алăк хыçĕнче чĕртсе ярать. Пÿртре хĕрлĕ çутă, Çтаппан каялла кĕрсе, тепĕр хут чÿречерен тухса сикет. Пушар чанĕ çапма пуçласан, Ванюкпа Елюк сиксе тăраççĕ.

## 17-мĕш курăнни.

Ванюкпа Елюк.

**Ванюкпа Елюк.** Ах, ах! Пĕтрĕмĕр! Ах, пĕтрĕмĕр! Ах, пĕтрĕмĕр! (*Ванюк çенĕкелле чупса тухать те, каялла тарса кĕрет.*)

**Елюк.** Ванюк, ачана манса юлатпăр! Ачана! Ачана!

**Ванюкпа Елюк** (*сăпка çĕклесе чÿречерен тухса сикеççĕ. Урамра халăх шавлама пуçлать*).

ЧАРШАВ.

## ВИҪҪĔМĔШ ПАЙĔ

Урамра, Йăскар пӳрчĕ умĕнче.

### 1-мĕш курăнни.

Елюк пĕчченех, кĕнчеле арласа ларать.

**Елюк** (*юрлать*):

Чашки, чашки, ай, сар мăйăр та
Чашки, чашки, ай, сар мăйăр—
Кампа та ларса, ай, ҫием-ши?
Кампа ларса, ай ҫием-ши?

Чун хурланать, чĕрем макрать те
Чун хурланать, чĕрем макрать—
Кампа та ларса, ай, пуплем-ши?
Кампа ларса, ай, пуплем-ши?

(*Арлама пăрахать.*) Эх, мăнтарăн пурăнăҫĕ... Пĕртте арлас килмест. Пĕр пыра тăрантарасшăн ҫын тарҫи пултăм. Ванюк, Ванюк! Курмастăн эсĕ ман пурăнăҫа, пĕлместĕн... Те чĕрĕ эсĕ, те вилнĕ, ҫыру та ямастăн. Эсĕ те хурлăх курса пурăнатăн пулĕ, килте те пурăнма тутлă мар. Акă ĕнтĕ ҫиме те ҫук, ҫын ĕҫне туса тăранса пурăнатăп. Хăш чухне хытă хурланнипе сан ҫинчен те манса каятăп. Мĕнле пурăнас, мĕнле пурăнас...

## 2-мĕш курăнни.

Елюк. Йăскар кĕрет.

**Йăскар.** Мĕншĕн тата арламастăн? Сана ахалех тăрантарма, эпир çĕрме пуян терĕн-им?

**Елюк.** Арласа ларнă çĕрте пуçа шухăшсем кĕчĕç те, шухăша карăм.

**Йăскар.** Тыткалакан çук сана, пулсан — шухăша каймăттăн эсĕ.

**Елюк.** Ах, пур, Йăскар акай, пур...

**Йăскар** (*măшкăласа*). Пур... Ман шухăшпа, сан ăна ĕнтĕ манас та пулать.

**Елюк.** Йăскар акай, мĕн калаçатăн эсĕ? Ăçтан эпĕ Ванюка манма пултаратăп? Вăл ман ăшран та тухмасть.

**Йăскар.** Тек апла каланине ман илтес килми пулчĕ. Вăрçăри япала вăл икĕ телейлĕ. Те килет, те килмест.

**Елюк.** Вилмесен хăçан та пулсан килĕ.

**Йăскар.** Ухмах! (*Хĕрхеннĕ пек пулса*) Елюк! Эпĕ сана хуна ырă тăвасшăн калатăп. Вилмесен килĕ, тетĕн, килсен те вăл ĕçе питех чăрмантармĕ. Эсĕ çамрăк, сăн-сăпатлă — епле хуна ху типсе пурăнас тетĕн?

**Елюк.** Ах, турă, епле кулăшла калаçатăн эсĕ, Йăскар акай. Ун пек шухăш ман пуçа пĕртте кĕмест.

**Йăскар.** Эпĕ сана уншăн каламастăп, хăваншăн калатăп. Хăван ирĕк, кирек мĕн ту. Эсĕ хурапа шурра курман-ха, апла пулсан.

**Елюк.** Курнă та-çке, Йăскар акай, курнă. Пурăнăç шухăшĕ ман пуçа шăтарсах тухать. Эпĕ ăна эсĕ каламасăрах лайăх пĕлетĕп.

**Йăскар.** Вара, вара. Акă хĕле кĕретпĕр, мĕн çиес, тетĕн? Мĕн тумланас, тетĕн? Ыйткалама каяс, тетĕн-и? Çавна пĕл.

**Елюк.** Сана йĕрĕнтерсе пурăннине пĕтĕм чунтанах сисетĕп эпĕ. Анчах, кĕлмĕçе каяс вырăнне, хапрăк-савăта ĕçлеме каям, пĕччен хырăма тăрантарăп çавах. Ачи пурăннă пулсан, пурăнма кансĕртерех пулнă пулĕччĕ.

**Йăскар.** Пирĕн хĕр-упраçпала тем тумалла хапрăк-савăтра. Пĕлетĕн, хĕрарăмăн пĕр хак: май килчĕ—тутă, май килмерĕ—çакăнса та вилĕн.

**Елюк.** Сан сăмаххусем ман чĕре тĕпнех кĕрсе лараççĕ.

**Йăскар.** Кĕççĕр çав, кĕççĕр. Шухăшлама пĕлместĕн. Çавăн пек кĕлеткепеле эпĕ сар çу çисе пурăнăп. Авă, Çтаппан миçе хут килсе карĕ кăçал? Мĕн тутуна пăратăн, тепĕр тесен?

**Елюк.** Ванюк киле таврăнсан, вăл манне чунăма кăларса илĕ.

**Йăскар.** А тата, вилнĕ пулсан?

**Елюк** (*хăраса*). Ах! Вилнĕ пулсан? Вара

ан тапрат, Иăскар акай, ман çÿçсем вирелле тăрса карĕç.

**Йăскар.** Чăнах та вилнĕ пулсан? Мĕн? Кала-ха?

**Елюк.** Вилнĕ пулсан, вара эпĕ те вилетĕп.

**Йăскар.** Тьфу!

### 3-мĕш курăнни.

Елюк. Йăскар. Ача-пăчасем лашалла выляса чупса кĕреççĕ.

**Ача-пăчасем.** Тпру! Тпру!

**Йăскар.** Мĕн кирлĕ сире, шĕкĕнтĕрсем?

**Ача-пăчасем.** Мĕн, Палля пичей вăрçăран таврăннă. Сăра ĕçме чĕнме ячĕç.

**Елюк.** Аçта вăл, ăçта?

**Ача-пăчасем.** Мĕн, килĕнчех. Ванюк пичче-пе пĕрле пурăнтăмăр, тет.

**Елюк.** Ванюк пиччу сывах, тет-и?

**Ача-пăчасем.** Мĕн, ăна каламарĕ. Часрах пырăр сăра ĕçме.

**Йăскар.** Чупăр, пыраççĕ, тейĕр.

**Ача-пăчасем.** Юрать. Эй, малти! (*Вĕçтерсе тухса каяççĕ.*)

### 4-мĕш курăнни.

Елюк. Йăскар.

**Елюк.** Часрах кайса пĕлес. (*Тухса каять.*)

**Йăскар.** Чим-ха, курăпăр...

## 5-мĕш курăнни.

Йăскар. Çтаппан (*тепĕр енчен кĕрет*).

**Çтаппан.** Пурăнать-и?

**Йăскар.** Пурăнать.

**Çтаппан.** Ма вилместĕн эсĕ?

**Йăскар.** Тĕнче пушанса юлĕ, тетĕп.

**Çтаппан.** Ман шухăшпа, эсĕ тĕнчене шăршлантарма анчах.

**Йăскар.** Ху шăршлантар. Сан хырăму çўхех мар.

**Çтаппан.** Ман кĕсъе те çўхех мар.

**Йăскар.** Суятăн.

**Çтаппан.** Мĕншĕн суяс? Эсĕ суйнăшăн укçа памастăн пулĕ?

**Йăскар.** Кай! Урăх сана нихăçан та ĕненместĕп.

**Çтаппан.** Мĕншĕн, Йăскар акай?

**Йăскар.** Э-э. Елюк кирлĕ пулсан „Йăскар акай?" Миçе хутчен суйрăн? Тухъя тупса паратăп, тесе суять. Елюка мар сана, хĕрĕх çулхине те тупса памастăп.

**Çтаппан.** Йăскар акай! Мĕншĕн çилентĕн-ха?

**Йăскар.** Кай, ăçтан килнĕ çавăнта.

**Çтаппан.** Йăскар акай!

**Йăскар.** Кай, кай, кай!

**Çтаппан** (*аллине кĕсъине чикет те, Йăскар çине пăхса, укçине шăнкăртаттарать*).

**Йăскар** (*Çтаппан çинелле çавăрăнса пăхать*).

**Çтаппан** (*татах шăнкăртаттарать*).

**Йăскар** (*аллине чăсса*). Пар тата, мĕн йĕкĕлтетĕн?

**Çтаппан** (*укçине кăларать*). Елюк хăçан ман пулать?

**Йăскар.** Ы-ы... (*патне пырса*). Итле, чăтас пулать кăштах.

**Çтаппан.** Урăх чăтăм çитмест.

**Йăскар.** Ха-ха... Чăтăму çитмест пулсан, укçуна ан хĕрхен, хăвăртрах пулĕ.

**Çтаппан** (*укçине парать*).

**Йăскар.** Ах, турă!.. (*Укçине куçне чаркаласа пăхать, унтан хĕвне чикет.*)

## 6-мĕш курăнни

Йăскар. Çтаппан. Палля (*кĕрет*).

**Палля.** Аван-и, ырă ялйышсем?

**Çтаппан.** Палля-çке ку? Аван-и? Хăçан çитрĕн? (*Ал параççĕ.*)

**Палля.** Халь анчах. Киле çитнĕренпе пĕр витре сăра ĕçрĕмĕр анчах. Эпĕ Елюк патне килтĕм. Вăл кунта пурăнать, терĕç те. Ванюк çинчен каласа пĕлтерес терĕм. Çавăнпа час васкаса тухрăм.

**Йăскар.** Елюк халь анчах, эсĕ таварăннине илтсе, сан пата тухса чупрĕ. Мĕнле хирĕç пулмарăр вара?

**Палля.** Эпĕ, пахча витĕр тухса, тӳрех çырма урлă каçрăм. Елюк тата чылайранпа сирĕн патра пурăнать-и?

**Йăскар.** Чылайранпах. Çын ĕçне тукаласа тăранса пурăнать.

**Палля.** Ха, апла.

**Çтаппан.** Çапла. А, Ванюк мĕнле?

**Палля.** Çавна калама пĕлместĕп. Вăрçа пĕрлех кĕтĕмĕр. Мана шрапнель пырса тивиччен эпир пĕрлехчĕ унпала. Хытă вăрçса пыратчĕ. Хăй те вĕри юнлă пулнă-мĕн... Кайран вара, хам та астумастăп—пĕлми пулнă. Мана лазарета илсе кайнă. Лазаретра унта эпĕ виçĕ кун кĕтсе выртрăм Ванюка. „Ах, ку Ванюк килĕ-ши, килмĕ-ши?“ тесе кĕтсе выртатăп. Виçĕ кун кĕтрĕм—куçа курăнмарĕ. Вара вилнĕ пулĕ-и, е тыткăна карĕ пулĕ-и, тесе шухăшларăм, мĕншĕн тесен пирĕн дивизирен пĕтĕмпе çирĕм салтак анчах çăлăнса юлнă. Унтан пире Мускаври лазарета куçарчĕç. Мускавра пĕтĕмпе виç эрне выртрăм. Халĕ малаллла сывалма киле ячĕç.

**Çтаппан.** Апла вара, Ванюк çинчен нимĕн те пĕлмерĕн-и?

**Палля.** Çук. Ним те пĕлеймерĕм.

**Çтаппан.** Сан шутупа, мĕнле пек? Вилнĕ-ши вăл е тыткăна кайнă-ши?

**Палля.** Çук. Пĕлместĕп.

**Йăскар.** Вăрçă час чарăнать-и? Пирĕн çĕнтерет теççĕ, пулас?

**Палля.** Кам калать?

**Çтаппан.** Хаçат çине çыраççĕ.

**Палля.** Хаçачĕ çинче суяççĕ ăна. Эпир вăл хаçата ĕненместпĕр.

**Çтаппан.** Патша калать, тет: „Этем виллинчен сăрт туса тултарам, çавах парăнмастăп", тесе калать, тет.

**Палля.** Ăна калама лайăх: вăл хăйĕн юнне тăкмасть.

## 7-мĕш курăнни.

Çавсемех. Ача-пăчасем (*тепĕр енчен чупса кĕреççĕ*).

**Ача-пăчасем.** Тпру! Тпру! Палля пичче, эпир пурне те чĕнсе çавăрăнтăмăр.

**Палля.** Ну, маттур апла пулсан. (*Çтаппанпа Йăскара*). Ĕнтĕ пирĕн пата кайăпăр.

**Çтаппан.** Тавта-пуç.

**Йăскар.** Ху килсе лар.

**Палля.** Эпир килĕпĕр. Сывă пулăр. (*Тухса каять*).

**Ача-пăчасем.** Эй, малти! (*Палля хыçĕнчен чупса тухса каяççĕ.*)

## 8-мĕш курăнни

Çтаппан. Йăскар.

**Çтаппан** (*хĕпĕртесе*). Мĕн калас тетĕн?

**Йăскар**. Çын пĕтнипе хĕпĕртетĕн-им?

**Çтаппан.** Мана мĕн? Ай, эпĕ пĕтес пулсан, маншăн куллянакан пулать, тата?

**Йăскар.** Пар тата укçуна—ку çынна макăртмалли ĕç.

**Çтаппан.** Мĕскер калаçатăн—камăн макăрмалла тата? Ман шухăшпа, Елюкăн, ман пуянлăха курса, хĕпĕртемелле анчах.

**Йăскар.** Пар, теççĕ сана. Мĕн хĕрхенетĕн-им тата çĕрсе выртакан укçуна?

**Çтаппан.** Парассине парăп та, анчах макăрмаллишĕн мар, — савăнмаллишĕн паратăп.

**Йăскар.** Йытă! Саншăн Елюка пăсма та шел.

**Çтаппан.** Мĕн вара пăсмалла? Елюк хĕр мар-çке?

**Йăскар.** Хĕре астарсан та çылăх мар. Елюк—арлă арăм.

**Çтаппан.** Ман шухăшпа, арăма астарни ним те мар. Пур-пĕр палăрмасть.

**Йăскар**. Епле астарăн. Тĕлĕкĕнче те Ванюка кĕтсе пурăнать.

**Çтаппан.** Эпир ăна кĕтмелле мар тăвăпăр. Авă, илтрĕн-и, Палля мĕн каласа хăварчĕ? Кун хыççăн пĕр çыру анчах кирлĕ...

**Йăскар.** Мĕнле çыру, йытă?

**Çтаппан.** Ванюк вилнĕ, тесĕ...

**Йăскар.** Тьфу! Эсĕ шуйттан...

**Çтаппан.** Эсĕ ухмах. Укçаран хăратăн.

**Йăскар.** Мĕнле тумалла, кала. Пĕр кĕрĕшнĕскер, каялла чакмăп.

**Çтаппан** (*кĕсьинчен хут кăларса пĕчĕк çыру çырать*). Акă, ме... Елюк килсен, пар. (*Аяккалла пăхса.*) Авă, килет. (*Тухса пытанать.*)

## 9-мĕш курăнни.

Йăскар. Елюк (*кĕрет*).

**Йăскар.** Мĕншĕн пуçна чиксе тавăрнатăн?

**Елюк** (*йĕрсе ярать*). Ванюк... вилнĕ... пулмалла... Пĕтрĕ ман пурăнăç ĕнтĕ.

**Йăскар.** Ан макăр-ха часах. Тен, пурнать-и, тен? Çыру пур. Вуласа пăх-ха.

**Елюк.** Ăçта çыру, ăçта?

**Йăскар** (*çырăва хĕвĕнчен кăларса парать*). Акă. Тен, Ванюк çырать-и, тен?

**Елюк.** Ах, чĕре сиксех тухать... (*Тĕлĕнсе пăхать.*) Çырни Ванюк алли пек мар... Ванюк вилнех пулĕ. Кама вулаттарас-ши? Палля патнех тепре каям-ха. (*Кайма тăрать.*)

## 10-мĕш курăнни.

Елюк. Йăскар. Çтаппан (*васкаса кĕрет*).

**Çтаппан.** Мĕн вуламалла, кўр хам вуласа парам...

**Елюк.** Нимех те мар. Палля патне каяс терĕм...

**Çтаппан.** Эсĕ ун патне пĕрре кайса килнĕччĕ мар-и вара?

**Йăскар.** Çыру вуланăшăн мĕн пулать, вулаттар ĕнтĕ? Унта кайса киличчен, халех пĕлетĕн?

**Елюк.** На, вуласа пар.

**Çтаппан.** Хавас, питĕ хавас.

**Елюк.** Ах, Çтаппан, часрах вула.

**Çтаппан** (*Елюк çине пăха-пăха вулать*). „Деревни Хыр-касы. Елене Кудряшевой. Сывă пурăнатăр-и. Иван Кудряшев сире нумай пурăнма хушса хăварчĕ".

**Елюк** (*шуралса каять*).

Çтаппан (вулать). „Шрапнель кăкăрне çĕмĕрсе кайсан, виçĕ сехет те пурăнмарĕ".

**Елюк.** А-а-а! Пĕтерчĕç! Пĕтерчĕç, шуйттансем! Ах, пĕтерчĕç, Ванюк, Ванюк... Ах, пĕтерчĕç! А-а-ах, ха-ха-ха! А-а-аа!.. (*Кайса ӳксе йынăшса выртать.*)

**Йăскар** (*Çтаппана*). Шуйттан! Эсĕ турăн, çĕр çăтса антарашшĕ!

**Çтаппан** (*аллипе Йăскар çăварне хуплать, çилленсе*). Ан кăшкăр, шапа çăварĕ!

**Йăскар.** Кăшкăратăп!

**Çтаппан.** Кай кунтан, эпĕ хамах май кӳретĕп.

**Йăскар.** Каймастăп.

**Çтаппан**. Апла пулсан, тыт татах, выçлăх пыр! (*Укçа парать.*)

**Йăскар**. Кирлĕ мар укçу!

**Çтаппан** (*хушса парать*). На татах!

**Йăскар**. Куçăнтан сурам!

**Çтаппан** (*тата хушса парать*). Тыт, хампар айĕнчи!

**Йăскар**. Халăха кăшкăратăп.

**Çтаппан**. На пĕтĕмпех, тăранми хырăм!

**Йăскар** (*илет*). Çылăхĕ сан çине пултăр! (*Тухса каять.*)

**Çтаппан**. Тьфу! Шуйттан хĕрарăмĕ!

## 11-мĕш курăнни.

Елюк. Çтаппан. (*Елюк çине пăхса тăрать. Хĕвел анать.*)

**Елюк**. А-а-а... Пĕтерчĕç! Ванюк, ах Ванюк, ăçта эсĕ? Ах, ăçта эсĕ, ăçта-а?

**Çтаппан** (*Елюк çине пĕшкĕнсе*). Елюк!

**Елюк**. Кам эсĕ?

**Çтаппан** (*аяккалла*). Тăнран тухса карĕ.

**Елюк**. Кам эсĕ?

**Çтаппан**. Эпĕ...

**Елюк**. Кам?

**Çтаппан**. Сана чунтан-вартан юратакан çын.

**Елюк**. Эсĕ Ванюк-и, вара? (*Тăрса ларать*).

**Çтаппан**. Эпĕ сана çак çутă тĕнчерен ытларах юрататăп...

**Елюк** (*майне тăсса тинкерсе пăхать*). Эсĕ мана юрататăн-и! Эсĕ тăшман, ха-ха-ха...

**Çтаппан.** Мĕн тăвасах, хама хам чиксе пăрахăттăм! Елюк! Ванюк вилнĕ...

**Елюк.** Ванюк вилнĕ?..

**Çтаппан.** Ванюк вилнĕ... Эпĕ сана Ванюкран ытла юрататăп.

**Елюк** (*витĕр пăхса*). Çук... Эсĕ Ванюк мар.

**Çтаппан.** Эпĕ чаплă пуян. Ман мулсем нумай.

**Елюк.** Эсĕ мана мулпа астарасшăн-и?

**Çтаппан.** Итле, Елюк. Эпĕ Ванюк мар... Çавах, манăн чĕре вут чулĕ пек тивсе кайма пултараймасть-и вара? Манран пĕтĕм ял хăраса тăма пултарать. Эпĕ сана хура çăкăр çитермĕп, хура ĕçпе санăн çинçе пилĕкне хытармăп...

**Елюк.** Кай ман çумран! Хăвар мана! Ман чĕрене вырăнтан ан хускат. Эпĕ ĕмĕрте те сан арăму пулас çук. Эсĕ çапатăн.

**Çтаппан.** Сана-и? Аçтан ман сана çапас? Арăма чун тарăхнипе хĕненĕ те пулĕ. Юратнă пулсан, эпĕ ун çине сивĕ куçпа та пăхас çук. Эх, мĕн калас, иртнĕ пурăнăçшăн! Эпĕ сана ылттăн пек ачашласа пăхса пурăнăттăм...

**Елюк.** Ан тархасла. Санпа пĕтĕçсе пурăнăç суранне тин тӳрлетес çук.

**Çтаппан.** Эх, Елюк! (*Елюк чĕркуççи çине аллисене хурса, Елюк умне чĕркуçленсе ларать.*) Хĕрхен мана... Халличчен мана никам

та юратман. Е ман чĕререн çунакан вут ахалех сӳнсе ларĕ-ши? Сана юратма пуçланăранпа эпĕ ухмаха ернĕ çын пек çӳретĕп. Ăçта кайсан та эсĕ ман куç умĕнче, ман çине пăхса ман чĕрене шăрататăн. Эпĕ сан паталла аллăмсене тăсса, пĕчĕк ача пек йĕретĕп. Елюк, Елюк, юрат мана!

**Елюк.** Эй, телейсĕр чун. Хĕрхенетĕп эпĕ сана. Йывăр пулмалла сана та. Санран та ырă çын пулатчĕ-и, тен. Çавах та хăвар эсĕ мана. Эпĕ те чĕре тапраннă çын. Телей курас çук эсĕ манпала.

**Çтаппан.** Савнă Елюк! Çӳлти çутă хĕвел те ман чуна сан чухлĕ савăнтараймасть. Эсĕ мана юрату сăмах памастăн пулсан, эпĕ паянах хамăн пĕтĕм пуянлăха хĕм кăвар туса салатса ярăп. Унтан вара, хам кăкăра хамах çĕçĕпе касса çурăп та, санăн уру умне килсе, ӳксе вилĕп.

**Елюк.** Ах, хăрушă-çке! Ахаль те пусăннă чуна эсĕ татах пăвса илес тетĕн-и? Темле пулсан та, кай, мана хама пĕччен пуçпа шухăшласа илме пар.

**Çтаппан.** Елюк!..

**Елюк.** Кай часрах! Авă, каç пулать, ачапăчасем выляма тухнă. Вĕсем халех кунта килеççĕ... (*Аякра сăвă юрри илтĕнет.*)

**Çтаппан.** Сывă пул, юратнă Елюк! (*Тухса каять.*)

## 12-мӗш курӑнни

(Елюк *пӗчченех*)

Елюк. Ах, мӗнле ҫын вӑл. Ҫтаппан... Хӗрхенетӗп эпӗ ӑна... „Елюк, Елюк!" тет... Пысӑк кайӑк пек вӗҫсе килчӗ вӑл ман ҫумма. Унӑн сӑмахӗсем ман ӑша вӑрӑ пек шӑппӑн-шӑппӑн кӗрсе ларчӗҫ!.. (*Астуса илсе.*) Ванюк, Ванюк! Ӑҫта эсӗ! Илтетӗн-и хӑвӑн юратнӑ юлташна? Ҫук, эсӗ илтместӗн... Манӑн чун хурланать, чӗрем макӑрать... Эсӗ катари чикӗре тапаланмасӑр выртатӑн... Юн юхать... Шӑлне йӗрнӗ... (*Хӑраса ухмаха ернӗ пек кӑшкӑрса ярать*). Ах-ха-ха-ха-ха!.. (*Чупса тухса каять.*)

## 13-мӗш курӑнни

Вӑйӑ ачисем (*юрласа кӗреҫҫӗ. Карта ӑшӗнче Анюкпа Ванюк*).

**Вӑйӑ ачисем** (*юрлаҫҫӗ*).

Пӗчӗк ҫеҫ пу-те-не
Сарӑ тулла ю-ра-тать,
Ю-ра-тать, ю-ра-тать,
Чӑнахах та ю-ра-тать.

Ай, хай, ача Ванюк пур
Ҫав Анюка юратать.
Юратать, юратать,
Чӑнахах та юратать

(Ванюк карта паррине тухса Анюка чуптӑвать. Вара вӗсем картаран пӗр хӗр, пӗр ача суйлаҫҫӗ. Суйланисем карта варрине тухаҫҫӗ. Суйлакансем вӗсен вырӑнне тӑраҫҫӗ. Унтан вара ҫавнах тепре юрлаҫҫӗ. Юрласа пӗтернӗ ҫӗре каярах юлнӑ ачисем чупса кӗреҫҫӗ).

**Каярах юлнӑ ачисем.** Ай-ай! Елюк инке шыва сикрӗ!

**Вылякансем:** Кам? Кам? Елюк инке? Ӑҫта? Шыва сикрӗ? Айтӑр часрах! (*Чупса тухса каяҫҫӗ.*)

### 14-мӗш курӑнни.

Йӑскар (*сцена урлӑ чупса тухса каять*).

**Йӑскар.** Ах, шуйттан! Ман пуҫа ҫиес терӗн-и? Ах, шуйттан! Ама йытӑ! Шыва сикет тата! (*Тухса чупать.*)

### 15-мӗш курӑнни.

Ҫтаппан (*шывран туртса кӑларнӑ Елюка йӑтса кӗрет. Ун хыҫӗнчен*), Йӑскар, Пӑрчкан, Муҫҫа. Вӑйӑ ачисем тата ытти сынсем те кӗреҫҫӗ.

**Ҫтаппан.** Елюк, Елюк...

**Ҫынсем.** Силлес ӑна! Шӑналӑк ҫине хурса силлес...

**Ҫтаппан.** Памастӑп! Елюк кӳпсе кайман. Эпӗ ӑна шыва путаччenех туртса кӑлартӑм. Авӑ, куратӑр, вӑл ура ҫине тӑма та пултаратъ. (*Елюка ура ҫине тӑратать*).

**Елюк.** Хура халӑх, каҫарӑр мана! (*Ывӑннипе Ҫтаппан алли ҫине кайса ӳкет.*)

**Пӑрчканпа Муҫҫа.** Ах, Елюк! Кӗҫех вилеттӗнччӗ, ачам!

**Пĕр старик.** А, Елюк, эсĕ ку шухăша хăçан тытрăн?

**Елюк.** Ванюк вилнĕ тесе çыру килчĕ. Вара, ман куçăмра çутçанталăк тĕттĕмленсе çитрĕ те, чăтаймарăм...

**Пĕр старик.** Ай-яй-яй! Ку вăрçăра нумай халăх вилчĕ те, анчах чĕрĕ пурăнакансем пурте вĕсем хыççăн каймĕç. Эпĕ те калатăп, ман тахçанах вилес пулать, тетĕп. Темле, вилес килмест! Çутçанталăках паха пек туйăнать. Ах, хах-ха! Ватăлтăмăр ĕнтĕ...

**Çтаппан** (*хуллен*). Елюк, эпĕ сана чунтан-вартан калатăп: хĕрхенетĕн-и эсĕ мана?..

**Елюк** (*Çтаппан çине пăхса*). Ман пурăнăça çăлнăшăн—эпĕ санăн...

**Çтаппан.** Манăн юратнă Елюк!.. (*Елюка аллинчен тытать*). Ырă çынсем! Ваттисем, çамрăксем? Эпĕ Елюка качча илетĕп—çавăнпа çакă кунсенче сире туя пыма чĕнетĕп!..

**Çынсем.** А, юрать, юрать! Пырăпăр! Пырăпăр!

**Вăйă ачисем** (*хăвăрт чупса çавăрăнса юрлаççĕ*).

Ай-хай, пичче Çтаппан пур,
Елюк инкене юратать.
Юратать, юратать,
Чăнахах та юратать.

ЧАРШАВ.

# ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ

Йăскар пӳрчĕ.

Сцена сылтăм енче кĕреке сĕтелĕ. Сĕтел тавралла çăка çыхса тултарнă. Пӳрт туллиех хăнасем. Çаплах ĕçтереççĕ, çаплах çитереççĕ. Сулахайра, рампа çывăхнерех, икĕ пичке: пĕри сак çинче, тепри урайĕнче. Тулта туй сикет. Пӳртре ташлаççĕ, юрлаççĕ. Сĕтел хушшинче кĕрекеçĕсем лараççĕ. Тăваттăмĕш пай пĕтнĕ çĕре тул çутăлать.

## 1-мĕш куранни.

Пӳртре хăнасем. Икĕ туй арăмĕ. (*Ташлаççĕ.*) Музыкçă хĕрарăм ташши çеммине калать. Туй арăмсем ташланă вăхăтра тулта туй сикет. Туй сикекенсем акă çак сăвăсене каласа параппан çапса юрлаççĕ:

Туй, туй, туй, тесе, (2 *хут*)
Çĕр çĕмĕрсе килтĕмĕр.
Çул юсама тухмасан,
Эпир киле каяс çук.

Эпир туя каймасан, (2)
Туй ĕренки килес çук.
Инке илсе килес çук,
Аяр, аяра.

Ой, пичче Çтаппан пур, (2)
Инке лайăх Елюк пур,
Елюк пур та Ванюк пур,
Аяр, аяра.

Туй, туй, туй, тăвас (2)
Туй тăвас та çуй тăвас,
Çапла мар-и, ачасем?
Аяр, аяра...

(*Тулта çак сăмахсене юрласа пĕтерсен, пӳртре икĕ туй арăмĕ ташлама чарăнаççĕ.*)

## 2-мĕш курăнни.

Çавсемех, Туй арăмĕсем. (Тулта малалла туй хуллентерех сикет. Туй арăмĕсем тултан, тултисемпе пĕр тĕл туса юрласа кĕреççĕ. Кĕрсен юрлама кăштах чарăнаççĕ. Туй арăмĕсем юрлама чарăннă вăхăтра малтан ташланă икĕ туй арăмĕ, кĕрекерисене пырса тайăлса, акă çапла чыс тăваççĕ).

**Икĕ туй арăмĕ.** Ĕнтĕ ан ятлăр, хăтасем, тăхлачăсем! Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас тесе сикрĕмĕр.

**Муççа.** Арахмат чыс тунăшăн.

**Йăскар.** Ташланă хыççăн ĕçĕр-ха. (*Тултарса парать.*)

**Икĕ туй арăмĕ.** Ĕнтĕ туйран перекетлĕ пултăр. (*Ĕçеççĕ.*)

**Çтаппан** (*тайăлса*). Тавтапуç хисеп тунăшăн. (*Тултан кĕнĕ туй арăмĕсем, малалли сăвăсене каласа, юрлама пуçлаççĕ. Туй арăмĕсем юрланă вăхăтра икĕ туй ачи тухса ташлаççĕ. Музыкçă арçын ташши çеммине калать. Туй арăмĕсем акă çакă сăмахсене каласа юрлаççĕ.*)

**Туй арӑмӗсем:**

Хӑта пире хваттер яр, (2)
Хваттер яр та хӗрне пар. (2)
Аяр, аяра.
Хӗрне пар та тӳшек пар, (2)
Тӳшекки пултӑр ҫиттиллӗ,
Ҫитти пултӑр чӗнтӗрлӗ.
Аяр, аяра.
Чӗнтӗр пултӑр шӑрҫаллӑ, (2)
Шӑрҫи пултӑр тенкӗллӗ,
Тенки пултӑр майраллӑ.
Аяр, аяра.
Майри пултӑр ачаллӑ,
Ачи пултӑр картуслӑ,
Картус ҫинче вӑй вылять,
Пирӗн алра хӗр вылять.
Аяр, аяра.
Эпир ӑна каламан, (2)
Туй ачисем каланӑ.
Туй ачисем юрланӑ.
Аяр, аяра...

(*Ҫак сӑмахсене юрласа пӗтерсен, икӗ туй ачи ташлама чарӑнаҫҫӗ*).

## 3-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех. Туй арӑмӗсем. Туй ачисем.

Тулта малалла туй сикме чарӑнать. Туй ачисем, тултан, пӳртрисемпеле пӗр тӗл туса юрласа кӗреҫҫӗ, кӗрсен юрлама кӑштах чарӑнаҫҫӗ. Туй ачисемпе туй арӑ-

мĕсем юрлама чарăннă вăхăтра ташлакан икĕ туй ачи, кĕрекерисене пырса тайăлса, акă çапла чыс тăваççĕ.

**Икĕ туй ачи:** Ĕнтĕ ан ятлăр, хăтасем, тăхлачсем. Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас тесе сикрĕмĕр.

**Муççа.** Ăрахмат чыс тунăшăн.

**Йăскар.** Ташланă хыççăн ĕçĕр-ха. (*Сăра тултарса парать*).

**Çтаппан** (*тайăлса*). Тавтапуç хисеп тунăшăн.

Кун хыççăн тултан кĕнĕ туй ачисем, туй арăмĕсем малалли сăвăсене каласа юрлама пуçлаççĕ. Вĕсем юрланă вăхăтра, икĕ туй ачи тата икĕ туй арăмĕ тухса, тăваттăн ташлаççĕ. Музыкçă арçын ташши çеммине калать. Тăракан туй ачисемпе туй арăмĕсем акă çак сăмахсене каласа юрлаççĕ.

Çичĕ çырма пуçĕнче (2)
Çичĕ çул кайман юр выртать. (2)
Аяр, аяра.
Юрне чавса пăхрăмăр. (2)
Кĕрĕк татки тупрăмăр.
Аяр, аяра.
Кĕрĕк татки кĕсъинче (2)
Катăк чĕлĕм тупрăмăр, (2)
Аяр, аяра.
Çавă катăк чĕлĕме (2)
Кукрашкинчен хуçрăмăр, (2)
Аяр, аяра.

Елюкпала Ванюка (2)
Кĕçĕрхи çĕр уйăртăмăр. (2)
Аяр, аяра...

Çак сăмахсене юрласа пĕтерсен икĕ туй ачи тата икĕ туй арăмĕ тăваттăн ташлама чарăнаççĕ. Вара вĕсем кĕрекерисене тайăлса акă çапла чыс тăваççĕ.

**Икĕ туй ачи тата икĕ туй арăмĕ.** Ĕнтĕ ан ятлăр, хăтасем, тăхлачсем. Кĕçĕн çывсене кăмăл тăвас тесе сикрĕмĕр.

**Муçça.** Аракмат чыс тунăшăн.

**Йăскар.** Сикнĕ хыççăн ĕçĕр-ха. (*Тултарса парать.*)

**Икĕ туй ачи** тата **икĕ туй арăмĕ.** Ĕнтĕ туй перекетлĕ пултăр. (*Ĕçеççĕ.*)

**Çтаппан.** Тавтапуç хисеп тунăшăн!

## 4-мĕш курăнни

Çавсемех. Туй пуçĕ (*кĕрет*).

**Туй пуçĕ.** Ну, ĕнтĕ, туй çыннисем! Ĕнтĕ ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр, ташларăмăр, сикрĕмĕр—хуçасене таптарăмăр! Ĕнтĕ тул çутăлнă çулпала пирĕн киле кайма тивĕçлĕ.

**Туй ачисем.** Каятпăр! Каятпăр!

**Çтаппан.** Эй, аслă туй пуçĕ! Авалхи йăлапа çул курки тума ирĕклĕ пулатăн пулĕ?

**Туй пуçĕ.** Тавтапуç сана, пĕчĕк кĕрĕвĕм. Эпир аслă çулпа килтĕмĕр—сана асла хумашкăн, аслă çулпах тухса кайма ирĕк туса пар!

**Çтаппан.** Пысăк салам сана, аслă туй пуçĕ.

(*Туй пуçĕ ĕçет те тухса каяс умĕн хăйматлăх юррине юрласа ярать*):

Тухать-и те тухмасть-и,
Тухать-и те тухмасть-и?
Эпир киле каятпăр,
Эпир киле каятпăр

(*Туй пуçĕ, ун хыçĕнчен туй ачисем тухса каяççĕ.*)

## 5-мĕш куранни.

Çавсемех. Туй арăмĕсем (*çав кĕвĕпех малалла юрлаççĕ*):

Тавай пире япала (2)
Трантас кашти аваниччен, (2)
Эпир панă укçине (2)
Сĕтел ури тайличчен, (2)
Йĕри-тавра пăхрăм та (2)
Пирĕн кин пекки пĕртте çук—
Епле пулма пĕлнĕ-ши?
Ах, кинĕм пукане,
Пĕчик кинĕм пукане,
Çавах илсе каятпăр,
Ай-яй-яй-яй-яй-я...

**Йăскар.** Апла пулсан, кĕçĕн-çынсене кĕреке умне тăратас та пулĕ...

**Хăйматлăх.** Ă, вăл ĕнтĕ ман ĕç пулать. Айтăр хампара!

(Туй арăмсем, юлнă туй ачисем, музыкçă тата ытти-сем те Çтаппанпа хăйматлăх хыççăн тухса каяççĕ. Пӳр-те кĕрекерисем анчах юлаççĕ.).

## 6-мĕш курăнни.

Йăскар, Муççа. Хăнасем.

**Йăскар.** Ĕçĕр-ха, çийĕр-ха, ырă тăвансем!

**Хăнисем.** Ăрахмат! Ĕнтĕ паян ĕçрĕмĕр те, çирĕмĕр те...

**Муççа.** Карчăк! Эпир хĕр паратпăр-çке? Епле савăнса юрлас мар манăн?

**Йăскар.** Юрлах ĕнтĕ.

**Хăнисем.** Çаплах ĕнтĕ, юрлас пулать.

**Муççа** (*юрлать*). Эян, аян, аян, аяй-ях та ай-яй, я-ах...

**Йăскар.** Ĕçĕр-ха, çийĕр-ха, савнă тăвансем!

**Хăнисем.** Ăрахмат! Ĕнтĕ паян ĕçрĕмĕр те, çирĕмĕр те.

**Муççа.** Карчăк! Эпир ывăл авлантаратпăр-çке? Мĕн-ма савăнса ташлас мар ман, Муç-çан?

**Йăскар.** Ташлах ĕнтĕ.

**Хăнисем.** Çаплах ĕнтĕ, ташлас пулать.

**Муççа** (*ташлать, ташланă май юрлать*).

Тиллит, тиллит тил ури,
Тил ури мар, хӗр ури,
Аяр, ай, яй, яй.
Аяр, аяр, аяра...

(Ташласа пырса, пичке ҫине кайса ӳкет.)

## 7-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех. Пӑрчкан чупса кӗрет.

**Пӑрчкан** (*Муҫҫана*). Муҫҫа, Муҫҫа!
**Муҫҫа.** Мӗн?
**Пӑрчкан.** Ванюк вӑрҫӑран таврӑннӑ...
**Муҫҫа.** Суятӑн?..
**Пӑрчкан.** Суймастӑп. Авӑ, халь урамра вӑльверпе ҫӳрет.
**Муҫҫа** (*урӑлса кайса*). Э-э, тет, тет, те... (*Тултан хӗр йӗрри музӑкӗ илтӗнме пуҫлать.*)
**Пӑрчкан.** Килеҫҫӗ (*ҫынсем хушшинелле пытанать.*)

## 8-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех. Елюкпа Ҫтаппан (*кӗреке умне пырса тӑраҫҫӗ*). Туй халӑхӗсем.

**Кӗреке пуҫӗн юлташӗ.** Муҫҫа шӑллӑма тӑратӑр.
**Йӑскар.** Муҫҫа!
**Муҫҫа.** Мӗн?
**Йӑскар.** Сӗтел хушшине ларас пулать-ҫке. Кӗҫӗн-ҫынсем умра тӑраҫҫӗ.

**Муççа** Кай!

**Йăскар.** Яла ан култар!

**Муççа.** И... Яла култарасси тин пуçланать, пĕлетĕн-и? (*Тăрса ларать.*)

**Кĕреке пуçĕн юлташĕ.** Муççа шăллăм, тăр часрах, çамрăксене пиллес пулать.

**Муççа.** Пиллеместĕп эпĕ вĕсене!

**Йăскар.** Чарăн, ял ухмаххи! Ларнă пултăр халех сĕтел хушшине.

**Муççа.** Лармастăп та, пиллеместĕп те.

**Иăскар.** Ах, турă, персе тултарнă та, нимне те пĕлмест тата.

**Çтаппан.** Муççа пичче! Мĕншĕн эсĕ ман кăмăлăма хуçасшăн?

**Муççа.** Эсĕ... кам пулатăн?

**Çтаппан.** Муççа пичче!..

**Муççа.** Ихи-хи-хи!..

**Çтаппан.** Муççа пичче!!

**Муççа.** Эпĕ тахçанах Муççа пичче...

**Çтаппан.** Муççа пичче! Хуна ху ытлашши ан ман. Эсĕ манăнне ĕçсе шутран тухса карăн!

**Муççа.** На, хăвăнне хăвах. Кирлĕ мар мана санăнни ним те.

(*Сĕтел çинчи эреке кĕленчине илсе, Çтаппан çине пеме тăрать. Муççана алран тытаççĕ.*)

**Çтаппан.** Чарăнатăн пулсан, чарăн, Муççа!

**Муççа.** Эпĕ санран хăрамастăп!

**Йăскар.** Çыхса пăрахас ăна, ухмаха!..

**Муççа.** Эпĕ ухмах мар! Эпĕ хам пўртре! Хурах!

## 9-мĕш куранни.

Ça всемех. Ванюк кĕрет.

**Пурте.** Ах!.. (*Пурте тĕлĕнсе хытса каяççĕ. Елюк, Ванюк еннелле пĕрре ура ярса пусать те, ăнтан кайса ўкме тăрать. Çтаппан Елюка çĕклесе тенкел çине лартать.*)

**Ванюк** (*тăрсан-тăрсан*). Аван туй тăватăр-и?

**Муççа.** Ванюк шăллăм! Ах, Ванюк шăллăм! Вĕсем мана кĕçех çыхса пăрахатчĕç!

**Ванюк.** Камсем? (*Çтаппанпа Елюк çине кăтартса.*) Акă çаксем-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Иккĕшĕ те паллана çынсем... (*Йăскара*). Эсе те хĕр паратăн-и-ха, йĕке хўре?

**Йăскар.** Манран ан мăшкăла. Арăмна пĕл...

**Ванюк.** Пĕлетпĕр. (*Елюк çине пăхса, хуллен кулса ларать.*) Ха-ха-ха... Чипер, чипер кĕçĕн çын! Кĕрĕвĕ те, авă, чухăн мар пулас... Арăмне майра пекех тумлантарнă... Мĕн чухлĕ тўлерĕн ку арăмшăн? Хулăм укçи кăштах та пулсан панă пулĕ?

**Çтаппан.** Сан укçу мар...

**Ванюк** (*шăлне çыртса*). Сан укçу мар?

Арăму камăн? Эпир вăрçăра юн тăкнă чух, эсĕ кунта арăмсене пусмăрлатăн-и?

**Çтаппан.** Эпĕ сан арăмна сутăн илмен. Вăл хăех мана савса качча пырать.

**Ванюк.** А!.. Ăçта эпĕ? Камсем эсир? Виçĕ уйăх Австрире тыткăнра пурăннă чух, эпĕ кун пек пуласса шухăшламанччĕ. Ах, килте мана юратакан юлташ кĕтсе пурăнать, тесе, тыткăнран тухса тартăм. Хамăр яла курсан, чун хĕпĕртенипе чăтаймарăм—макăрса ятăм. Яла çитсен—ялĕпе туй сикет. Кам туйĕ ку тетĕп... Пĕр сăмах та чĕнмеççĕ, йытăран тарнă пек хăраса тараççĕ... М-мх!.. Ман юн тăкăнни сан пуç çине килтĕр!

**Çтаппан.** Эсĕ суятăн! Эсĕ тыткăнра пулман! Эсĕ тарса пурăннăскер! Эпĕ сана халех тыттарса ярăп! Тытăр ăна! Тытăр!

**Çынсем** (*Ванюка тытма тăраççĕ*).

**Ванюк** (*арăслан пек пуçне каçăртать*). Сирĕлĕр ман çумран! (*Сирĕлеççĕ.*) Эпĕ акă çакăнтан тепĕр сăмах ыйтам. (*Елюка*). Савнă юлташăм! Паллатăн-и эс мана?

**Елюк** (*чĕнмест*).

**Ванюк.** Е çакă çурăлса, татăлса пĕтнĕ кăвак тумтирлĕ çынна йышăнас теместĕн-и?

**Елюк** (*чĕнмест*).

**Ванюк.** Ма чĕнместĕн? Эпĕ окопра çĕрсе выртнă чухне те, тыткăнра выçăхса пурăннă чухне те сан çинчен анчах шухăшлаттăмччĕ.

Манăн пысăк çунат ÿстерсе сан çумна вĕçсе килес килетчĕ. Эпĕ саншăн тыткăнран тухса тартăм. Австрин аслă вăрманче тискер кайăксемпе пĕрле пурăнтăм. Хурал тăракансене улталаса, аслă Дунай шывĕ урлă ишсе каçрăм. Эпĕ санран пĕр виçĕ сăмах та пулин илтме тивĕçлĕ пулĕ, тесе шаннăччĕ.

**Елюк.** Эй, телейсĕр Ванюк. Эпĕ те сана нумай кĕтрĕм. Анчах турă тепĕр тĕслĕ çырнă. Эпĕ ĕнтĕ тин сан пата пырсан та хам телее тупас çук. Каярах пултăн. Чăннипе каласан, эпĕ сана хĕрхенетĕп. Суд тăвас тетĕн пулсан, суд ту—санăн ирĕк.

**Ванюк.** Эсĕ апла калатăн... Халь тата эсĕ юратса каятăн-и?

**Елюк** (*вилнĕ пек*). Юратса...

**Ванюк** (*кăкăрне тытса*). А!..

**Çтаппан.** Тытăр çакă таркăна!

**Çынсем** (*тытма тăраççĕ*).

**Ванюк** (*револьвер кăларса*). Ан тапранăр вырăнтан! *Çтаппан çине, аллине ерипен хăпартса, тĕллеме пуçлать.*) Эпĕ сана авлантарас тетĕп, Çтаппан...

**Çтаппан.** М-мхм!.. (*Чавсине çĕклесе тытса, Ванюк çине кашкăр пек пăхса тăрать, унтан тискеррĕн кулса ярать.*)

**Муççа.** Ванюк шăллăм, тархасшăн ан пер!..

**Кĕреке пуçĕн юлташĕ.** Юн ан тăк, Ванюк...

**Ванюк** (*аллине усса*). А, Ванюк!.. Ванюкăн

чӗри сӳнмен!! (*Елюка*). Ну?! Пӑрахатӑн-и эсӗ ҫакӑ намӑс тумтире?

**Елюк** (*чӗнмест*).

**Ванюк.** Елюк!? (*Елюк патнелле ура ярса пусать*).

**Елюк** (*чӗнмест*).

**Ванюк.** Санпа венчетре тӑнӑ упӑшку, Ванюк, эпӗ сана калатӑп: хывса пӑрах халех ҫакӑ йӗрӗнчӗке, ай, эпӗ хам тытса ҫурса пӑрахасса кӗтетӗн-и?

**Елюк.** Чарӑн, Ванюк! Эпӗ тин санӑн арӑму мар. Мӗн тӑвас тенине ту...

**Ванюк.** Юлашки хут калатӑп эпӗ сана... Манӑн ҫунса кайнӑ ӑшчикшӗн кала: тавӑрнатӑн-и эсӗ ман пата каялла?

**Елюк** (*хытӑ*). Тавӑрӑнмастӑп! Акӑ... на!.. Ку сан ҫумна ҫыхнӑ сӑнчӑр! Мана вӑл урӑх кирлӗ мар! (*Ҫӗррине хывса перет.*)

**Ванюк.** Вил апла пулсан!.. (*Персе пӑрахать.*)

**Елюк** (*аллисемпе вӗҫнӗ пек туса илет те, кайса ӳкет*).

**Ванюк** (*револьверне пӑрахать. Унтан ухмаха ерсе, чӗтресе сывлӑша хӑйӗн ӑшне туртса илет*). Юн! Юн! Каллех юн!.. Ах-ха-ха-ха-ха! (*Чупса тухса каять.*)

**Ҫтаппан:** Елюк!.. (*Елюк ҫине пырса ӳкет. Халӑх хӑраса хытса каять.*).

ЧАРШАВ.

# ЯЛТА

## 5 КАРТИНĂЛЛĂ ПЬЕСА

**Театрсенче выляма çĕнĕлле редакциленĕ вариант**

### Выляканĕсем:

Пăрчкан—вăтам хресчен арăмĕ.
Елюк—унăн амаçури хĕрĕ.
Ванюк—каччă, тăлăхскер, чухăн хресчен.
Çтаппан—ял куштанĕ, кулак.
Йăскар—карчăк.
Муççа—унăн упăшки.
Палля—салтак т. ыт. те (малтанхи вариантра кăтартнисемех).

## ПĔРРЕМĔШ КАРТИНА.

### 1-мĕш курăнни.

(*Сăмахсăр сцена*)[1]

Çтаппан крыльца çинчен уретникпе старăстăна кă-мăллăн ăсатать. Лешсем ăшшăн сывпуллашса каяççĕ. Урам хушшипе ватă çын иртсе каять. Вăл, Çтаппан тĕлне çитсесессĕн, çĕре çити тайăлса чыс тăвать. Çтап-панĕ кĕрет.

---

[1]) Шупашкарти академиллĕ театрта 1932 ç. лартнă чухне пьесăн 4 картинĕшĕн те юрăхлă, улшăнми деко-раци—урам хушши пек тунăччĕ: сцена пĕр енче вăтам хресчен килкартийĕ, тепĕр енче Ванюкăн чухăн килĕ, вĕсем урлă урам леш енче Çтаппанăн шатрун çурчĕ курăнать.

Кун пек декорацие выляс пулсассăн, е Çтаппан килĕ ўмĕнчи урам хушшине кăтартмэ май пулсассăн çех, çак малтанхи сăмахсăр сценкăна выляса ирттерме пулать, Ялти сценăра тўрех иккĕмĕш курăнуран пуçламалла е тата действи Пăрчкан пўртĕнче шалта пулма та пулта-рать.

## 2-мĕш куранни.

Пăрчкан килкартинче. Сцена: вăтам хресчен пӳрчĕн пăлтăра кĕмелли картлашка, çывăрма шăналăк карса тунă вырăн, хапха т. ыт. те. Пăрчкан пусă умĕнче кĕпе çăвать.

**Елюк** (*витресемпе кĕрет*). Ĕнтĕ сурăхсене хупрăм. (*Витрисене крыльца çине лартать, вырăн патне пырать.*)

**Пăрчкан.** Купăста шăвартăн-и? (*Урамра юрă сасси.*)

**Елюк.** Шăвартăм.

**Пăрчкан** (*кĕпине çуса*). Ĕнене мĕн патăн?

**Елюк.** Пахчаран курăк çулса патăм.

**Пăрчкан.** Юрĕ, апла пулсан. Ĕнтĕ кайса çывăрах. (*Хапха патнелле кайма тăрать, юрă сасси хытăрах илтĕнет. „Çырма хĕрне...“ юрра юрлаççĕ.*)

**Елюк.** Анне, ман пĕртте ыйăх килмест.

**Пăрчкан.** Мĕн тата?

**Елюк.** Эпĕ урама каятăп...

**Пăрчкан.** Мĕн? Ан чупса çӳренĕ пултăр.

**Елюк.** Анне, хĕрсем пурте урамра, юрăсем юрлаççĕ, епле манăн пĕчченех кайса çывăрас?

**Пăрчкан.** Ан пелке, чупкăн! Пĕр-пĕр асăнмалăх тупăн-ха хуна валли.

**Елюк.** Анне, мĕншĕн апла калатăн?

**Пăрчкан.** Эпĕ санран аслăрах-и, аслăрах

мар-и? Итле-ха. Мĕншĕн эсĕ ман сăмахран тухатăн? Эпĕ хуна çуратнă аннў мар пулсан та, ман саншăн чĕре ыратать.

**Елюк.** Анне, эсĕ яланах çапла калатăн.

**Пăрчкан.** Эх, Елюк! Вилсе кайăп та кураймăп çав: „Ёлĕк анне çапла калатчĕ", тесе сахал мар астăвăн, вара.

**Елюк.** Анне, темскер çинчен калаçатăн эсĕ, эпĕ ăнланаймастăп.

**Пăрчкан.** Тĕрĕс каларăн. Чăнах та нимĕн те пĕлместĕн эсĕ. Çипуç ырă, хырăм тутă, тата мĕн кирлĕ?

**Елюк.** Мана ним те кирлĕ мар.

**Пăрчкан.** Ухмах! Аçупа аннў камшăн тăрăшнă тата? Пирĕн пурлăх кăштах пур ĕнтĕ. Çĕр тара илсе пухман ăна. Аçу вилсен пĕтĕмпех хам пуç çине юлчĕ те, çурăма лайăх тарлаттарчĕ.

**Елюк.** Анне, мĕншĕн çиленетĕн? Эпĕ сан сăмахунтан пĕртте тухмастăп-çке? Эпĕ хĕрсемпе выляма çеç каятăп.

**Пăрчкан.** Эх, ачам, эпĕ сана хуна юратса калатăп. Ман шухăшпа сана ун пек тухса çӳреме питех килĕшмест.

**Елюк.** Анне, эпир вылятпăр анчах. Каятăп, анне?

**Пăрчкан.** Каях эппин. Чармастăп. (*Алкум-*

*нелле утса каять. Елюк кайма тăрсан*). Елюк! Асту, Ванюкран аяккалларах пăрăн!

**Елюк.** Мĕншĕн, анне? Ванюк питĕ ырă каччă-çке?

**Пăрчкан.** Юратмастăп эпĕ сан Ванюкна.

## 3-мĕш курăнни.

Йăскар хапхаран кĕрет.

**Йăскар.** Ман килес, Пăрчкан йăмăк.

**Пăрчкан.** Ах, килех, килех, Йăскар акай. Малалла ирт.

**Йăскар.** Килнĕскер—иртетпĕр. Сывă-и, çӳретĕр-и?

**Пăрчкан.** Çӳретпĕр-ха хуллен. Эсĕ ху лайăх-и? (*Ал параççĕ*).

**Йăскар** (*Елюка*). Сывă-и, хĕрĕм? (*Ал параççĕ.*)

**Елюк.** Анне, эпĕ каятăп.

**Пăрчкан.** Кай та, час таврăн.

**Елюк.** Халех килетĕп. (*Урамра юрлама чарăнаççĕ.*)

**Йăскар.** Çӳрех, хĕрĕм, çӳрех. Сирĕн çӳремесĕр камăн çӳрес. Акă эпир, ват супнăсем, çĕрнĕ кăмпа пекех, пĕр ларсан вырăнтан та тапранаймастпăр. Çӳрех, хĕрĕм, сирĕн çӳрес пулать. (*Елюк тухса каять.*)

## 4-мӗш курӑнни

Йӑскарпа Пӑрчкан.

**Йӑскар.** Пӑрчкан йӑмӑк, ача-пӑчасен ҫӳрес те пулать, тетӗп. Эпир хамӑр ача чухне сахалах ҫӳремен. (*Нюххи тапак туртать.*)

**Пӑрчкан.** Ача-пӑчах пулнӑ ҫав.

**Йӑскар.** Ах, Пӑрчкан йӑмӑк, ӗлӗкхи пурнӑҫа лайӑх иртте́ртӗмӗр те. Мӗн чухлӗ ҫӳренӗ, мӗн чухлӗ ӗҫнӗ, ереке юхтарнӑ. Ӗҫкӗ чухне—ӗҫкӗре, туй чухне—туйра. Ҫук, халӗ ку енӗпе ӗлӗкхи чухлӗ пултараймаҫҫӗ. Тепӗр тесен, хам та эпӗ, ӗлӗкхипе танлаштарсан, упӑте пек анчах тӑрса юлнӑ.

**Пӑрчкан.** Эсӗ, акай, апла мар-ха. Лар-ха эсӗ—эпӗ сӑра ӑсса тухам.

**Йӑскар.** Ах, ан чӑрман, Пӑрчкан йӑмӑк. Эпӗ кӗрсе анчах курас терӗм.

**Пӑрчкан.** И, Йӑскар акай, эпӗ часах ӑсса тухатӑп. Сана пӗрре тахҫанах ӗҫтерес тенӗччӗ. (*Витре илсе тухса каять*)

## 5-мӗш курӑнни.

Йӑскар пӗчченех.

**Йӑскар.** Э, вӑрманти тӑмана. Пӗрре мар, ҫирӗм те ӗҫтерӗн халӗ. Пӗлетӗп эпӗ сан шухӑшусене, витӗрех куратӑп. Хӗре часрах хӑпӑтса кӑларса, ху пӗччен хуҫа пулса юлас шӑн эсӗ. Унтан вара, упӑшка кӗртесшӗн. Ха,

вата кёлетке пулсан та, упăшкапа выляса пурăнасшăн. Çавă ĕнтĕ: мăнтăр темскер те тутарĕ. Хушăн пулсан, кирек-мĕн хăтлан. Мана мĕн? Ман ĕçес те çиес, çиййĕнчен укçа илес. Ах, паян пыр ярăнатчĕ-ха. Ёнтĕ пехлетĕп. (*Урамра вăййăра юрлани илтĕнет,— „Шăлтăр-шăлтăр урапа" юрра юрлаççĕ*).

### 6-мĕш курăнни

Йăскар. Пăрчкан кĕрет.

**Пăрчкан.** Акă эпĕ, килтĕм те...

**Йăскар.** Ма чăрманатăн-ха. Ман пĕртте ĕçес килмест.

**Пăрчкан.** Ай, мĕн калаçатăн, Йăскар акай. Епле вара эпĕ сана хам пўртрен хăна тумасăр кăларса ярăп? (*Сăра тултарать. Малтан хăй ĕçет, унтан Йăскара парать.*)

**Йăскар.** И, Пăрчкан йăмăк, кăçал ĕçни... Çăвар ăшĕ те шăршланса карĕ пулĕ. Ёçетпĕр, ĕçетпĕр—таçта каять, тепле хырăм чăтать. (*Нюххи туртать.*)

**Пăрчкан.** Сăри сивĕрех пулмарĕ-ши?

**Йăскар.** Ман хырăм ăна тиркемест. Ман хăвăлĕ асланнă мар-и? (*Ёçет.*) Сăри питĕ тутлă... пыл пекех. Тавăсси, э астуман та... (*Сăх-сăхать.*) Пăрчкан йăмăк!

**Пăрчкан.** Тавах-ха, кăçал курсах та кайман-ха. Сана пĕрре питĕ хытă ĕçтерес тенĕччĕ. (*Ёçтерет.*) Çтаппан арăмĕ мĕнле?

**Йăскар.** Тирĕпе шăмми анчах юлнă. Нумая пултараймасть. Чĕм татăлнă.

**Пăрчкан.** Мĕнле чир унăн?

**Йăскар.** Çтаппан мăшкăлне тўссе йытă выранĕнче пурăн-ха, тата пирĕн хĕрарăмăн телейĕ те çавнашкал ĕнтĕ. Патак хыççăн, ачана чипер çуратма пултараймасан... вара этем пĕтĕмпех пăрахăçа тухать.

**Пăрчкан.** Çтаппанĕ хăй мĕн?

**Йăскар.** Çтаппанĕ-и?

**Пăрчкан.** Е-е...

**Йăскар.** Çтаппан вăл урăх арăм шырать.

**Пăрчкан.** Чăнах-и?

**Йăскар.** Суймастăп.

**Пăрчкан.** Ĕç-ха... Эпĕ сана тахçанах пĕр сăмах калас тенĕччĕ.

**Йăскар.** Калах, сăмаххи пулсан. Эпĕ никама та калас çук.

**Пăрчкан.** Мĕн... Çтаппан мана килĕштермĕ-ши?

**Йăскар.** Ха.. Акă мĕн! Ай, тата шухăш кĕчĕ?

**Пăрчкан.** Темскер... шухăш кĕчĕ пек çав.

**Йăскар.** Мм... апла. Анчах...

**Пăрчкан.** Мĕн тата?

**Йăскар.** Карт тухмасть.

**Пăрчкан.** Эпĕ сана ахаль тумăп, Йăскар акай. (*Урамра юрлама чарăнаççĕ.*)

**Йăскар.** Ан çилен, сарçу катса çитерсен те пулмасть. Ху шухăшла: эсĕ тепĕр пилĕк çултан ватăлса ларатăн. Çтаппан халех ватăлас çук. Сана урăх тупса парăп. Кама килĕштеретĕн?

**Пăрчкан.** Çтаппан мар пулсан, мана ытти кирлĕ мар. Çтаппан пурлăхлă этем, ялта ятлă çын, унпа пĕрле пурлăх тытма аван пулĕ.

**Йăскар.** Э, вăл çаплах та-ха ĕнтĕ. Ах, тытха, ĕçрĕм ĕнтĕ. (*Урамра юрлани илтĕнет,— „Пахча кайăк" юрра юрлаççĕ.*)

**Пăрчкан.** И, ĕç-ха, ĕç! Паллах, пирĕн Елюксем çӳреççĕ ĕнтĕ. Ванюк сыпăçнă та, уйăрăлма та пĕлмест. Ăçта Елюк—вăл унталла. Те качча илесшĕн тата хăйĕн ухмах ăсĕпе?

**Йăскар.** И, Ванюк Елюка тĕлĕкре те кураймĕ. Çавах та эсĕ вĕсене сыхла. Каччăпа хĕр вăл—кушакпа çу, тенĕ. Тавара пăссан, илекен пулмĕ.

**Пăрчкан.** Эпĕ те çапла шухăшлатăп çав: хĕр ятне пăсасси ним те мар, тетĕп. Чăнах та кайса сыхлас пулĕ. Эсĕ, акай, мана ан пăх, хăвах тултарса ĕç.

**Йăскар.** Тытах. Мана çитрĕ. Ĕнтĕ кăштах выртса канасчĕ. Ватă шăмшак мар-и? Йĕпене сиссенех туртма пуçлать.

**Пăрчкан.** Канах, канах. Эпĕ Елюка кайса шырам-ха. (*Каять.*)

## 7-мӗш курӑнни.

Йӑскар пӗччен.

**Йӑскар**. Каях, ара. Канма ӑна эпир сансӑр пуҫсӑр та пӗлетпӗр. (*Сӑра тултарса ӗҫет. Ӗҫсе ярсан, витри тӗпне пӑхать.*) Якалчӗ... (*Урамра хытӑрах юрлани илтӗнет.*) Юрлӑрах, юрлӑрах. Ӑна эпӗ те юрлатӑп. (*Хуллен юрлать:* „Сар кайӑк, сар кайӑк, сар кайӑкӑн савнасси" *т. ыт. те. Вырӑн ҫине кайса выртать. Ыйӑхра пӗр икӗ хут юрласа илет.*)

## 8-мӗш курӑнни.

Елюк кӗрет. Ванюк урамра тӑрса юлать. Йӑскар выртать

**Елюк** (*урлӑ-пирлӗ пӑхкаласа*). Ванюк, Ванюк! Ан кай, ан кай! Кӗр, кунта никам та ҫук.

## 9-мӗш курӑнни.

Елюк. Ванюк кӗрет. Йӑскар выртать.

**Ванюк**. Чӑнах никам та ҫук-и?
**Елюк**. Никам та.
**Ванюк**. Тусӑм! (*Елюка ыталать.*)
**Елюк**. Ай, намӑс...
**Ванюк**. Эпӗ сана юрататӑп...
**Елюк**. Ванюк, эсӗ мана манмӑн-и?
**Ванюк**. Аҫтан манас ман сана? Эсӗ манӑн ҫутӑ хӗвелӗм-ҫке?

**Елюк.** Чăнах-и?

**Ванюк** Уйăхшăн та, хĕвелшĕн те. (*Йăскар вăранса пуçне çĕклет.*) Елюк!

**Елюк.** М...

**Ванюк.** Чуптутар?

**Елюк.** Ай! (*Вăтанса Ванюк кăкăрĕ çине пуçне чикет.*)

**Ванюк.** Елюк... Елюк...

**Елюк.** (*пуçне ерипен çĕклесе, Ванюка куç-ран пăхать*).

**Ванюк** (*Елюка ыталаса чуптăвать*).

**Йăскар** (*шăналăка уçса пăхать*). А... Эпĕ мĕн, тетĕп? Вăкăр пăрăва çуллать-мĕн.

**Ванюк** (*пуçне вăрт çĕклет*). Кам пур кун-та? Мана темĕскерле сасă илтĕнчĕ?

**Елюк.** Эсĕ йăнăшрăн. Никам та çук. Ла-рар-и?

**Ванюк.** Ларар. (*Ларaççĕ.*) Елюк, эсĕ хитре.

**Елюк.** Эсĕ эпĕ хитрине тин куртăн-и?

**Ванюк.** Тин мар. Эпĕ сана пĕчĕкренех юрататăп. Эсĕ маншăн питĕ илемлĕ.

**Елюк.** Эсĕ те маншăн питĕ илемлĕ.

**Ванюк.** Ĕлĕк атте калатчĕ: — çынна тӳрех куçран пăх, тетчĕ, куçĕ санран тарса ку-шак-кайăк пек пытанмасть пулсан, — вăл вара санăн çынну, — тетчĕ.

**Елюк.** Ха-ха-ха! Епле кулăшла калаçатăн эсĕ, Ванюк? Ман куçăмсем мĕнле пек тата?

**Ванюк.** Санăн çутă çăлтăр пек. Эпĕ ку-

нĕн-çĕрĕн сана куçран пăхса ларăттăмччĕ, вĕсем çăл пек тарăн. (*Чуптăвать.*) А...

**Елюк.** Ванюк, Ванюк, мĕн пулчĕ сана? Çиллентĕн-им?

**Ванюк** (*чĕнмест*).

**Елюк** (*Ванюка куçĕнчен пăхса*). Ванюк, эсĕ ÿсĕрĕлсе кайнă пек пултăн?

**Ванюк.** Санăн çÿхе туту ÿсĕртсе ячĕ мана Эх, Елюк! Сана çиленме манăн вăйăм çитмест. Эпĕ сана акă çапла ал çине çĕклĕттĕм те, пĕтĕм тĕнчене кăтартăттăм: „Çакă манăн“, тейĕттĕм. Ах, савнă Елюк, питĕ хытă юрататăп-çке эпĕ сана!

**Елюк.** Хăçан качча илĕн эсĕ мана?

**Ванюк.** Хăçан? Кĕçĕрех! Пĕлтĕн-и?

**Елюк.** Кĕçĕрех ытла хăвăрт. Эпĕ хатĕрленмен.

**Ванюк.** Кĕçĕрех, чунăм, кĕçĕрех! (*Ыталать.*)

**Елюк.** Юрĕ апла пулсан.

## 10-мĕш курăнни.

Елюкпа Ванюк. Йăскар, Пăрчкан, ун хыççăн Çтаппан тата Муçça кĕреççĕ.

Елюкпа Ванюк пĕр-пĕринчен хăвăрт уйăрлаççĕ. Елюк вăтанса, питне саппунпа хуплать. Ванюк пуçне çĕклесе мĕн пулассине кĕтсе тăрать. Çтаппан алăкран кĕрсе унтах тăрать. Йăскар тăрса ларать, нюхххи шăршлать. Муçça унта-кунта çавăрăнкаласа, сĕтел çывăхне пырать,

сăра витри çине ăшшăн пăхма тытăнать. Пăрчкан Елюкă хĕнеме пуçлать.

**Пăрчкан.** Эсĕ каччăпа-и? Эсĕ каччăпа-и? Ах, лиска йытă! Акă сана, акă сана.

**Елюк.** Ай, ан çап, анне!

**Йăскар.** Ап-чăххуǃ Ап-чăх!..

**Муççа.** Айуй! Ман тапак пуракки те кунта тем?

**Йăскар.** Эсĕ тата мĕн шыраса çÿретĕн, тапак пуракĕн хупăлчийĕ?

**Ванюк.** Пăрчкан акай, ан тив эсĕ Елюка.

**Пăрчкан.** Сана тата мĕн кирлĕ? Эсĕ унăн упăшки-им?

**Елюк.** Анне, ан ятлаç эсĕ Ванюка...

**Пăрчкан.** Тата кирлĕ-и? Ах, сучка! Епле вĕсем пĕр-пĕрин хутне кĕреççĕ.

**Ванюк.** Пăрчкан акай, ан тив Елюка. Элĕ ăна качча илетĕп. (*Пăрчканран хуллине туртса илет те ывăтса ярать.*)

**Пăрчкан.** А, эсĕ унăн хутне кĕретĕн-и? Чим, эпĕ сана, качча илтерем! (*Алкум патĕнчен кисĕп илет*). Тухса кай ман килĕмрен, тухса кай! Тухса кай!

**Йăскар.** Пăрчкан йăмăк, асту!

**Муççа.** Пăрчкан йăмăк, кисĕпне пăрахах! (*Муççапа Йăскар Пăрчканран кисĕпне туртса илеççĕ.*)

**Пăрчкан.** Ах, турă, вĕсем пурте мана хи-

рӗҫ! Ах, тур! Ҫтаппан ывӑлсем, Ҫтаппан ывӑлсем!

**Ҫтаппан** (*урай варне, хӑйне мӑнна хурса, йывӑррӑн утса тухать*). Ванюк! Кай тухса!

**Ванюк.** Хуллен.

**Ҫтаппан.** Кай тухса! Унсӑрӑн эпӗ сана халех кантӑр тылланӑ пек хуҫкаласа пӑрахӑп.

**Муҫҫа.** Ванюк ывӑлӑм, каях эсӗ, каях, ҫапӑ-ҫу пулӗ, каях.

**Ванюк** (*Ҫтаппана пӳрнипе юнаса*). Эй, халӑх юнне ӗҫекен вӑрӑм туна! Асту! Эпӗ ҫак килте сан ҫине ал хурса алла та вараламастӑп, анчах ирӗкре тӗл пулсан, санпа кӗрешме хатӗр. Акӑ ҫакӑ чӑмӑр пуҫунтан тивсен— е пуҫу саланса кайӗ, е ӗмӗрлӗхе сӗрӗм тивсе юлӗ.

**Ҫтаппан.** Ну!.. (*Ҫапма аллине ҫӗклет*).

**Ванюк.** Ан тапран вырӑнтан!

**Пӑрчкан. Тухса** кай ман килтен, тухса кай! (*Елюка*). Эсӗ те тухса хӑп!

**Ванюк.** Кайӑпӑр, каяс пулсан. Анчах эпӗ кунтан пӗччен каймастӑп. Айта, Елюк, пӗрле. Чӑнах та эпир ҫак килтен тухса кайӑпӑр.

**Елюк.** Ӑҫта кайӑпӑр, Ванюк?

**Ванюк.** Ман пата. Пурӗпӗр, иксӗмӗр пӗр мӑшӑр пулас пулать.

**Пӑрчкан.** А-ах, шуйттансем! Пӗтерчӗҫ! (*Йӗрет*).

**Йӑскар.** Апла мар-ха, Ванюк шӑллӑм! Апла

юрамĕ. Эпир акă çапла тăвăпăр: эсĕ, хĕрĕм, венчетчен ман патăмра пурăн, кайран вара, Ванюк пўртне сана туйпа ăсатăпăр.

**Муççа.** Ха, эпĕ те хĕр паратăп! „Ай-люн, май-люн, манăн варли лутра хурăн!“

**Йăскар.** Кайăпăр, ачасем. Япалисене кайран та илсе кайăпăр.

**Пăрчкан.** Тухса хăпăрах, вăрă-хурахсем! Мана сирĕн япаларсем кирлĕ мар! (*Япалисене кăларса ывăтма тăрать.*)

**Ванюк.** Айта, Елюк!

**Елюк.** Сывă пул, çуратнă кил çурт!

**Пăрчкан.** Кайăрах, пĕтĕр, çĕр айнех путăр! (*Ванюкпа Елюк, вĕсем хыçĕнчен Йăскарпа Муççа тухса каяççĕ.*)

## 11-мĕш курăнни.

Пăрчкан, Çтаппан.

**Пăрчкан.** Ах, мĕн турĕç мана ку вăрă-хурахсем.

**Çтаппан.** Кăларсах пемеллеччĕ те вĕсене кăштах тăхтас, терĕм.

**Пăрчкан.** Ах, ма кăларса пемерĕнех вĕсене?

**Çтаппан.** Ан кулян, кирлĕ пулсан, эпĕ вĕсене кайран та тытса хĕнеме пултаратăп.

**Пăрчкан.** Ах, Çтаппан ывăлсем, тытса хĕне вĕсене тархасшăн. Ванюкне пуçне çапса

шăтар, Йăскарне кутĕнчен тап, Муççине тата тытса силлесен те çитĕ. Эпĕ сана уншăн пулăштух ĕçтерĕп.

**Çтаппан.** Пулăштуха ăна эпир хамăр та тупатпăр, а санăн... (*Çывăхарах пырать.*) Ман валли... кăшт тутлăраххи пулмалла-а?..

**Пăрчкан** (*пĕлмен пек пулса*). Мĕн-ши вăл тутлăраххи?

**Çтаппан.** Акă çакă (*Пăрчкана ярса тытать*).

**Пăрчкан** (*вĕçернесшĕн пулса*). Ай... Юрамасть!

**Çтаппан.** Мĕншĕн? Эсĕ ман кăмăла питĕ каятăн, кăштах выляса пăхма юрĕ-çке?

**Пăрчкан.** Вылямa? Эпĕ сан валли, вылямa кушак çури мар-çке? Намăса ăçта хурас? Эпĕ ĕнтĕ тин хĕр мар, ватăлнă.

**Çтаппан.** Э, намăс вăл тĕтĕм мар, куçа çимест. Ватти-çамрăкки—эпĕ питех уямастăп. Çамрăк хĕрсем вĕсем пиçсе çитмен çырла пек анчах. Эсĕ чăмăр, çемçе, çавăнпа сана чуптума та авантарах пулĕ.

**Пăрчкан.** Санăн, чуптума, хăвăн арăму пур та?

**Çтаппан.** Эх, арăм!.. Манăн, ăна курсан, хăсас килет.

**Пăрчкан.** Ха-ха-ха! Ан култарах. Анчах ман упăшка вилни виçĕ çул. Çав виçĕ çул хушшинче эпĕ вылямa мар, вăл шухăша пуç-

ра та тытман, (*Аяккалла*). Ах, чӗре сиксех тухать, мӗн тӑвас?

**Ҫтаппан.** Шухӑш тытман пулсан, халь тытма та каях мар. Тытманни вӑл тата лайӑхрах.

**Пӑрчкан** (*шӑппӑн*). Ҫынсем пӗлсен?.. А?.. Намӑс?..

**Ҫтаппан.** Кунта никам та ҫук, урамра тӗттӗм.

**Пӑрчкан.** Чӑнах та кунта никам та ҫук... тӗттӗм... Ах, мӗнле ҫын эсӗ.

**Ҫтаппан.** Ан шарла... (*Пӑрчкана ярса тытать*).

## 12-мӗш курӑнни

Ҫавсемех тата Муҫҫа

**Муҫҫа.** Ман кунта калпак юлнӑ пулас та...

**Ҫтаппан.** Муҫҫа! Тепре шӑл шуррине уҫатӑн пулсан, халех кӑларса перетӗп.

**Муҫҫа.** Э, эпӗ хамах, хамах каятӑп. Ҫтаппан шӑллӑм, хамах каятӑп.

**Ҫтаппан.** Ш-шст! (*Муҫҫа тухса тарать.*)

ЧАРШАВ.

## ИККĔМĔШ КАРТИНА

(Ванюк патĕнче)

### І-мĕш куранни

Елюкпа Ванюк.

**Елюк** (*сăпка сиктерет, юрлать*).

Нянине—тунине,
Ачине—урине...
Тăппи-таппи çӳреме,
Кăрăс-кăрăс тутарма...
Амăшне—пуçне,
Ачине – çупатне,
Вăштăр-вăштăр вĕçтерме,
Лăпăш-лăпăш сиктерме...

**Ванюк** (*картишĕнче çава аври лартать*). Хире каяччен çитерен пуль, Елюк, хатĕрле-ха! Ачине унччен эпĕ хам та сиктерĕп.

**Елюк.** Юрĕ, Ванюк, пăх-ха; вăл пĕртте çывăрмасть, куçне уçнă та, пăхса выртать.

**Ванюк.** Ăçта-ха вăл? (*Çавине пӳрт кĕтессине тăратать.*) Ха, чăнах: епле вăл чарлаттарса пăхса выртать. А, Елюк, эсĕ апат хатĕрле-ха, хатĕрле!

**Елюк.** Халех. Апачĕ те ним те çук та, мĕнех хатĕрлес-ши?

**Ванюк.** Кăвас пĕтни-ха вара?

**Елюк.** Пур кăштах.

**Ванюк.** Кӑвас ҫине сухан яр. А, ку шӑхличи валли—качака сӗчӗ. Вара ҫитрӗ те пире.

**Елюк.** Юрӗ. Ҫапла тӑвӑпӑр. (*Чашӑк илсе тухать.*)

**Ванюк.** Мӗн туса выртатӑн-ха эсӗ, улпут? Ха, аллисене чӑсать, тата! Маттур, маттур! Ҫывӑрах, ывӑлӑм, ҫывӑрах!

## 2-мӗш курӑнни.

Ванюк, Пӑрчкан кӗрет.

**Пӑрчкан.** Ман килес, ан ятлӑр, пурӑнаҫҫи?

**Ванюк.** Вилме шухӑшламан-ха. Ху мӗнле пурӑнатӑн?

**Пӑрчкан.** Пурӑнкалас пулать ирӗксӗр, мӗн тӑвас тетӗн.

**Ванюк** (*пуҫне ҫӗклет*). Мӗнле ирӗксӗр? Пуҫна ма ҫыхрӑн?

**Пӑрчкан.** Ах, ан калах, Ванюк, Ҫтаппан ҫапса шӑтарчӗ.

**Ванюк.** Эхе! Тыткалама пӗлет пулас, мур, пӗрре алла лексен. Астӑватни, пӗрре сан патӑнта мана тытса хӗнеме тӑчӗ? Анчах ури чӗтрерӗ пулмалла—ҫыхланмарӗ. Ҫавах эпӗ ӑна маттур пулӗ, тесе шухӑшлатӑп.

**Пӑрчкан.** Мӗн пулнине каҫарах, Ванюк кӗрӳ. Мана, ухмах хӗрарӑма, улталарӗ вӑл, усал. Ман пӗтӗм пурлӑхӑма хӑй аллине пуҫтарса илчӗ. Хама тарҫӑ туса хучӗ. Сӑмах чӗнсенех

хăвалать, хĕнет. Арманĕнче тарçă, килĕнче тарçă, хăй ĕçсе çӳрет, арăмĕ ĕçлемест... Йăскарсене ĕçлеттерет...

**Ванюк.** Ан тив, ăна пурлăх чăрмантарас çук.

**Пăрчкан.** И, арăмне çаплах çĕмĕрет. Вырăнтан тăма та памасть. Кăшт ура çине тăрса çӳреме пуçласанах хĕнеме тытăнать.

**Ванюк.** Ха, упа хăраххи!

**Пăрчкан.** Каяс пуль.

**Ванюк.** Ма лармастăн?

**Пăрчкан.** Çтаппана шыратăп... Сирĕн пата килсе ларман-ши, терĕм. Çавăнпа килсе пăхас, терĕм.

**Ванюк.** Çук, Çтаппан пирĕн пата килмен. Мĕн-ма кунта килес унăн?

**Пăрчкан.** Елюк пуçне çавăратăп, тесе мухтанать, тет.

**Ванюк.** Ха-ха-ха! Çавăрттарăп эпĕ ăна лайăх, пĕрре ярса илсен.

**Пăрчкан.** Йытăлансан, ăна никам та чараймĕ.

### 3-мĕш курăнни.

Ванюк, Пăрчкан, Елюк.

**Елюк.** Ачи çывăрать-и?

**Ванюк.** Çывăрать.

**Елюк.** Анне, чипер çӳретни?

**Пăрчкан.** Эпир çӳрессе çӳретпĕр те-ха.

Паян кантуртан килнӗ, Ванюкпа пӗр çултисене чӗнеççӗ, тет.

**Ванюк.** Килсе чӗнмен халӗ, унччен апат çиер.

**Пăрчкан.** Эпӗ каям-ха, сывă пулăр!

**Елюк.** Анне, апат çиме юл.

**Ванюк.** Апат çиме лар! Çитӗ ӗнтӗ, малашне пӗр-пӗрне çиленмесӗр пурăнăпăр.

**Пăрчкан.** Ларса çиес-им апла?

**Ванюкпа Елюк.** Ларса çи! Ларса çи!

**Елюк.** Çимесӗр. (*Çиме лараççӗ. Елюк çимесӗр Ванюк çине пăхса ларать.*)

**Ванюк.** Ма çиместӗн эсӗ?

**Елюк.** Сана салтака илсе каясран хăратăп.

**Ванюк.** Ан хăра, эпир кайсан, вăрçи те пӗтет.

**Пăрчкан.** Пӗттӗрччӗ вăл, вăрçи. Вара кайсан та пуç пӗтмӗччӗ. (*Шаккаççӗ.*)

**Сасă.** Килте-и?

**Ванюк.** Кунта, кунта! Килте! Кам вăл? Çытăр мучей, эсӗ мар-и?

**Сасă.** Эпӗ.

**Ванюк.** Кӗр кунта.

**Сăсă.** Кӗрес те пулӗ.

**Елюк.** Ванюк, мӗншӗн килнӗ вăл?

**Ванюк** (*шухăша кайса*). Темме.

**Елюк.** Ах турă, старăста... (*Пурте сӗтел хушшинчен тухаççӗ. Пăрчкан апат пуçтарма тытăнать.*)

## 4-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех тата старӑста.

**Старӑста** (*кӗрет*). Ман килес, вӑй патӑр.

**Ванюк.** Килех! Вырӑн тупкаласа ларччӗ.

**Старӑста** (*Ванюка ал тытать*). Лайӑх пурнаҫҫӗ-и, ушкӑнӗпе?

**Ванюк.** Тавтапуҫ. Пурӑнатпӑр-ха хуллен. Ху лайӑх-и?

**Старӑста.** Ҫӳретпӗр. Пирӗн ӗҫӗ ҫавнашкал та...

**Елюк.** Мӗн тата?

**Старӑста.** Ҫавнашкал ӗнтӗ. Паян кантура каяс пулать, ыран приюма...

**Елюк.** Ах!..

**Ванюк.** Елюк, ан макӑр-ха, тархасшӑн... (*Ҫавине тытать.*) Авӑ сан... выртать. Эсӗ ҫавна пӑх... Эпир ӗнтӗ... карӑмӑр... (*Питне аллипе хуплать. Урамра салтак юрри илтӗнет. Юрлакансем Ванюк пӳрчӗ ҫумнелле килеҫҫӗ.*)

**Старӑста.** Ӑна ӗнтӗ, Ванюк шӑллӑм, макӑрса та ним те тӑвас ҫук. Ӗҫӗ ҫапла та... Ну, эпӗ каям-ха... Ман тата ик-виҫ ҫӗре ҫитес пулать. Сывӑ пулӑр. (*Тухса каять*).

**Ванюк.** Сывӑ пул, мучей. (*Ҫавине кӗтессе тӑрататъ*).

## 5-мĕш курăнни.

Палляпа салтак ачисем кĕреççĕ.

**Палля.** Сывă-и ушкăнпе?

**Ванюк.** Сывах-ха, юлташсем! Ĕçтермеллеччĕ те юлташсене, сăри пулмарĕ.

**Палля.** Сăрапа тăрса нумай пулать, Ванюк. Эпир кайма тухнă. Сана пĕрле илсе каяс терĕмĕр.

**Салтак ачисем** (*юрлаççĕ*).

1. Çăлтăр витĕр çул курăнать, (2 *хут*)
   Эпир каяс çул пуль çав... (2 *хут*)
2. Уйăх витĕр çул курăнать, (2 *хут*)
   Эпир çўрес çул пуль çав... (2 *хут*)

**Ванюк.** Ан макăр-ха, Елюк чунăм. Кантур инçех мар, каçчен кайса килĕпĕр...

**Палля.** Каяс та пулать ĕнтĕ.

**Ванюк.** Кайăпăр. (*Юрлаççĕ.*)

1. Мăн çул урлă каçнă чух (2 *хут*)
   Яштак хурăн хуçăлчĕ,
   Симĕс çулçи тăкăнчĕ...
2. Тăвансенчен уйрăлнă чух (2 *хут*)
   Яштак пĕвĕм авăнчĕ,
   Çемçе кăмăл хуçăлчĕ...

**Палля.** Ну, каяр, Ванюк!

**Ванюк.** Кайăпăр. (*Пурте пĕрлешсе юрлаççĕ*).

**Ванюк.** Эх, карăмăр... (*Каяççĕ. Елюк ăсатма тухать, Пăрчкан сăпка патне юлать.*)

**Елюк.** Ваню-ук, часрах таврăн!

## 6-мĕш курăнни.

Елюк. Пăрчкан

**Елюк.** (*Кĕрет*). Карĕç!..

**Пăрчкан.** Макăрса та ним тăвас çук.

**Елюк.** Сана апла калама ним те мар. Ман мĕнле чăтас?

**Пăрчкан.** Эпĕ каям-ха. Сыв пул. Ан макăр! Макăрса та ним тăвас çук... (*Тухса каять*).

**Елюк.** Сыв пул!..

## 7-мĕш курăнни.

Елюк пĕчченех.

**Елюк.** Чĕре паçăрах сисрĕ. Турă çавăрса килтĕрех. Пĕччен пулсан, тата тепĕр майлăччĕ... (*Сăпка çине пăхса.*) Çакăншăн чун хăрать... (*Сăпка юррине хуллен юрлать.*)

Нянине—тунине,
Ачине—урине...

ЧАРШАВ.

## ВИҪҪӖМӖШ КАРТИНА

(Ҫавӑнтах, пысӑк антрактсӑрах пуҫлама юрать.)

### 1-мӗш курӑнни.

Елюкпа Ҫтаппан.

**Ҫтаппан** (*алӑкра*). Кӗме юрать-и? (*Кӗрет.*)

**Елюк.** Ванюксем карӗҫ...

**Ҫтаппан.** Килнӗ-килменех ан хӑваласам. Куртӑм кайнине. Ҫавӑнпа, сана хӗрхенсе кӗтӗм.

**Елюк.** Мана хӗрхенекен сансӑрах пур.

**Ҫтаппан.** Сӑмаххусем санӑн хӑватлӑ. Эпӗ ун пеккине юрататӑп.

**Елюк.** Мӗн кирлӗ сана?

**Ҫтаппан.** Ан ятла, Елюк! Нимӗн те кирлӗ мар. Сана анчах кӗрсе курас, терӗм.

**Елюк.** Эсӗ ӳсӗр!

**Ҫтаппан.** Пулӗ те пулӗ. Анчах ӗҫнӗшӗн айӑп тӑвӑн-и эсӗ мана?

**Елюк.** Санпа калаҫса тӑма ман кӑмӑлӑм ҫук. Кала мӗн кирлине!

**Ҫтаппан.** Лӑплан, лӑплан, Елюк. Мана ытлашши нимӗн те кирлӗ мар. (*Улталаса.*) Эх, Елюк! Ниҫта пырсан та эпӗ хам валли канӑҫлӑх тупаймастӑп. Эсӗ хӗр чухне сана курсан, манӑн чун хӗпӗртетчӗ. Халӗ, сана ҫын арӑмӗ вырӑнче куратӑп та, манӑн ӑш ҫурӑлсах тухать.

**Елюк.** Эй, путсӗр ултавҫӑ! Тӑван арӑмна

хӗне кӗртсе ятӑн, ман аннепе ҫыпӑҫса ӑна намӑс кӑтартрӑн. Ҫитӗ сана, мана ан тив! Пӑрах хӑвӑн ӳсӗр шухӑшусене!

**Ҫтаппан** (*суйса, кулакла тилӗленсе*). Эпӗ ӳсӗр мар, Елюк, ӗҫнӗ пулсан та, ӳсӗр мар. Ман пуҫ урӑ чухнехинчен те урӑрах. Эпӗ хам кӑкӑра акӑ ҫапла уҫса кӑтартма пултарсан, эсӗ мана кӑштах та пулсан хӗрхенӗттӗнччӗ. Эсӗ калатӑн: „арӑму" тетӗн, „анне", тетӗн. Ман арӑм ман каччӑ ӗмӗрне типӗтрӗ. Хӗне карӗ те, пӑчӑкӑпа сӗрнӗ пекех вӑрҫма пуҫларӗ. Вара эпӗ хам килтен хам сивӗнтӗм. Сан аннӳ ҫумне те ҫавӑнпа пырса ҫыхлантӑм. Ку вара тата арӑмран та усалтарах пулчӗ. Хӑй ватӑ пирки, тытӑнчӗ вара кӗвӗҫме, аяккалла пӑхма та памасть, кӗвӗҫет. „Эсӗ, тет, мӗн куҫна чаркаласа пыратӑн, тет, мӑнтӑр хӗрсене шыратӑн-им? тет. Мӗн тек урамалла пӑхатӑн", тет. Вара, чун тӑвӑрланса ҫитрӗ те, чӑтаймарӑм, тухса тартӑм санӑн аннӳ патӗнчен. Вара ман чӗре тата ытларах суранланса карӗ. Ҫав тӗлех пӗрре сана чиркӳре турра кӗл-тунине куртӑм. Мана эсӗ туррӑн таса ангелӗ пек курӑнса карӑн. Ҫавӑнтан пуҫласа, эсӗ ман чӗрене ӑмӑрткайӑк чӗрнисемпе чавса илнӗ пек (*аллипе туса кӑтартать*.) кӗрсе лартӑн. Ҫавӑнтан вара ӗҫме те тытӑнтӑм. Юратӑн-и эсӗ мана?

**Елюк.** Эсӗ хӑрушӑ этем. Сан сӑмаххусене

итлесе сивĕсĕр шăнса каймалла. Эпир çакă начар пўртре те телейлĕ пурăнатпăр. Упăшка мана юрататъ, манăн сăпкара пĕчĕкçеççĕ ача выртать,— пурăнăç нимрен те каях мар. Эсĕ хăвăн телейна халиччен тупаймарăн пулсан,—çакăнта ан шыра. Каях хăвăн çулупа,— пулĕ ăçта та пулсан сан валли те тўпе.

**Çтаппан.** А, кăмăлпа юратмастăн пулсан,— эпĕ сана вăйпа илĕп (*Юрă сасси*).

**Елюк.** Ах! (*Сăпка хыçне тарса ўкет.*) Мана тивес тесен, сăпкана çĕмĕрсе, ман ача урлă пусса каç!

**Çтаппан** (*салтак ачисен юррине илтсе, хăраса*). Мĕн турăм эпĕ? Каçар мана тархасшăн, Елюк!

**Елюк** (*алăк патнелле кăтартса*). Тухса кай, çылăхлă чун!

**Çтаппан.** Каçар, Елюк, каçар. (*Хăй салтак ачисем еннелле пăхать.*)

**Елюк.** Тухса кай часрах! Халех тухса каймасан, сана, Ванюк килсен, йытта вĕлернĕ пек вĕлерĕ.

**Çтаппан.** Вĕлертĕр. Эсĕ каçармасăр эпĕ вырăнтан тапранмастăп! (*Хăй тарма хатĕрленнĕ, сцена хыçĕнче „тпру“ тени илтĕнет.*)

**Елюк** (*ăнран кайса, Çтаппан патне чышкине чăмăртаса чупса пырать*). Тухса кай часрах, шуйттан! Эсĕ мана пĕтересшĕн-и? (*Çтаппан тарать*).

## 2-мĕш курăнни.

Елюк. Ванюкпа салтак ачисем кĕреççĕ.

**Палля.** (*Çтаппана курса.*) Ванюк, сан килĕнтен пĕр çын тухса тарчĕ.

**Тепри.** Вăрă мар-и, тытас ăна, тытас. Айтăр, ачасем, айтăр, айтăр!.. (*Чупаççĕ.*)

## 3-мĕш курăнни.

Елюкпа Ванюк.

**Ванюк** (*Елюк патне чупса пырса*). Кам кунтан тухса тарчĕ? А, вăл сан пата килнĕ вĕт? Кала тӳррипе, унсăрăн пурĕ-пĕр чунна кăларса илĕп.

**Елюк.** Эх, юратнă Ванюкăм, каçар мана, эпĕ айăплă мар!

**Ванюк.** Мĕн тата, кала часрах!

**Елюк.** Эсир кайсанах, эпĕ ача çывăратма хатĕрлентĕм...

**Ванюк.** Ну?..

**Елюк.** Çав вăхăтра Çтаппан килсе кĕчĕ те, мана пусмăрлама тытăнчĕ.

**Ванюк.** Çтаппан... Мĕншĕн эсĕ ăна тытса чармарăн?

**Елюк.** Эсĕ вĕлерессрен хăраса, эпĕ ăна кăларса ятăм.

**Ванюк** (*Елюка çапма аллине çĕклет*). Эсĕ те мана улталас тетĕн-и?

**Елюк.** Эпĕ айăплă мар, Ванюк, каçар мана!

**Ванюк** (*çемçелсе*). Елюк! Пăх мана куçран! Чăн калатăн-и, е суятăн-и?

**Елюк.** Чăн калатăп, Ванюк. Вăл мана пусмăрлама килчĕ. Вара хăйĕн ўсĕр пуçĕпе тĕрлĕ кирлĕ мара лĕпĕртетсе ларчĕ-ларчĕ те, мана çыпăçма тытăнчĕ вара. Вăл ман паталла ура ярса пуссанах, эпĕ сăпка хыçне тарса ўкрĕм. Вара „Малтан ман ачана вĕлер,— терĕм,—вара сăпка урлă пусса каçса, мана тин тыт", терĕм.

**Ванюк.** Чăн, чăнах, Елюк! Сан сăмахху тĕрĕс, эпĕ ăна сан куçăнта тĕкĕр витĕр курнă пек куратăп.

**Елюк.** Чăн çапла, Ванюк. Эсĕ ĕнтĕ мана çилленместĕн-и, Ванюк?

**Ванюк.** Ăçтан çиленес ман сана? Эсĕ чăн каларăн... Темме ăш çунать манăн, часрах шыв парччĕ, кăштах та пулин çăвар ăшне йĕпетесчĕ...

**Елюк** (*шыв парать*). Акă ĕç!

**Ванюк** (*ĕçет*). Ĕнтĕ ăш канчĕ. Ну, ĕнтĕ, шуйттана, пĕрре асăнтарăп, ирсĕре. (*Тулта сасăсем илтĕнеççĕ; „Ан юл! Айта!" Салтак ачисем Çтаппана икĕ аллинчен тытса кĕреççĕ.*)

## 4-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех. Ҫтаппан тата салтак ачисем.

**Палля.** Акӑ, хальхи упана тытрӑмӑр.

**Ванюк** (*мӑшкӑласа*). Кил, кил, Ҫтаппан. Мӗн-ма эсӗ пирӗн хушӑмӑра килесшӗн мар? Пирӗнпе хутшӑнма йӗрӗнетӗн-и? Ай, ҫын арӑмсене чуптума анчах лайӑх-и?

**Ҫтаппан.** Каҫар мана, Ванюк!

**Ванюк.** А-ы, эсӗ каҫар? Эсӗ каҫар-и? (*Ҫтаппана пырса ҫапать. Ăна юлташӗсем тытса чараҫҫӗ. Елюк ачине тытать.*)

**Ҫтаппан.** Каҫар, Ванюк! Эпӗ ӳсӗр пулнӑ...

**Ванюк.** Ӳсӗр!.. Сана хӑвӑн арӑму ҫитмест, мӑнтӑр! Тӑлӑх арӑмсемпе пугсӗрленсе ҫӳрерӗн те, тата ман вырӑна килсе вараласа каяс терӗн-и? Акӑ сана! Акӑ сана!..

**Палля.** Ҫитӗ ӗнтӗ, Ванюк, чарӑн (*Ҫтаппана чышать.*) Ҫитӗ, ҫитӗ...

## 5-мӗш курӑнни.

Ҫавсемех тата Йӑскар кӗрет.

**Йӑскар.** Ҫтаппан кунта-и? (*Ҫтаппана курса.*) Ҫтаппан, айта часрах килне, арӑму вилсе карӗ.

**Ванюк.** Акӑ сана тепре, арӑмушӑн.

**Палля.** Ан тив, Ванюк, йывӑр суран ан ту! (*Хӑй те ҫапать.*) Ан тив, ан тив...

**Ванюк**. А-ы! Йывăр суран? Чунне кăларса илем эпĕ унне! Тьфу, шуйттан аçи, тепĕр тесен... Намăссăр çын, тухса çухал ман куçăмран! (*Çтаппан тухса каять.*)

## 6-мĕш куранни.

Çавсемех, Çтаппансăр.

**Салтак ачисем**. Ха-ха-ха! Хи-хи-хи! Тупрĕ хăй валли!

**Палля**. Тахçанах шăл хăйранăччĕ-ха кăна. Пĕркун арман пĕвенĕ чухне, унăнне, тар юхиччен ĕçлерĕмĕр, пĕр укçа та тӳлемерĕ,— нимешĕн укçа тӳлемеççĕ, тет, шуйттан.

**Ванюк**. Эх, ĕмĕр сакки, мĕншĕн эсĕ питĕ сарлака... (*Йĕрсе ярать.*)

**Елюк**. Ан макăр, Ванюк.

**Ванюк**. Çук. Эпĕ макăрмастăп. Эх, кала, Мĕтри, купăсна! (*Мĕтри купăс калама тытăнать.*) Ярăр ташша! (*Ташлаççĕ.*)

ЧАРШАВ.

## ТĂВАТТĂМĚШ КАРТИНА

Урамра, Йăскар пÿрчĕ умĕнче.

### 1-мĕш курăнни.

**Елюк** (*пĕчченех, кĕнчеле арласа ларать, юрлать*).

Чашки, чашки, ай, сар мăйăр та,
Чашки чашки, ай, сар мăйăр—
Кампа та ларса, ай, çием-ши?
Кампа ларса, ай, çием-ши?
Чун хурланать, чĕрем макрать те,
Чун хурланать, чĕрем макрать—
Кампа та ларса, ай пуплем-ши?
Кампа ларса, ай пуплем-ши?

Эх, мăнтарăн пурнăçĕ. Пĕртте арлас килмест. Пĕр пыра тăрантарасшăн çын тарçи пултăм. Ванюк! Ванюк! Курмастăн эсĕ ман пурнăçа, пĕлместĕн... Те чĕрĕ эсĕ, те вилнĕ, çыру та ямастăн. Эсĕ те хурлăх курса пурăнатăн пулĕ, килте те пурăнма тутлă мар. Акă ĕнтĕ çиме те çук, çын ĕçне туса тăранса пурăнатăп. Хăш чухне хытă хурланнипе ĕç çинчен те манса каятăп. Мĕнле пурăнас, мĕнле пурăнас... (*Йăскар кĕрет.*)

## 2-мĕш курăнни.

Елюкпа Йăскар.

**Йăскар.** Мĕншĕн тата арламастăн? Сана ахалех тăрантарма эпир çĕрме пуян терĕн-им? Çтаппан йышши терĕн-им?

**Елюк.** Арласа ларнă çĕрте пуçа тĕрлĕ шухăшсем кĕчĕç те, шухăша карăм.

**Йăскар.** Тыткалакан çук сана, пулсан—шухăша каймăттăн эсĕ.

**Елюк.** Ах, пур, Йăскар акай, пур...

**Йăскар** (*мăшкăласа*). Пур... Ман шухăшпа, сан ăна ĕнтĕ манас та пулать.

**Елюк.** Йăскар акай, мĕн калаçатăн эсĕ? Ăçтан эпĕ Ванюка манма пултаратăп? Вăл ман ăшран та тухмасть.

**Йăскар.** Тек апла каланине ман илтес килми пулчĕ. Вăрçăри вăл икĕ телейлĕ. Те килет, те килмест.

**Елюк.** Вилмесен, хăçан та пулсан килĕ.

**Йăскар.** Ухмах! Эпĕ сана хуна ырă тăвасшăн калатăп. Эсĕ çамрăк, сăн-сăпатлă—епле хуна-ху çапла типсе пурăнас тетĕн?

**Елюк.** Ах, турă, епле кулăшла калаçатăн эсĕ, Йăскар акай. Ун пек шухăш ман пуçа пĕртте кĕмест.

**Йăскар.** Эпĕ сана уншăн каламастăп, хăвăншăн калатăп. Хăвăн ирĕк, кирек-мĕн ту. Эсĕ хурапа шурăна курман-ха, апла пулсан.

**Елюк.** Курнă та-çке, Йăскар акай, курнă. Пурăнăç шухăшĕ ман пуçа шăтарсах тухать. Эпĕ ăна эсĕ каламасăрах лайăх пĕлетĕп.

**Йăскар.** Вара, вара. Акă хĕле кĕретпĕр, мĕн çиес тетĕн? Мĕн тумланас, тетĕн? Ыйткалама каяс тетĕн-и? Çавна пĕл.

**Елюк.** Кĕлмĕçе каяс выранне хапрăк-савăта ĕçлеме каям, пĕччен хырăма тăрантарăп çавах. Ачи пурăннă пулсан, пурăнма тата кансĕртерех пулнă пулĕччĕ.

**Йăскар.** Пирĕн хĕр-упраçпала тем тумалла хапрăк-савăтра. Пĕлетĕн, хĕрарăмăн пĕр хак—май килчĕ—тутă, май килмерĕ—çакăнса та вилĕн.

**Елюк.** Сан сăмаххусем ман чĕре тĕпнех кĕрсе ларaççĕ.

Елюк ура çине тăрать, каллех ларать.

**Йăскар.** Кĕччĕр çав, кĕччĕр. Шухăшлама пĕлместĕн. Çавăн пек кĕлеткепеле эпĕ сарçу çисе пурăнăп. Авă, Çтаппан миçе хут килсе карĕ кăçал. Мĕн тутуна пăратăн, тепĕр тесен?

**Елюк.** Ванюк киле таврăнсан, вăл манне чуна кăларса илĕ.

**Йăскар.** А, тата, вилнĕ пулсан?

**Елюк.** Ах?! Вилнĕ пулсан? Вара ан тапрат, Йăскар акай, ман çӳçсем вирелле тăрса карĕç.

**Йăскар.** Чăнах та вилнĕ пулсан? Мĕн? Кала-ха?

**Елюк.** Вилнĕ пулсан, вара, эпĕ те вилетĕп.

**Йăскар.** Тьфу!

## 3-мĕш курăнни.

Елюк, Йăскар. Ача-пăчасем лашалла выляса чупса кĕреççĕ.

**Ачасем.** Тпру! Тпру!

**Йăскар.** Мĕн кирлĕ сире, шĕкĕнтĕрсем?

**Ачасем.** Мĕн, Палля пичче вăрçăран таврăннă. Сăра ĕçме чĕнме ячĕç.

**Елюк.** Ăçта вăл, ăçта?

**Ачасем.** Мĕн, хăйсен килĕнчех. Ванюк пиччепе пĕрле пурăнтăмăр, тет.

**Елюк.** Ванюк пиччу сывах тет-и?

**Ачасем.** Мĕн, ăна каламарĕ. Часрах пырăр сăра ĕçме!

**Йăскар.** Чупăр, пыраççĕ, тейĕр.

**Ачасем.** Юрать. Эй, малти! (*Вĕçтерсе тухса каяççĕ.*)

## 4-мĕш курăнни.

Елюк, Йăскар.

**Елюк.** Часрах кайса пĕлес-ха... (*Тухса кăять.*)

**Йăскар.** Чим-ха, курăпăр...

5-мĕш куранни.

Йăскар, Çтаппан тепĕр енчен кĕрет.

Çтаппан. Пурăнать-и?

Йăскар. Пурăнать.

Çтаппан. Ма вилместĕн эсĕ?

Йăскар. Тĕнче пушанса юлĕ, тетĕп.

Çтаппан. Ман шухăшпа, эсĕ тĕнчене шăршлантарма анчах.

Йăскар. Ху шăршлантар. Сан хырăм çухех мар.

Çтаппан. Ман кĕсье те çухех мар.

Йăскар. Суятăн!

Çтаппан. Мĕншĕн суяс? Эсĕ суйнăшăн укçа памастăн пулĕ?

Йăскар. Кай! Урăх сана нихçан та ĕненместĕп.

Стаппан. Мĕншĕн, Йăскар акай?

Йăскар. Э, Елюк кирлĕ пулсан, „Йăскар акай?..“ Миçе хутчен суйрăн? Тухъя тупса паратăп, тесе суять. Елюка мар, сана хĕрĕх çулхине те тупса памастăп.

Çтаппан. Йăскар акай! Мĕншĕн çиленетĕн-ха?

Йăскар. Кай, ăçтан килнĕ çавăнта.

Стаппан. Йăскар акай!

Йăскар. Кай, кай, кай!

Çтаппан (*аллине кĕсьене чикет те, Йăскар çине пăхса, укçине шăнкăртаттарать*).

**Йăскар** (*Çтаппан çинелле çаврăнса пăхать*).

**Çтаппан** (*татах шăнкăртаттарать*).

**Йăскар** (*аллине тăсса.*) Пар тата, мĕн йĕкĕлтетĕн.

**Çтаппан** (*укçине каларать*). Елюк хăçан ман пулать?

**Йăскар.** Ы-ы... (*патне пырса*). Итле, чăтас пулать кăштах.

**Çтаппан.** Урăх чăтăм çитмест.

**Йăскар.** Хă-хă... Чăтăму çитмест пулсан, укçуна ан хĕрхен, хăвăртрах пулĕ.

**Çтаппан** (*укçине парать*).

**Йăскар.** Ах турă... (*Укçи çине куçне чаркаласа пăхать. Унтан хĕвне чикет*).

## 6-мĕш курăнни.

Йăскар, Çтаппан, Палля кĕрет.

**Палля.** Аван-и, ялйышсем?

**Çтаппан.** Палля-çке ку? Аван-и? Хăçан çитрĕн? (*Ал парасçĕ.*)

**Палля.** Халь анчах. Киле çитнĕренпе пĕр витре сăра ĕçрĕмĕр анчах. Эпĕ Елюк патне килтĕм. Ванюк çинчен каласа пĕлтерес, терĕм. Çавăнпа час васкаса тухрăм.

**Йăскар.** Елюк халь анчах, эсĕ тавраннине илтсе, сан патна тухса чупрĕ. Мĕнле хирĕç пулмарăр вара?

**Палля.** Эпĕ, пахча витĕр тухса, тӳрех çырма урлă каçрăм. Елюк тата мĕнле пурăнать.

**Йăскар.** Çын ĕçне тукаласа тăранса пурăнать.

**Палля.** Ха, апла.

**Çтаппан.** Çапла. А, Ванюк мĕнле?

**Палля.** Çавна калама пĕлместĕп. Вăрçа пĕрлех кĕтĕмĕр. Мана шрапнель пырса тивиччен, эпир пĕрлехчĕ унпала... Хытă вăрçса пыратчĕ. Хăй те вĕри юнлă пулнă-мĕн... Кайран вара, хам та астумастăп—пĕлми пулнă. Мана лазарета илсе кайнă. Лазаретра унта, эпĕ виçĕ кун кĕтсе выртрăм Ванюка. „Ах, ку Ванюк килĕ-ши, килмĕ-ши“ тесе кĕтсе выртатăп. Виçĕ кун кĕтрĕм—куçа курăнмарĕ. Вара вилнĕ пулĕ-и, е тыткăна карĕ пулĕ-и тесе шухăшларăм, мĕншĕн тесен, пирĕн полкран пĕтĕмпе çирĕм салтак анчах çăлăнса юлнă. Унтан пире Мускаври лазарета куçарчĕç. Мускавра пĕтĕмпе виçĕ эрне выртрăм. Халь малалла сывалма киле ячĕç.

**Çтаппан.** Апла вара, Ванюк çинчен нимĕн те пĕлмерĕн-и?

**Палля.** Çук, нимĕн те пĕлеймерĕм.

**Çтаппан.** Сан шухăшупа, мĕнле пек? Вилнĕ-ши вăл, е тыткăна кайнă-ши?

**Палля.** Çук, пĕлместĕп.

**Йăскар.** Вăрçă час чарăнать-и? Пирĕн çĕнтерет теççĕ пулас?

**Палля.** Кам калать?

**Çтаппан.** Хаçат çине çыраççĕ.

**Палля.** Вĕсен, улпут-хуçасен, хаçачĕ вăл суять. Эпир нихăçан та вĕсен хаçатне ĕненместпĕр.

**Çтаппан.** Патши çирĕп тăрать-ха вăл. Патша калать, тет: этем виллинчен сăрт туса тултарам, çавах парăнмастăп, тесе калать, тет.

**Палля.** Ăна калама лайăх: вăл хăйĕн юнне тĭкмасть.

## 7-мĕш курăнни

Çавсемех. Ача-пăчасем тепĕр енчен чупса кĕреççĕ.

**Ача-пăчасем.** Тпру! Тпру! Палля пичей, эпир пурне те чĕнсе çавăрăнтăмăр.

**Палля.** Ну, маттур апла пулсан (*Çтаппанпа Йăскара*). Ентĕ пирĕн пата кайăпăр.

**Çтаппан.** Тавтапуç.

**Йăскар.** Ху килсе лар.

**Палля.** Эпир килетпĕр. Сывă пулăр! (*Тухса каять.*)

**Ача-пăчасем.** Эй, малти!

## 8-мĕш курăнни.

Çтаппанпа Йăскар.

**Çтаппан** (*хĕпĕртесе*). Мĕн калас тетĕн?

**Йăскар**. Çын пĕтнипе хĕпĕртетĕн-им?

**Çтаппан**. Мана мĕн? Ай, эпĕ пĕтес пулсан, маншăн кулянакан пулать, тата?

**Йăскар**. Пар тата укçуна—ку çынна макăртмалли ĕç.

**Çтаппан**. Мĕскер калаçатăн,—камăн макăрмалла тата? Ман шухăшпа, Елюкăн, ман пуянлăха кура, хĕпĕртемелле анчах.

**Йăскар**. Пар теççĕ сана. Мĕн хĕрхенетĕн-им тата çĕрсе выртакан укçуна?

**Çтаппан**. Парассине парăп та, анчах макăрмаллишĕн мар,—савăнмаллишĕн паратăп.

**Йăскар**. Йытă. Саншăн Елюка пăсма та шел.

**Çтаппан**. Мĕн вара пăсмалла? Елюк хĕр мар-çке?

**Йăскар**. Хĕре астарсан та çылăх мар. Елюк арлă-арăм.

**Çтаппан**. Ман шухăшпа, арăма астарни нимте мар.

**Йăскар**. Епле астарăн, вăл тĕлĕкĕнче те Ванюка кĕтсе пурăнать.

**Çтаппан**. Эпир ăна кĕтмелле мар тăвăпăр. Авă илтрĕн-и? Палля мĕн каласа хăварчĕ? Кун хыççăн пĕр çыру анчах кирлĕ.

**Йăскар.** Мĕнле çыру, йытă?

**Çтаппан.** Ванюк вилнĕ, тесе...

**Йăскар.** Тьфу! Эсĕ шуйттан...

**Çтаппан.** Эсĕ ухмах, укçаран хăратăн.

**Иăскар.** Мĕнле тумалла, кала? Пĕр кĕрĕшнĕскер, каялла чакмăп.

**Çтаппан** (*кĕсъинчен хут кăларса, пĕчĕк çыру çырать*). Акă, ме... Елюк килсен пар. (*Аяккалла пăхса*). Авă килет. (*Тухса пытанать*).

### 9-мĕш курăнни.

Йăскар тата Елюк кĕрет.

**Йăскар.** Мĕншĕн пуçна чиксе тавăрăнатăн?

**Елюк.** Ванюк... вилнĕ... пулмалла... Пĕтрĕ ман пурăнăç ĕнтĕ.

**Йăскар.** Ан макăр-ха часах! Тен, пурнать-и тен? Çыру пур. Вуласа пăх-ха.

**Елюк.** Ăçта çыру, ăçта?

**Йăскар** (*çырăва хĕвĕнчен кăларса парать*). Акă, тен, Ванюк çырать-и тен?

**Елюк.** Ах, чĕре сиксех тухать... (*Тĕлĕнсе пăхать*). Çырни Ванюк алли пек мар... Ванюк вилнех пулĕ. Кама вулаттарас-ши? Палля патнех тепре каям-ха. (*Кайма тăрать*).

## 10-мĕш курăнни.

Елюк, Йăскар. Çтаппан васкаса кĕрет.

**Çтаппан.** Мĕн вуламалла, кÿр хам вулаĉа парам.

**Елюк.** Нимех те мар. Палля патне каяс, терĕм...

**Çтаппан.** Эсĕ ун патне пĕрре кайса килнĕччĕ мар-и вара?

**Йăскар.** Çыру вуланăшăн мĕн пулать, вулаттар ĕнтĕ. Унта кайса киличчен, халех пĕлетĕн.

**Елюк.** На, вуласа пар!

**Çтаппан.** Хавас, питĕ хавас.

**Елюк.** Ах, Çтаппан, часрах вула!

**Çтаппан** (*Елюк çине пăха-пăха вулать*). „Деревни Хыр-касы. Елене Кудряшовой... Сывă пурăнатăр-и? Иван Кудряшов сире нумай пурăнма хушса хăварчĕ".

**Елюк** (*шуралса каять*).

**Çтаппан** (*кулать*). „Шрапнель кăкăрне çĕмĕрсе кайсан, виçĕ сехет те пурăнмарĕ"!

**Елюк.** А-а-а! (*Ӳкет*).

**Йăскар** (*Çтаппана*). Шуйттан! Эсĕ турăн, çĕр çăтса антарашшĕ!

**Çтаппан** (*аллипе Йăскар çăварне хуплать. Çилленсе*). Ан кăшкăр, шапа çăварĕ!

**Йăскар.** Кăшкăратăп!

**Çтаппан.** Кай кунтан, эпĕ хамах май кÿретĕп.

**Йăскар.** Каймастăп!

**Çтаппан.** Апла пулсан, тыт татах, выçлăх пыр! (*Укçа парать*).

**Йăскар.** Кирлĕ мар укçу!

**Çтаппан.** На татах!

**Йăскар.** Куçăнтан сурам!

**Çтаппан** (*тата хушса парать*). Тыт, хампар айĕнчи!

**Йăскар.** Халăха кăшкăратăп.

**Çтаппан.** На пĕтĕмпех, тăранми хырăм!

**Йăскар** (*илет*). Çылăхĕ сан çине пултăр. (*Тухса каять.*)

**Çтаппан.** Тьфу! Шуйттан хĕрарăмĕ!

## 11-мĕш курăнни.

Елюк, Çтаппан Елюк çине пăхса тăрать. Хĕвел анать.

**Елюк.** А-а-а!.. Пĕтерчĕç! Ванюк, ах, Ванюк, ăçта эсĕ? Ах, ăçта эсĕ, ăçта-а?

**Çтаппан.** (*Елюк çине пĕшкĕнсе*). Елюк!

**Елюк.** Кам эсĕ?

**Çтаппан** (*аяккалла*). Тăнран тухса карĕ.

**Елюк.** Кам эсĕ?

**Çтаппан.** Эпĕ...

**Елюк.** Кам?

**Çтаппан.** Сана чунтан-вартан юратакан çын.

**Елюк.** Эсĕ Ванюк-и, вара? (*Тăрса ларать*).

**Çтаппан.** Эпĕ сана çак çутă тĕнчерен ытларах юрататăп...

**Елюк** (*пăхкаласа*). Эсĕ мана юрататăн-и? Эсĕ тăшман, ха-ха-хаах!

**Çтаппан.** Елюк? Ванюк вилнĕ...

**Елюк.** Ванюк вилнĕ?..

**Çтаппан.** Ванюк вилнĕ... Эпĕ сана Ванюкран ытла юрататăп.

**Елюк.** Çук... Эсĕ Ванюк мар.

**Çтаппан** (*мухтанса*). Эпĕ чаплă пуян. Манăн мул нумай. Эпĕ Ванюк мар... Манран пĕтĕм ял хăраса тăма пултарать. Эпĕ сана хура çăкăр çитермĕп, хура ĕçпе санăн çинçе пилĕкне хытармăп...

**Елюк.** Кай ман çумран! Хăвар мана. Ман чĕрене вырăнтан ан хускат. Эпĕ ĕмĕрте те санăн арăму пулас çук.

**Çтаппан.** Эпĕ сана ылттăн пек ачашласа пăхса пурăнăттăм...

**Елюк.** Ан тархасла. Санпа пĕтĕçсе, пурнăç суранне тӳрлетес çук.

**Çтаппан.** Эх, Елюк! (*Елюк умне чĕркуçленнĕ пек туса.*) Сана юратма пуçланăранпа эпĕ ухмаха ернĕ çын пек çӳретĕп. Ăçта кайсан та эсĕ ман куç умĕнче, ман çине пăхса, ман чĕрене шăрататăн. Елюк, Елюк, юрат мана!

**Елюк.** Эй, телейсĕр чун, хĕрхенетĕп эпĕ

ċана. Йывăр пулмалла сана та. Çавах та хăвар эсĕ мана. Эпĕ те чĕре тапраннă çын. Телей курас çук эсĕ манпала...

**Çтаппан** (*аяккалла*). Çавăрнать пулас та-ха. (*Елюка, мухтанса, улталаса*). Савнă Елюк! Çӳлти çутă хĕвел те ман чуна сан чухлĕ савăнтараймасть. Эсĕ мана юрату сăмах памастăн пулсан, эпĕ паянах хамăн пĕтĕм пуянлăха хĕм-кăвар туса салатса ярăп. Унтан вара хам кăкăра хамах çĕçĕпе касса çурăп та, санăн уру умне килсе, ӳксе вилĕп.

**Елюк.** Ах, хăрушă-çке! Ахаль те пусăннă чуна эсĕ татах пăвса илес тетĕн-и? Темле пулсан та, кай, мана хама пĕччен пуçпа шухăшласа илме пар.

**Çтаппан.** Елюк...

**Елюк.** Кай часрах! (*Аякра сăвă юрри илтĕнет*).

**Çтаппан.** Сывă пул, юратнă Елюк. (*Чарăнса аяккалла*). Çавратăп, хам майлă çавратăпах.

**Елюк.** Ванюк, Ванюк! Ăçта эсĕ? Илтетне хăвăн юратнă юлташна? Çук, эсĕ илтместĕн... Эсĕ аякри чикĕре хусканмасăр выртатăн. (*Хăрушшăн, тискеррĕн*). Юн юхать... Юн!.. Ав, шăлне йĕрнĕ!.. (*Хăраса ухмаха ернĕ пек кăшкăрса ярать.* Ах-ха-ха-ха!..

**Çтаппан.** Çавратăпах хам майлă!

## 12-мĕш курăнни.

Вăйă ачисем юрласа кĕреççĕ. Карта ăшĕнче Анюкпа Ванюк.

**Вăйă ачисем** (*юрлаççĕ*).

Пĕчĕк çеç путене сарă тулла юратать, (2 хут)
Юратать, юратать, чăнахах та юратать. (2 хут)
Ай-хай ача Ванюк пур,-çав Анюка юратать (2 хут)
Юратать, юратать, чăнахах-та юратать... (2 хут)

(Ванюк карта варрине тухса Анюка чуптăвать. Вара вĕсем картаран пĕр хĕр, пĕр ача суйлаççĕ. Суйланисем карта варрине тухаççĕ. Суйланнисем вĕсен вырăнне тăраççĕ. Унтан вара çавнах тепре юрлаççĕ. Юрласа пĕтернĕ çĕре каярах юлнă ачисем чупса кĕреççĕ.

**Каярах юлнă ачисем.** Ай-яй! Елюк инке шыва сикрĕ?

**Вылякансем.** Кам? Кам? Елюк инке? Ăçта? Шыва сикрĕ? Айтăр часрах! (*Чупса тухса каяççĕ*).

## 13-мĕш курăнни.

Йăскар сцена урлă чупса тухса каять.

**Йăскар.** Ах, шуйттан. Ах, ман пуçа çиес терĕн-и? Ах, шуйттан! Йытă ами! Шыва сикет тата! (*Тухса чупать.*)

## 14-мĕш курăнни.

Муççа шывран туртса кăларнă Елюка йăтса кĕрет. Ун хыçĕнчен Пăрчкан, Йăскар, вăйă ачисем, хыçалтан Çтаппан тата ытти çынсем те кĕреççĕ.

**Çынсем.** Силлес ăна! Шăналăкпа силлес!

**Муççа.** Силлеме кирлĕ мар. Елюк кӳпсе

кайман. Эпӗ ӑна шыва путачченех туртса кӑлартӑм. Авӑ, куратӑр, вӑл сывлама та пуҫларӗ.

**Ҫтаппан** (*Елюк патне пырса*) Елюк, Елюк!

**Елюк** (*ура ҫине тӑрса*). Хура халӑх, каҫарӑр мана. (*Ывӑннипе сулӑнса каять те, ӑна Ҫтаппан тытать*).

**Йӑскарпа Муҫҫа.** Ах, Елюк, кӗҫех вилеттӗнччӗ-ҫке, ачам?

**Пӗр старик.** А, Елюк, эсӗ ку шухӑша хӑҫан тытрӑн?

**Елюк.** Ванюк, вилнӗ тесе ҫыру килчӗ. Вара ман куҫӑмра ҫутҫанталӑк тӗттӗмленсе ҫитрӗ те, чӑтаймарӑм... (*Ҫтаппан Елюка ҫӗклесе, урӑх ҫӗре илсе каять*).

**Пӗр старик.** Ай, яй-яй! Ку вӑрҫӑра нумай халӑх вилчӗ те, анчах чӗрӗ пурӑнакансем пурте вӗсем хыҫҫӑн каймӗҫ. Эпӗ те калатӑп: ман тахҫанах вилес пулать, тетӗп, темме вилес килмест. Ҫутҫанталӑк паха пек туйӑнать. Ах, хах-ха... Ватӑлтӑмӑр ӗнтӗ...

**Ҫтаппан** (*хуллен*). Елюк, эпӗ сана шывран туртса кӑлартӑм. Сан пурнӑҫна ҫӑлтӑм. Ҫавах эсӗ мана ӗненместӗн-и?

**Елюк** (*Ҫтаппан ҫине пӑхса*). Ванюк, Ванюк!..

**Ҫтаппан** (*тарӑхса*). Ы-ых!..

Ч А Р Ш А В.

## Пиллĕкмĕш картина

Сцена сылтăм енче кĕреке сĕтелĕ. Сĕтел тавралла çăка сыхса тултарнă. Туп-тулли хăна. (Май пулсассăн— уретник, староста та кĕрекене ларнă пултăр). Çаплах ĕçтереççĕ, çаплах çитереççĕ. Сулахайра, рампа çывăхнерех икĕ пичке; пĕри - сак çинче, тепри урайĕнче. Кил хушшинче туй сикет. Кĕсле, хуткупăс, параппан сассисем, ташлаççĕ, юрлаççĕ. Ку картина пĕтнĕ çĕре тул çутăлать.

### 1-мĕш курăнни.

Пÿртре хăнасем. Туй арăмĕсем иккĕн ташлаççĕ. Музăкçă хĕрарăм ташши çеммине калать. Тулта та туй сикет. Параппан çапса юрлаççĕ:

Туй, туй, туй, тесе (*2 хут*)
Çĕр çĕмĕрсе килтĕмĕр,—
Çул юсама тухмасан,
Эпир киле каяс çук,
Туйра сикме пăрахас çук.
Эпир туя каймасан, (*2 хут*)
Туй ĕренки килес çук,
Инке илсе килес çук.
Аяр, аяра!
Ой, пичче Çтаппан пур, (*2 хут*)
Инке лайăх Елюк пур,
Елюк пур та, Ванюк пур.
Аяр, аяра!

Туй, туй, туй тăвас, *(2 хут)*
Туй тăвас та çуй тăвас.
Çапла мар-и, ачасем?
Аяр, аяра...

(Тулта çак сăмахсене юрласа пĕтерсен, пÿртри туй арăмĕсем ташлама чарăнаççĕ.)

## 2-мĕш курăнни.

(Çавсемех, тата туй арăмĕсем.)

Тулта малалла туй хуллентерех сикет. Туй арăмĕсем тултан тултисемпе пĕр тĕл туса юрласа, кĕреке умне пыраççĕ. Кĕрсен юрлама кăштах чарăнаççĕ. Туй арăмĕсем юрлама чарăннă вăхăтра малтан ташланă икĕ туй арăмĕ, кĕрекерисене пырса тайăлса, акă çапла чыс тăваççĕ:

**Туй арăмĕсем.** Ĕнтĕ ан ятлăр, хăтасем, тăхлачсем. Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас тесе сикрĕмĕр.

**Муçça.** Ăрахмат чыс тунăшăн.

**Йăскар.** Ташланă хыççăн ĕçĕр-ха.

**Туй арăмĕсем.** Ĕнтĕ туйран перекетлĕ пултăр. (*Ĕçеççĕ.*)

**Çтаппан** (*тайăлса*). Тавтапуç хисеп тунăшăн.

Тултан кĕнĕ туй арăмĕсем малалла юрлама пуçлаççĕ. Юрланă вăхăтра тухса ташлаççĕ. Музăкçă арçын ташши çеммине калать. Туй арăмĕсемпе ачасем çак сăмахсене каласа юрлаççĕ:

Хăта, пире хваттер яр.
Хваттер яр та хĕрне пар,
Аяр, аяра...
Хĕрне пар та, тӳшек пар,—
Тӳшек пултăр çиттиллĕ,
Çитти пултăр чĕвтĕрлĕ,
Чĕнтĕр пултăр шăрçаллă,
Шăрçи пултăр тенкĕллĕ,
Тенки пултăр майраллă.
Майри пултăр ачаллă,
Ачи пултăр картуслă.
Картус çинче вăй вылять,
Пирĕн алра хĕр вылять,
Аяр, аяра...

## 3-мĕш курăнни.

Çавсемех. Туй ачисем, туй арăмĕсем. Туй сикме чарăнать. (Туй ачисем тултан кĕреке сĕтелĕ патĕнчисемпе пĕрлешсе юрласа кĕреççĕ. Юрлама чарăннă вăхăтра ташлакан икĕ туй ачи, кĕрекерисене пырса тайăлса, акă çапла чыс тăваççĕ.

**Икĕ туй ачи.** Ĕнтĕ ан ятлăр, хăтасем-тăхлачсем. Кĕçĕн çынсене кăмăл тăвас тесе сикрĕмĕр.

**Муççа.** Ăрахмат чыс тунăшăн.

**Йăскар.** Ташланă хыççăн ĕçĕр-ха! (*Тултарса парать*).

**Çтаппан** (*тайăлса*). Тавтапуç хисеп тунăшăн.

(Кун хыççăн татах юрлаççĕ. Юрланă вăхăтра икĕ туй ачи тата икĕ туй арăмĕ тухса, тăваттăн ташлаççĕ. Музăкçă арçын ташши çеммине калать. Тăракан туй ачисемпе туй арăмĕсем юрлаççĕ):

Çичĕ çырма пуçĕнче
Çичĕ çул кайман юр выртать.
Юрне чавса пăхрăмăр,
Кĕрĕк татки тупрăмăр.
Кĕрĕк татки кĕсъинче
Катăк чĕлĕм тупрăмăр.
Çавă катăк чĕлĕме
Кукрашкинчен хуçрăмăр.
Елюкпала Ванюка
Кĕçĕрхи çĕр уйăртăмăр.
Аяр, аяра...

(Çак сăмахсепе юрласа пĕтерне çĕре тăваттăн ташлаканĕсем чарăнаççĕ. Вара вĕсем те кĕрекерисене тайăлса чыс тăваççĕ).

## 4-мĕш курăнни

Çавсемех. Туй пуçĕ кĕрет.

**Туй пуçĕ.** Ну, ĕнтĕ, туй çыннисем! Ĕнтĕ ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр, ташларăмăр, сикрĕмĕр, хуçасене таптарăмăр. Ĕнтĕ тул çутăлнă çулпала пирĕн киле кайма тивĕçлĕ.

**Туй ачисем.** Каятпăр! Каятпăр!

**Çтаппан.** Эй, аслă туй пуçĕ! Авалхи йăлапа çул курки тума ирĕклĕ- пулатăн пулĕ?

**Туй пуçĕ.** Тавтапуç сана, кĕрĕвĕм. Эпир аслă çулпа килтĕмĕр, сана асла хумашкăн, аслă çулпах тухса кайма ирĕк пар.

**Çтаппан.** Пысăк салам сана, аслă туй пуçĕ.

(*Туй пуçĕ ĕçет те тухса каяс умĕн „Хăйматлăх юрри“ юрласа ярать.*)

Тухать-и те тухмасть-и, (2 *хут*).
Эпир киле каятпăр... (2 *хут*).

(*Туй пуçĕ, ун хыçĕнчен туй ачисем юрласа тухма хатĕрленеççĕ*).

## 5-мĕш курăнни.

(*Çавсемех. Туй арăмĕсем те çав кĕвĕпех, малалла юрлаççĕ.*)

Тавай пире япала
Трантас кашти авниччен.
Эпир панă укçине
Сĕгел ури тайличчен.
Йĕри-тавра пăхрăм та,
Пирĕн кин пекки пĕртте çук,—
Епле пулма пĕлнĕ-ши?
Ах, кинĕм пукане,
Пĕчĕк кинĕм, пукане,
Çавах илсе каятпăр!
Ай, яй-яй, ай-яй-я!..

**Йăскар.** Апла пулсан, кĕçĕн-çысене кĕреке умне тăратас та пулĕ...

**Хăйматлăх.** А, вăл ĕнтĕ ман ĕç пулать. Айтăр хампара. (*Туй арăмсем, юлнă туй ачисем, музыкçă тата ыттисем те Çтаппанпа хăйматлăх хыççăн тухса каяççĕ. Кĕрекерисем вырăнтах юлаççĕ.*)

### 6-мĕш курăнни.

Йăскар. Муççа. Хăнасем.

**Йăскар.** Ĕçĕр-ха, ырă тăвансем!

**Хăнисем.** Арахмат. Ĕнтĕ паян ĕçрĕмĕр те, çирĕмĕр те...

**Муççа.** Карчăк! Эпир хĕр паратпăр-çке? Туй тусах тата... Епле савăнса юрлас мар манăн?

**Йăскар.** Юрлах ĕнтĕ!

**Хăнисем.** Çаплах ĕнтĕ, юрлас пулать.

**Муççа** (*юрлать*). Ĕян, аян, аяях та ай, я-ах...

**Йăскар.** Ĕçĕр-ха, çийĕр-ха, савнă тăвансем!

**Хăнисем.** Арахмат. Ĕнтĕ паян ĕçрĕмĕр те, çирĕмĕр те...

**Муççа.** Карчăк! Эпир ывăла авлантаратпăр-çке? Туйлах... Мĕн-ма савăнса ташлас мар ман, Муççан?

**Йăскар.** Ташлах ĕнтĕ.

**Хăнисем.** Çаплах ĕнтĕ, ташлас пулать.

**Муççа.** Пĕрре качча тухнă хĕре туйла паракан марччĕ те... Мĕн тăвăн ĕнтĕ?.. Çтаппан

кĕрÿ кăмăлĕ... Эх, ташласа пăхас-им пĕрре (*сăвă каласа ташлать*).

Тиллит, тиллит тил ури,
Тил ури мар, хĕр ури,
Аяр, ай, яй, яй,
Аяр, аяр, аяра...
(Ташласа пырса, пичке çине кайса ÿкет.)

## 7-мĕш курăнни.

Çавсемех. Пăрчкан чупса кĕрет.

**Пăрчкан** (*Муççана*). Муççа, Муççа!
**Муççа.** Мĕн?
**Пăрчкан.** Ванюк вăрçăран таврăннă...
**Муççа.** Суятăн?..
**Пăрчкан.** Суймастăп. Авă, халь урамра çÿрет, хăй вульверпех, тет.
**Муççа** (*урăлса кайса*). Э-э, тет-тет-те!..
(Тултан „Хĕр йĕрри“ музыкĕ илтĕнме пуçлать).

**Пăрчкан.** Килеççĕ... (*Çынсем хушшинелле пытанать*).

## 8-мĕш курăнни.

Çавсемех. Елюкпа Çтаппан кĕреке умне пырса тăраççĕ. Туй халăхĕсем.

**Хăйматлăх.** Муççа шăллăма тăратăр.
**Йăскар.** Муççа!
**Муççа.** Мĕн?

**Йăскар.** Сĕтел хушшине ларас пулать! Кĕçĕн çынсем умра тăраççĕ!

**Муççа.** Кай! Çын арăмне, тата туй туса...

**Йăскар.** Яла ан култар!

**Муççа.** И... яла култарасси тин пуçланать, пĕлетĕн-и? (*Тăрса ларать.*)

**Хăйматлăх.** Муççа шăллăм, тăр часрах, çамрăксене пиллес пулать.

**Муççа.** Пиллеместĕп эпĕ вĕсене.

**Йăскар.** Чарăн, ял ухмаххи! Ларнă пултăр халех сĕтел хушшине! Çтаппана çилентеретĕн, асту.

**Муççа.** Лармастăп та, пиллеместĕп те.

**Йăскар.** Ах, турă! Персе тултарнă та, нимĕн те пĕлмест тата...

**Çтаппан.** Муççа пичче! Мĕншĕн эсĕ ман кăмăлăма хуçасшăн?

**Муççа.** Эсĕ... кам пулатăн?

**Çтаппан.** Муççа пичче!

**Муççа.** Ихи-хи-хи!

**Çтаппан.** Муççа пичче!..

**Муççа.** Эпĕ, тахçанах Муççа пичче...

**Çтаппан.** Муççа пичче! Хуна ху ытлашши ан ман! Эсĕ манăнне ĕçсе шутран тухса карăн.

**Муççа.** На, хăвăнне хăвах. Кирлĕ мар мана санăн нимĕн те!

(**Сĕтел çинчен эреке кĕленчине илсе, Çтаппан çине пеме тăрать. Муççана алăран тытаççĕ.**)

**Çтаппан.** Чарăнатăн пулсан, чарăн, Муççа!

**Муççа.** Эпĕ санран хăрамастăп!

**Йăскар.** Çыхса пăрахас ăна, ухмаха...

**Муççа.** Эпĕ ухмах мар. Эпĕ хам пӳртре. Хура-ах!

## 9-мĕш курăнни.

Çавсемех. Тата Ванюк кĕрсе тăрать.

**Пурте.** Ах!.. *Пурте тĕлĕнсе хытса каяççĕ. Елюк, Ванюк еннелле пĕрре ура ярса пусать те, ăнтан кайса ӳкме тăрать. Çтаппан Елюка тытса тăратать.)*

**Ванюк** (*тăрсан, тăрсан*). Аван туй тăватăр-и?

**Муççа.** Ванюк шăллăм! Ах, Ванюк шăллăм! Вĕсем мана кĕçех çыхса пăрахатчĕç!

**Ванюк.** Камсем? (*Çтаппанпа Елюк çине кăтартса.*) Акă çаксем-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Иккĕшĕ те паллана çынсем... (*Йăскара.*) Эсĕ те хĕр паратăн-и-ха, йĕкехӳре?

**Йăскар.** Мана ан мăшкăла... Арăмна пĕл...

**Ванюк.** Пĕлетпĕр! (*Елюк çине пăхса, хуллен кулса ярать.*) Ха-ха-ха... Чипер, чипер, кĕçĕнçын. Кĕрĕвĕ те чухăн мар пулас... Арăмне майра пекех тумлантарнă... Мĕн чухлĕ тӳлерĕн ку арăмшăн? Хулăн укçи кăштах та пулсан панă пулĕ?

**Çтаппан.** Сан укçу мар!

**Ванюк** (*шăлне çыртса*). Сан укçу мар! Эпир сирĕншĕн вăрçăра юн тăкнă чух, эсир кунта, вăрçă хӳттипе, пĕтĕм яла хăвăр алла çавăрса илсе, ĕççыннине çаратса мул купалатăр. Вăл çитмест, тата салтак арăмĕсене пусмăрлатăр.

**Çтаппан.** Эпĕ сан арăмна сутăн илмен. Вăл хăех мана савса качча пырать.

**Ванюк.** А!.. Ăçта эпĕ? Камсем эсир? Виçĕ уйăх Австрире тыткăнра пурăннă чух эпĕ кун пек пуласса шухăшламанччĕ. Ах, килте мана юратакан юлташ кĕтсе пурăнать, тесе, тыткăнран тухса тартăм. Хамăр яла курсан, чун хĕпĕртенипе, чăтаймарăм—макăрса ятăм. Яла çитсен—ялĕпе туй сикет. Кам туйĕ ку?.. тетĕп... Пĕр сăмах та чĕнмеççĕ. Ы-ых... Ман юн тăкăнни сан пуç çине килтĕр.

**Çтаппан.** Эсĕ суятăн! Эсĕ тыткăнра пулман! Эсĕ—тарса пурăннăскер, дезертир! Эпĕ сана халех тыттарса ярăп. Тытăр ăна! Тытăр!

**Çынсем** (*Ванюка тытма тăраççĕ*).

**Ванюк** (*араслан пек пуçне каçăртать*). Сирĕлĕр ман умран! (*Сирĕлеççĕ*). Çитĕ вăхăт, сирĕнпе эпир урăхла калаçăпăр, халь эпĕ акă çакăнтан тепĕр сăмах ыйтам. (*Елюка.*) Савнă юлташăм! Паллатăн-и эсĕ мана?

**Елюк** (*чĕнмест*).

**Ванюк.** Е çакă çурăлса, татăлса пĕтнĕ кăвак тумтирлĕ çынна йышăнас теместĕн-и?

**Елюк** (*чĕнмест*).

**Ванюк.** Ма чĕнместĕн? Эпĕ окопра çĕрсе выртнă чухне те, тыткăнра выçăхса пурăннă чухне те сан çинчен анчах шухăшлаттăмччĕ. Манăн, пысăк çунат ӳстерсе, сан умна вĕçсе килес килетчĕ. Эпĕ саншăн тыткăнран тухса тартăм. Австрин аслă вăрманĕнче тискер кайăксемпе пĕрле пурăнтăм. Хурал тăракансене улталаса, аслă Дунай шывĕ урлă ишсе каçрăм. Эпĕ санран пĕр виçĕ сăмах та пулин илтме тивĕçлĕ пулĕ, тесе шаннăччĕ...

**Елюк.** Эй, телейсĕр Ванюк. Эпĕ те сана нумай кĕтрĕм. Нумай саншăн куççуль тăкрăм. Виç çул хушши эс килессе шанса тăтăм... Анчах, эсĕ вилнĕ тесе çыру килсен, манăн шанчăк татăлчĕ... Пурнăç пĕтрĕ—шыва сикрĕм. Çтаппан шывран хăтарса, ман кăмăла çаврчĕ.

**Муççа.** Э-те-те-те! Елюк, сана шывран эпĕ кăларнăччĕ мар-и?

**Иăскар.** Кунта мана та лектерĕç (*пăрăнать*).

**Çтаппан.** Тытăр çакă таркăна, туй халăхĕ! Уретник! старăста! Хăвăр ĕçĕре мантăр-им? (*Лешсем пĕлми ӳсĕр лăрласа лараççĕ.*)

**Ванюк** (*револьвер кăларса*). Ан тапранăр вырăнтан. (*Аллине ерипе хăпартса Çтаппана тĕллеме пуçлать*). Эпĕ сана авлантарас тетĕп, Çтаппан!

**Çтаппан.** М-мхм.. (*Чавсине çĕклесе тытса, Ванюк çине кашкăр пек пăхса тăрать, унтан сиввĕн кулса ярать.*)

**Муççа.** Ванюк шăллăм, персе ан варалан. **Кĕреке пуç юлташĕ.** Юн ан тăк, Ванюк...

**Ванюк** (*аллине усса*). А, Ванюк... Ванюкăн чĕри сўнмен... (*Елюка*). Ну! Пăрахатăн-и эсĕ çакă намăс пĕркенчĕке, чухăн тарĕпе тĕртнĕ, чухăн куççулĕпе шуратнă çак илемлĕ тумтире?

**Елюк.** Пăрахăттăм, Ванюк, халăх мĕн калĕ? Венчетре тăнă-çке Çтаппанпа? Телей çавăн пек пулчĕ пуль!..

**Ванюк.** Пирĕн телей малалла. Чараклана хура пўртсене, чăрик-чарик хапхасене, çĕтĕк-çатăк çатансене, çĕре лапчăтса тăракан Çтаппанăн шатрун çуртне, унăн чаплă хўмине, ĕмĕртенпе пуянсен ирсĕр ултавне хупласа тăракан çак тискер хўмене, тўнтерсе, çĕнĕрен пурнăç тума пуçласан, пирĕн телей пуçланĕ. Çтаппансен шăпи тулĕ, чухăнсен чăтăмĕ татăлĕ, çак хўмене ишĕпĕр!

**Муççа.** А, ку хўмене ишсен пăсмасть пуль те-ха вăл. Япун вăрçи вăхăтĕнче тапăннăччĕ те... (*Уретниксем çине кăтартса.*) Çаксем чарчĕç. А, Елюк кинĕм, Ванюк патнех таврăнан пулĕ...

**Елюк** (*чĕнмест*).

**Муççа** Халь ĕнтĕ санăн ик упăшка. Иккĕ-

шӗнпе те венчетре тӑнӑ... иккӗшӗнчен пӗрне суйласах пулать ӗнтӗ. Ванюк хамӑр ҫын, Ванюках суйлан пуль.

**Елюк** (*ерипен пӗр утӑм ярса пусать те, сасартӑк пӗркенчӗке, хушпуна хывса пӑрахса*). Ванюк! Ванюк!

(Кӑкри ҫине пырса ӳкет. Телейлӗн тухса каяҫҫӗ).

**Муҫҫа.** (*Ванюкпа Елюка ӑсатса Стаппан патне пырса, тӑрӑхласа.*) Ҫтаппан кӗрӳ, кӗреке курки паратӑн пуль?

**Ҫтаппан.** Эп сана! (*Пуканпа пеме тӑрать.*)

**Муҫҫа.** Э-те-те-те-е! Илтрӗн-и, Ванюк шӑллӑм мӗн каларӗ? Ҫак хӳмесене ишмелле, тет...

ЧАРШАВ.

# МАЙРА УХАТНИКĔ

Çавра çăмартан кĕтесси çук,
Чăн сăмахăн суйи çук.
*(Халăх халапĕнчен.)*

## 1. „По важному делу“

Йăмăхса кайнă тӳперен хĕвелĕ ахăрса пăхать. Шупашкар урамĕсемпе сар кайăк пек хĕрсем саркаланса иртсе çӳреççĕ. Ирĕкри сас-чĕвĕсем яр уçса янă чӳречерен çунатланса вĕçсе кĕреççĕ. Иван Петрович чĕрине вĕсем, музыка кĕввисем хумхантарнă пек лăкаса, вырăнтан тапратаççĕ. Пăчă кабинетра кун каçиччен ларса пăхăр-ха—кирек камăн та чĕр сывлăшпа сывлама урама тухас килĕ.

— К черту! Ĕç упа мар, вăрмана тармĕ... Аслă „спец“ Иван Петрович хăйĕн Мускавран илнĕ „Mode de Paris“ йышши „модный“ шĕлепкине тăхăнчĕ те, пирус чĕртсе, кабинетран тухрĕ.

— Мамзель Шурăчкă... м... эпĕ „по важному делу“ Госплана каятăп. Унтан... унтан... Çынсем илтмелле, чиперех:

— Юрĕ, юрĕ, Иван Петрович! Ыйтакансем пулсан, çапла каласа парăп: „Госпланра, кĕтеттĕр пулсан кĕтĕр, кĕтмесен ыран килĕр, тетĕп“,—терĕ.

Унтан, çынсем илтмелле мар, шăл виттĕр:

— Госплана? Унтан?... Зачем врешь!..— терĕ.

Ик çŷç хĕррине кăтралатнă машинистка Шурăчкă Иван Петровича хирĕç шăтараслах пăхать. Кăвак куçĕсем Шурăчкăн вут та хĕм сиктерессĕ.

Иван Петрович хăй çине хăй тарăхса каять. Пуç миминче ниепле хăваласа тартмалла мар сăпса нăрлатать: „Шуйттан пĕлтĕр вĕсене, хĕрарăмсене. Алимент тŷлемелле мар пулсан—ыттине наплеватьчĕ“.

Урама тухсан Иван Петровичăн чĕри кăштах лăпланчĕ. Мĕн кулянмалла тата? Тупнă...

Хĕрлĕ площадь тăрăх халăх унталла та кунталла кумать. Иван Петровичăн вĕреннĕ куçĕсене кĕпер урлах курăнать: капăр майрасем капăрланса Атăл хĕрнелле тухассĕ.

Камсем-ши? Хăваласа çитсе пăхас пулĕ.

Хăваласа та çитнĕ, иртсе те кайнă—çук, палламалла мар: такам майрисем, халиччен курман. Шеремет, Иван Петровичăн чупни ахалех пулчĕ. Телейсĕр чун!..

— Аван-и, Иван Петрович? Кама васкасах шыратăр?

— „По важному делу“ Атăл хĕрне чупса тухрăм та, чорт подери, никама та курмарăм. От нечего делать, анас штоль пăрахут курма, пристăне...

## 2. Хитре пике тата „радио“

Килсе тăнă пысăк пăрахут. Пăрахут та мар—чаплă дворец темелле. Пĕрремĕш свисток парать, кайма хатĕрленет.

Çўлти палуба çине хурт пек тухса тулнă пассажирсем. Хăшĕ ахалех каялла-маялла утса çўреççĕ. Хăшĕ-пĕри тата чĕнтĕрлĕ карлăк çине ывăннă сынсем пек усăнса выртнă: иртен-кĕрен халăха тата Шупашкар пристăнне пăхса тăраççĕ.

— Шупашкар хули... Н-да...

— Туу! тут! тут!—иккĕмĕш свисток.

Акă пĕрремĕш класăн алăкĕ яр уçăлса карĕ. Тухса тăчĕ пĕр майра—картинка пекех. Хитререн те хитре пике.

Иван Петровичăн куна курсан çăтма тăнă сурчăкĕ те кĕçех пыра лармарĕ курăнать: çав тĕрлĕ сасартăк тĕлĕнсе карĕ. Камнемĕнне пăхмасăрах, Иван Петрович, сынсене васкаса чавсапа сиркелесе, кăшт маларах тухса тăчĕ...

Хурт чечеке курсан хăçан унăн илемне хапăл тумасăр иртсе кайни пур? Ахăр çав-

нашкал чӗмере ҫакланчӗ пулӗ-и-мӗн пирӗн ҫамрӑксене те: тапратрӗҫ тӑвӑтӑ куҫ чӗр прожекторсем пек хире-хирӗҫ сулӑхса пӑхма. Пӑхаҫҫӗ те калаҫаҫҫӗ: сӑмахсӑрах радиола-са пӗр-пӗрине ӑнланаҫҫӗ.

Иван Петровичӑн радиохумӗсем:

— Чунӑм... чунӑм... чунӑм... теҫҫӗ.

Хитре пике хирӗҫ:

— А? Мӗн? Ах, ты сумашедший! Ах, ты...

— Ту-у-тут! тут! тут!

Йытӑ ҫиесшӗ пӑрахутне!Васкать бродяга! Ҫамрӑк чунсене калаҫма вӑхӑт парасшӑн та мар. Каять вӗт пике. Куҫ умӗнчех кайса ҫухалать. Кам-ши? Мӗн ятлӑ-ши? Ӑҫта каять-ши? Урӑх курса пулӗ-ши хӑҫан та пулсан пӗтӗм чунтан юратса хунӑ чун татӑкне?

Иван Петрович чун хумханнипе кӑсъерен шур тутӑр кӑларса, часах вӗлкӗштерме тытӑнчӗ. Пике те хирӗҫ вӗлкӗштерет. Чӗр прожекторсем хыпса илес пек ялкӑшаҫҫӗ: вӗсен курӑнми хӑйӑвӗсем пӗр-пӗринпе явкаланса ҫыхланса илеҫҫӗ. Анчах... анчах ним тума ҫук. Пӑрахут вӑхӑтран вӑхӑт инҫене кайма пуҫларӗ. Пикен тутӑрӗ вӗлкӗшни те курӑнми пулчӗ.

Шел мӗскӗн Иван Петровича: пулӗ-ши тата тепре ун пек чуна йӑпатуллӑ телей?..

### 3. Праньккапа Мраньккa

Кун каҫиччен ӗҫлесе ывӑннӑ пек, пуҫа уснӑ Иван Петрович. Ӑна хирӗҫ пулаҫҫӗ Праньккапа Мраньккa.

Вӗсем аслӑ специалистсем. Иван Петрович вӗсен начальникӗ пулать. Питӗ маттур ҫамрӑксем. Тултан пӑхма анчах кӑшт икӗ тӗслӗрехскерсем. Праньтки шӑчӑ пек вӑрӑм, Мраньтки каска пек лутра. Праньткин хӑйне кура сӑмси те вӑрӑм, Мраньткин—лаптак. Утнӑ чухне Праньтки циркульпе виҫнӗ пек тенклеттерсе утса пырать, Мраньккa ун ҫумӗнче ҫӑмха пек йӑркаланса пырать.

— Мӗнле питӗ тарӑн шухӑша кайнӑ эсӗ, Иван Петрович?

Хитре пике чӗрене хыптарса янине манаймасӑр, Иван Петрович йывӑрӑн хурланса илет:

—Кайӑн унта, ман вырӑна лексессӗн. Ӑна та туса ҫитер, кӑна та туса пар. Туса пымасассӑн юрамасть. Ахаль те вӑн, госплантисем „хӳререн пӑрас" тесе ятлаҫҫӗ...

— Брось! Айда луччӑ ухутана. Упа тытӑпӑр.

— Ах, вӑт телей пулӗччӗ. Эпӗ пӗр упине обязательно хамах тытӑттӑмччӗ.

Иван Петрович ҫил пек хӑвӑрт, пуҫа килнӗ шухӑша йӑпӑр-япӑрах туса пӑрахать. Живо

два тенӗ пек—Иван Петрович месткомран икӗ вулӑллӑ „берданка“ илсе те тухрӗ.

Ик ҫӳҫ хӗррине кӑтралатнӑ Шурӑчкӑ умӗн иртсе кайма анчах хӗнрех япала: мӗн тунине, мӗн шухӑшланине витӗр курнӑ пекех пӗлсе тӑрать.

—Ӑҫта капла эсир, Иван Петрович? Ухутана мар-и?

— Какшӑ эпӗ „волкодав“ вӗт. Пӗрре ухутара упана тӗл пултӑм. Упи пы-ысӑк: „мык!“ тет. Яра патӑм пӑшал кучӗпе упана пуҫ урлӑ. Упа пӑлтӑр-палтӑр анчах йӑваланса карӗ.

— Паттӑр, паттӑр ухатник эсир, Иван Петрович.

### 4. „Это утки“

Иван Петровичӑн майри—майралла тумланнӑ чӑваш арӑмӗ: ырхан, мӗскӗн арӑм. Иван Петрович ун ҫине кӑвак куҫсене ҫавӑрса пӑхать:

— Ма часрах хыпаланмастӑн, упӑте кӗлетки! Ман ухутана каймалла. Мана Мранькапа Пранькка кӗтеҫҫӗ. Час!..

— Ара, Ванюк, ухутана кайма кӑшт начартарах тумланма юрамастчӗ-ши? Унта, йӑлӑмра, йӗпе те, ҫатрака та... Ытла „парӑшньӑсем“ патне кайнӑ пек тумланан.

— Эсӗ мӗн пӗлетӗн, ял тункати? Ман вара кун чул пулнӑскерӗн, специалистсем умӗнче намӑс курас-и?

Иван Петрович хатӗр. Ҫире—кӑҫал столицӑра туяннӑ ҫӗнӗ „тройка". Брюки—„летние", йӑлт шурӑ. Штиблетсене „функ" кремпа тасатнӑ. Пуҫ ҫинче „Парижла шлепке". Хулра—„полевой" бинокль. Ҫурӑм хыҫӗнче икӗ вулӑллӑ берданка. Ах, астуман: мӑйра—пурҫӑн галстук... Ҫав тери хитре ухатникшӗн Шупашкарти сӑрланнӑ майрасем мар, тытма тӑнӑ упа маткисем те каҫсах кайӗҫ: „Ах, Иван Петрович, чунӑм!" тейӗҫ...

Пранькапа Мранькка Иван Петровича курсан:

— Ҫӑва ҫӑттӑр анчах! Пурте сирӗн пек начальство пулсан, Иван Петрович, пятилетний план пире пӗрре сурмалӑх анчах, теҫҫӗ.

Ахӑрсан-ахӑрсанПранькапа Мранькка Иван Петровича луткапа Атӑл тӑрӑх, Шупашкартан аналла лартса карӗҫ. Ишме ҫӑмӑлрах пултӑр тесе, ҫуттине пӗрер пай янклаттарчӗҫ, унтан „Горпо" кӑлпассипе „закусить" турӗҫ.

Пӗрер „пай" анчах пулсан та, Иван Петровича кӑшт пуҫа тиврӗ пулас: „давай постреляю!" тесе кӑшкӑрма пуҫларӗ.

— Это што?—тет Иван Петрович, Атӑл хӗрринче ҫӳрекен кӑвакалсене „полевой"

бинокльпе пăхса.

— Это утки,—теççĕ лешсем...

Кĕрст! тутарчĕ Иван Петрович берданкăран. Кăвакалĕсем тĕлĕнсе кайса, „содомпа гомор“ тума тапратрĕç. Акă тата, çитменнине, аçа çапашшĕ: пĕр çын таçтан сасартăк сиксе тухрĕ те тапратрĕ ятлаçма, чышкипе юнаса ятлаçать.

— Ну, довольно!—тет Иван Петровичĕ.

Праньккапа Мранькка вилеççĕ кулса.

## 5. Упа тата „чарльстон“.

Йăлăмра „Астраханцевăн“ арман кÿллийĕ хĕрринче пирĕн чаплă ухатниксем кăнтăр кану турĕç. Канура тепрер „симĕс кайăкне“, шыва чăмса ан пытантăр тесе пулĕ, хăйсемех „пытантарчĕç“. Унтан вăрманалла ухутана çаланчĕç.

Нумай-и, сахал-и вăхăт иртнĕ—тытакан аллипе зверь хăех пырса лекет тенĕ пек—утса пырать упа уçланкă айăккипе тÿрех Иван Петрович еннелле. Хăмăр хăй, пысăк—утă купи хăех. Утнă майĕпе хăйĕн упа шухăшне шухăшласа пырать пулĕ: çĕрелле уснă пуçне пĕрре пĕр еннелле, тепре тепĕр еннелле лăнк-ланк суллантарса ярать.

Асту! Упа пуçне çĕклерĕ. Упа Иван Петровича курах карĕ.

Иван Петровичăн çÿçĕсем вирелле тăрса

карĕç. „Mode de Paris“ шĕлепке пуç çинчен хăех çӳлелле вăр-вар хăпарса каять. Чарăнми чĕркуççисене чĕрĕ чун кĕнĕ пулмалла: хăйсемех „чарльстон“ ташлама тытăнаççĕ.

Упа, чаплă ухатнике курсан, „ку ухатник мар, пирĕн зверьсем хушшине культурăллă поход тума килнĕ мар-ши?“ терĕ пулмалла. Çавăнпа пулĕ, упа ни тарма тытăнмарĕ, ни мĕкĕрме пуçламарĕ. Икĕ аллине дирижёрсем пек çӳлелле çĕклерĕ те, Иван Петрович умне çын пекех пырса тăчĕ.

Пăхать упа, тĕлĕнсе каять пулас Иван Петровичран: ни ухатник темелле мар, ни камит темелле мар—циркач пек, снай урисемпе „чарльстона“ шартлаттарать.

Аплине курсан, упа Иван Петрович тавра çавăрăнать тата шăршласа пăхать.

— Фу-у!—йĕрĕнсе сăмсине пăрать упа, мĕн шăрши иккенне пĕлсе. Çавăнпа пулĕ упа Иван Петровичăн икĕ вулăллă берданкине шăтăр-шатăр хуçса, вакласа пăрахрĕ. Унтан Иван Петровича питрен пăхрĕ те, мăшкăлласа кулнă пек:

— Лач! сурса хăварчĕ. Хăй вăрманалла çавăрăнса утрĕ.

### 6. Кӳлĕ тĕпĕ „ваннă“ мар.

Тепĕр енчен Праньккапа Мранькка тухаççĕ уçланка. Пăхаççĕ, тĕлĕнсе хытса каяççĕ.

— Иван Петрович! Ара мĕн пулчĕ сана капла?

Лешĕ пĕр сăмах та чĕнеймест. Ҫаплах „чарльстона“ авкалантарать. Ҫӳҫсем ҫӳлелле шăрт пек тăнă. „Mode de Paris“ шлепке ҫӳлелле йĕкĕрĕлче пек ҫавăрăнса хăпарать.

Праньккапа Мранькка аптăраççĕ. Мĕн тăвас кунпа? Тавай шыва кӳртес. Шыва кĕртсен ҫын ĕмĕрех уҫăлать. Тытаççĕ те иккĕн Иван Петровича „страханцев“ арман кӳллине кутăн „чăмпăлт“ тутараççĕ...

Крымра „морские ванны“, Кисловодскра — „нарзанные ванны“. Арман кӳлли тĕпĕ „ваннă“ пекех мар пулчĕ пулмалла. Иван Петрович:

— Пф! Пф! тесе, каялла сиксе тухрĕ те, аран-аран сăмах хушкалама пуҫларĕ.

— Шуйттан ухатине! Паянтан ӳлĕм нихăҫан та ура ярса пусассăм ан пултăр ухута тесе! — Хăй ҫинчен шăпăр-шăпăр шыв юхать. Хитре „тройкăран“ тĕсĕ те юлман.

Праньккапа Мранькка вилеççĕ кулса.

Киле тавăрăнсан, арăмĕ Иван Петровича:

— Санран пулать-и вăл упа тытасси? Эсĕ, „майра ухатникĕ“ анчах вĕт, — тесе вăрҫать.

(19.8 ҫ. „Капкăн“ журнал.)

## ВӖЛЛЕ ХУРЧӖ

Вӗлле хурчӗ—ылттăн хурт,
Мӗншӗн эсӗ нăрлатăн?
Сарă чечек тăрринче
Çавăрăнса çӳретӗн,
Сарă чечек тăррине
Пыллă карас терӗн-им?

Ах, шухăшăм, шухăшăм
Мӗншӗн эсӗ çаврăнан,
Сарă хитре хӗрӗшӗн
Мӗншӗн ăша çунтаран?
Сарă хӗрӗн илемне
Хӗвел çутти терӗн-им?

Вӗлле хурчӗ—ылттăн хурт
Шав çаврăнать, нăрлатать,
Ман ăшра та çавăн пек
Тӗрлӗ шухăш пăтранать.
Хитре сарă хӗрӗшӗн
Çамрăк ăша çунтарать.

(Хăçан çырни паллă мар.)

## ТĂПАЧĂ ЮРРИ

(Авăн çапни)

Пăт
Пат,
Пăт—пат,
Пăт-пат, пăт-пат,
Пăтти-пат, пăтти-пат,
Пăтти-пат, пăтти-пат,
Пăтти-патти, пăтти-патти,
Пăтти-патти, пăтти-патти,
Ир те пулать, каç та пулать,
Пулать, пулать, пулать, пулать.
Авăн илсен пура тулать,
Тулать, тулать, тулать, тулать.
Налук пама тырă пулать,
Пулать, пулать, пулать, пулать.
Налук парсан—Совет пуять,
Пуять, пуять, пуять, пуять.
Совет пуйсан тем те пулать:
Вăл та пулать, ку та пулать,
Хура халăх ырă курать,
Çук çын валли пур те пулать.
Пăтăлти-патăлти,

Пăтăлти-патăлти.
Пăтти-патти, пăтти-патти,
Пăтти-патти, пăтти-патти.
Пăт-пат, пăт-пат,
Пăт-пат.
Ух!

1924 ç.

## „ÇЫРМАРИ ЮРĂ“

... Ун чухнехи саманара (патша саманинче, *ред.*) чăваш музыкĕ „çырмари юрă“ анчах пулнă. Мĕншĕн тесен чăваш хура халăхĕ, вăйлă пусмăр айĕнче хĕн курса пурăннипе, ирĕк вырăнсенче, таса уйсенче, аслă çул хĕррисенче пурăнма хăранă. Вăл, ĕслеттерсе хăратнă тискер кайăк пек, шăршлă çырма-çатрасенче çеç тарса пытанса пурăннă. Ун чухне чăваш чĕлхинчен мăшкăланă, чăваш юрринчен кулнă. Çавăнпа чăвашсем урăх халăхсем умĕнче çăвара уçса ирĕклĕн хытă кăшкăрса юрлама вăтаннă. Каçсерен çеç чăваш ялĕсенче уявра вылякан хĕрсен хурлăхлă юррисем çырма тăрăх илтĕнкеленĕ...

Чăваш музыкĕ çинчен сăмах тапратса ярсан, Иван Яковлевич час-часах çакна каласа паратчĕ. Пĕрре ĕлĕк, чăваш шкулĕсене пăхса çӳренĕ вăхăтра, унăн чăваш ялĕ витĕр тухса таврăнмалла пулнă. Ывăннипе ямшăк та лашисене хуллен уттарса пынă. Тĕрлĕ шухăша кайнă. Сасартăк сас-чĕвĕсем, юрлани, çуйăхни илтĕне пуçланă. Ял вĕçĕнче, çерем çинче çамрăксем уявра юрланă пулнă. Хурлăхлă юрă сыпăкĕсем лăпкă тӳлек сыв-

лăшра пĕрре хыттăн илтĕнсе килнĕ, тепре, сывлăш чĕтреннĕ майĕпе шăранса, илтĕнми пулса таçта кайса çухалнă. Çакна илтсен Иван Яковлевич сасартăк ыйăхран вăраннă пек тĕлĕнсе хытса кайнă. Вăл хăй те чăваш ачи пулнă, ача чух чăваш хушшинче ӳснĕ, чăваш юррине темĕн чухлĕ илтнĕ, хăй те пĕрре анчах мар юрланă пулĕ чăвашăн çавăрнăçуллă юррине... Анчах нумай вĕреннĕ май, тĕрлĕ культурăллă халăхсем çинчен пĕлсе çитсен, тата чăваш халăхне те çав культурăллă халăхсен çулĕ çине кăларма шухăш тытнă вăхăтра—çакă çырмари хурлăхлă чăваш юрри Иван Яковлевич чĕрине вут пырса тивнĕ пек ыраттарса янă. Çавăнпа, ялтан тухсан, вăл ямшăка лашисене тăратма хушнă, хăй урапа çинчен анса, карта çумне пырса тăнă та, ăш тулса çитнипе, чăтайма-çăр йĕрсе янă. Вара вăл чăваш хĕрĕсем хурлăхлă юрланине чылайччен итлесе тăнă. Çав каçне вăл чăвашăн пусмăрлă, чухăн пурăнăçĕ çинчен питĕ тарăн шухăшласа çĕр каçнă имĕш.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ чăваш искусствипе музыкĕшĕн тăрăшни çинчен те пире нумай каласа параççĕ. Паçăрхи сăмаха аса илсен, ку шкул чăвашăн „çырмари юррине" искусствăн аслă, культурăллă çулĕ çине кăларас енĕпе чылай тăрăшнă.

Халăха музыкăн культурăллă çулĕ çине кăларас тесен, чи малтанах шкулсенче ачасене юрлама е музыка калама вĕрентес ĕç çинчен манас пулмасть, вăл ĕçе малалла яма тытăнас пулать. Музыка ĕçне вĕрентме мар, вăл вăхăтсенче чăваш хушшинче чи малтанах шкулĕсем те сахал пулнă. Кайрантарах, Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренсе тухнă учительсем ялсем тăрăх салансан, ыттипе пĕрле музыкăпа юрă ĕçĕ те тапранса каять. Чăваш хушшинче чи малтанхи хорсем шăтса ӳсме пуçлаççĕ. Ун чухне юрлама вĕрентес ĕçе малтанах тĕрĕс çул çине ӳкернĕ теме пултараймастпăр. Мĕншĕн тесен ун чухнехи самана пусмăрĕ айĕнче пурăннă пирки, шкулсенче пуринчен ытларах кĕлĕсем, молитвăсем юрламалла пулнă. Чĕмпĕр шкулĕнче пĕр кĕлĕсем анчах юрланипе çырлахман. Шкулта музыка теорине, нотпа сольфеджиосем юрлама „светски“ юрăсене те вĕрентнĕ. Кунсăр пуçне ачасене тата купăс (скрипка) калама вĕрентнĕ. Шкулти концертсенче вĕренекенсем хорпа та пĕччен те тухса юрланă, оркестрпа та, соло та каласа панă. Çавăнпа Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренсе тухнă учительсем музыка ĕçĕнче, юрлаттарас ĕçре хăшĕ-хăшĕ чылаях та чухлама пултарнă. Вĕсем ялти шкулсене сарăлсан та çав ĕçе пăрахман. Вĕсем ачасене юрлама вĕренткеленех. Хăшĕ-пĕри

чылаях тĕрĕс те илемлĕ юрлакан хорсем туса ĕçлесе пуранна. Вĕсем тата çав хушăрах халăх юррисене пухма тытăннă. Вĕсем хушшинче чылаях талантлă ăстасем пулнă. Пурне те пĕлсе çитерес çук, анчах акă çаксен ячĕсене каламасăр хăвармалла мар. Вĕсем: М. Д. Дмитриев, В. И. Колпаков, Р. Н. Идобаев, П. В. Пазухин, Т. С. Малышев тата ыттисем те.

1906-мĕш çулсенче Чĕмпĕр шкулне юрă ĕçне вĕрентме Иван Митрофанович Дмитриев кĕрет (ку хайхи çӳлерех асăннă Митрофан Дмитриевичăн ывăлĕ). Питĕрти Придворный Капеллăран вĕренсе тухнăскер, Иван Митрофанович питĕ образованнăй пулнă. Вĕрентес енчен те вăл питĕ талантлă преподавательччĕ. Вăл вĕрентнĕ вăхăтра Чĕмпĕр шкулĕнчи чăваш хорĕ питĕ ӳссе, вăйланса, чапа тухса карĕ. Юрланине итлеме хула вырăсĕсем чăваш шкулне ятарласа çӳретчĕç. Хулара паллă хорсем хушшинче чăваш хорĕ виççĕмĕш вырăн йышăнса тăма пуçланă. Мухтав сарăлнă майĕпе чăваш хорне тĕрлĕрен съездсене, собранисене чĕнме пуçларĕç. Çапла пĕрре, 1909 ç. январĕн 19-мĕшĕнче, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Архивнăй Комиссин собранинче юрласа панă. Комисси журналĕнче çырнă тăрăх—хорта 60 ача юрланă, чăваш юррисене пурĕ 13 юрă юрласа панă. Чăваш

хорĕ юрлани ҫинчен ҫырнă: „В отношении стройности исполнения чувашкий хор заслуживает большой похвалы. Сольный номер „Плач невесты", исполненный воспитанницей А. Букаревой, был особенно удачен. Исполнительница обратила на себя внимание звучностью и красотой голоса, безукоризненностью интонации, ровной, спокойной выдержкой и полной естественностью", тенĕ. Кунта юрланă хыҫҫăн чăваш хорне ҫав хĕллех тепре итлеме ятарлатса Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи дворянсен собранине чĕннĕ. Унта та илемлĕ юрланăшăн чăваш хорне тата Букаревăна чылай чыс туса мухтанă. Акă хайхи „ҫырмари юрă" ăҫта янраса илтĕнме пуҫланă. Пĕр пĕчĕк чăваш хорĕ пĕтĕм Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи дворянсем, аслă чиновниксем, улпутсем, губернаторсем, генералсем умĕнче тухса юрласа, хăйĕн илемлĕ сассине ҫак мăнтăрпа шыҫса ӳкнĕ улпутсене, хăшĕ-хăшĕ урăх государствăсенче те курса ҫӳренĕскерсене, тĕлĕнтерсе пĕтернĕ, чăваш юррин илемлĕхне туйтарнă. Анчах ҫак сăмахсем хыҫҫăн хăшĕ-пĕри мана: ку мĕнле капла, дворянсем мухтанишĕн хĕпĕртесе ӳкнĕ, вĕсем мухтани ҫине пĕрре лайăхраххăн сурсан та юрĕччĕ, тесе тӳрех ҫулăхĕҫ. Малтанах пĕлтерме хатĕр: ҫулăхсан та юри ӳкĕте кĕмесĕр ҫулăхни анчах пулĕ, мĕншĕн тесен дворянсем мухта-

нишĕн мар çыратпăр эпир çак фактсем çинчен. Çук, дворянсен собранинче тухса юрлани чăваш музыкĕшĕн тĕрĕс çул пулнă тесе мĕлле пуççăр çын шарлама пултарĕ-ши? Иван Яковлевича та дворянсемпе тата архиерейсемпе туслă пулса варлă пурăннăшăн никам та мухтама пултараяс çук. Мухтама мар,—Чăваш шкулĕн хорĕпе миççионерсен собранийĕсенче юрланăшăн тиркемелле. Вăл Иван Яковлевичăн чирĕ пулнă. Анчах çак фактсем вĕсем И. Я. ĕçне тĕрĕс кăтартаççĕ. Вĕсем Чĕмпĕр шкулĕн историнче чăн пулса иртнĕ событисем. Чăтлăх çырмасенче анчах каçпа янраса çухалакан чăваш юррине çавăн пек методсемпе культура çулĕ çине туртса кăларса, чăваш хура халăхĕн илемлĕ пултарăвне кăтартасшăн, палăртасшăн пулнă. Ĕлĕк вăл хăй чăваш хĕрĕсен хурлăхлă юррине итленипе хурланса тăрса, чăтаймасăр йĕрсе янă пулсан, халĕ çакă юрăсемех дворянсен собранинче хăйсен илемĕпе тĕлĕнтерни Иван Яковлевичшăн питĕ паха, питĕ чыслă япала пулнă. Ĕлĕк улпутсем чăваш юрринчен мăшкăласа кулнă пулсан, халĕ çав кулакансем хăйсемех чăваш юррине чыс туса мухтанă. Вăл чыс ахаль иртмен, Иван Яковлевич политикинче унăн хăйĕн усси пулнă... Çакна манмалла мар: Иван Яковлевичăн таврамллах курайман тăшмансем нумай пулнă.

Вăл тăшмансем чăваш шкулне хупса лартма май шыранă, чăваш хушшинче çĕнĕрен шкулсем уçнăшăн, вырăнсăр укçа пĕтет, тесе, тавлашнă, шкулсенче чăвашла вĕрентнине хирĕç пулнă, т. ыт. те.

Иван Яковлевич тăшман вăйĕсемпе те усă курма меслет тупкаланă. Вăл чи аслă чиновниксене хăйĕн майлă çавăрса илсе политика туса пынă. Аслисене хăй майлă çавăрса илсе, кĕçĕнреххисене ним мар çавăра-çавăра çапнă. Ку енчен вăл вăйлă пулнă. Çавна кура хăшхăш улпутсем хăйсемех унпа йăпăлтатма пуçланă, йăна юрасшăн пулнă, хăшĕ-хăшĕ унтан пулăшу ыйтнă, ун урлă чинсем, орденсем, медальсем илме тăрăшнă. Акă, сăмахран: Чĕмпĕр кĕпĕрниччи пуян фабрикант Н. Я. Шатров Иван Яковлевич хўттипе дворянсем хушшине хутшăнма пуçланă, орденсем, медальсем илкеленĕ. Уншăн Н. Я. Шатров Чăваш шкулĕнче икĕ хутлă чул çурт лартса панă. Ун пек ĕçе тума çав тери чее, дипломатлă çын пулнă Иван Яковлевич. Анчах çавăн пек пысăк, хутăшлă, тарăн. аслă ĕçре Иван Яковлевич пур япаларан та усă курма меслет шыранă. Çапла ĕнтĕ „çырмари юрă" та Иван Яковлевича çав ĕçе тунă çĕрте пулăшу урапине çу сĕрнĕ пек çăмăллăн кусма меслетлесе пынă.

1910—11-мĕш çулсенче Чĕмпĕр шкулĕнче

музыка вӗрентес ӗҫе тата вӑйлӑрах тапратса яма тытӑннӑ. Анчах Иван Митрофановичӑн пурӑнас кунӗ-ҫулӗ татӑлнӑ пирки, вӑл ӗҫре чылай чӑрмавсем пулма пултарнӑ. Талантлӑ вӗрентекен вырӑнне чӑваш вӗрентекенсенех тӑратас тесе, шкула К. Н. Эсливановӑна, Ф. П. Павлова т. ыт. чӗнсе илсе, вӗсене музыка ӗҫне ятарлатса вӗрентнӗ. Шкул валли духовой оркестр, ҫӗнӗрен скрипкӑсем, альтсем, виолончельсем, контрбассем илет. Шкулта виҫӗ тӗслӗ оркестр ӗҫлеме тытӑнать: духовой, струнный тата симфониллӗ оркестр. Вӗренекенсем виҫӗ тӗслӗ хорта юрлаҫҫӗ: хӗрача, арҫынача хорӗсенче тата хутӑш хорта. Музыка калама вӗрентекенсем 4 ҫын пулнӑ. Симфониллӗ оркестра пысӑклатса, вӑйлатса янӑ. Юрлаттаракансем: К. Н. Эсливанова, Ф. П. Павлов. Ентӗ чӑваш шкулӗнче консерваторинчи пек ир пуҫласа каҫчен музыка сасси йӑслать. Кӗркуннерен пуҫласа ҫуркуннеччен ҫаплах умлӑ-хыҫлӑ концертсем пулса иртеҫҫӗ. 1913-мӗш ҫулта февралӗн 23-мӗшӗнче шкулта вӗренекенсен вӑйӗпех опера лартнӑ. Главный партине выляса юрлакансем: К. Н. Эсливанова (сопрано), И. Дубровин (тенор), Ф. П. Павлов (баритон), юлашки действинче дирижёр—Ф. П. Павлов. Художник—декоратор: К. В. Иванов („Нарспи" авторӗ). Ку ӗҫ ҫинчен „Симбирянин" хаҫат ҫинче ҫырнӑ.

Музыка ӗҫӗшӗн шкулта ҫав тери тӑрӑшни ахаль иртмен. Вӗренекенсем хушшинче лайӑх музыкантсем, юрлама пӗлекенсем тата композиторсем палӑрма пуҫларӗҫ. Вӗсем кайран та, ялти шкулсем тӑрӑх сапалансан, ҫав ӗҫе пӑрахман. Ҫавна пула чӑваш шкулӗсенче илемлӗ юрлама пултаракан хорсем шӑтса ӳсме пуҫларӗҫ. Тата вӗсемех те, халӑх юррисене, кӗввисене пуҫтарса, хорпа юрлама гармонилеме тытӑнчӗҫ. Вӑл халиччен пулман ҫӗнӗ ӗҫ. Хӑшпӗр чухне пулкаланӑ пулсан та (Мошков т. ыт.) ҫавах чӑваш музыкӗн ӗҫӗсем, тӗрӗссипе каласан, Чӑваш шкулӗнчен пуҫланса кайнипе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Вӑл ӗҫӗн хӑйӗн ҫулӗсем нумай юплӗ, вӗсенчен хӑшӗ тӗрӗсси—ӑна халӗ чӑваш композиторӗсем питӗ тишкерсе шыраҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ, пӗр ҫӗрте, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче, пуҫланса кайнӑ ӗҫ, чӑваш хушшинче тавралла сарӑлса, хӑйӗн уссине кӑтартма пуҫларӗ. Чӑваш музыкӗн ҫӗнӗ историйӗ ӗнтӗ ҫакӑнтан пуҫланса пырать. Ӗнтӗ „ҫырмари сыпӑк", ӗнтӗ „ҫырмари эпоха" иртсе кайрӗ, ӗмӗрӗн кайри тӑршшӗне кайса пытанчӗ. Чӑваш музыкӗ чӑтлӑх ҫырмасенчен, симӗс йӑмраллӑ ялсенчен тухса, пысӑк хуласем тӑрӑх сарӑлчӗ. Революци пуҫлансан тӳрех: Чӗмпӗрте, Хусанта, Шупашкарта, Ӗпхӳре, Мускавра т. ыт. ҫӗрте те чӑваш хорӗсем организациленме пуҫларӗҫ.

Вĕсенчен чи вăйлисем Чĕмпĕртипе Шупашкартисем пулнă. Шупашкарти чăваш хорĕ 1923-мĕш çулта Мускавра пĕтĕм СССР Ялхуçалăх Выставкинче пĕр уйăх çурă ытларах юрласа пурăннă. Унта чăваш хорĕ ытти халăхсен хорĕсем хушшинче 3-мĕш вырăн йышăннă. Вăл хор граммофонпа калама 4 пластинка ÿкерттернĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче Шупашкарти музыка шкулĕ чылай чаплă ĕçлеме пуçларĕ. Шкул çумĕнче „Чувашская государственная художественная капелла" организациленчĕ (халĕ вăл—юрăпа ташă ансамблĕ—*ред.*). Капелла вăйланса, художество енчен ÿссе, тарăнланса пырать. Капеллăра чаплă хористсем юрлаççĕ. Капеллăра чăваш композиторĕсем ĕçлеççĕ. Юлашки çулсенче чăваш музыкĕ çинчен çырнă кĕнекесем тухма пуçларĕç. Çапла ĕнтĕ, чăваш музыкне наука енчен те тишкĕрсе вĕренме тытăннă.

**Ф. Павлов.**

Ку статья 1928 çулта тухнă „Сунтал" журналăн 10-мĕш №-рĕнче пичетленнĕ; сборнике кĕскетсе кĕртетпĕр.

## РЕДАКТОРĔ АСĂРХАТТАРНИСЕМ

„Судра“ комедие Федор Павлович Павлов 1917—1918 çулсенче çырнă.

Ф. Павлов 1917 çулта, Хусанти юридически курсра вĕренсе килсессĕн, Шемшерте (Акулево) вăхăтлăха халăх судьи пулса ĕçленĕ. Комедие вăл Октябрь революцийĕ хыççăнах çырнă пулас пулать. Ун чухнех ăна ялта выляма, сцена çинче лартса кăтартма тытăннă. Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисĕ К. Е. Егоров юлташ ку комедие 1918 çулта, январĕн 3-мĕшĕнче, Ф. П-вич рукописĕнчен çырса илнĕ. 1919 çулта, март уйăхĕнче, комедие Хусанта выляса панине асăнаççĕ. 1919 çулта, ноябрь уйăхĕнче, комеди „Шурăмпуç“ журналăн 6-мĕш №-рĕнче пичетленнĕ. Вулакансен масси питех ыйтнипе, комедие кайрантарах „Сунтал“ журнала кĕртнĕ. Унтан „Ялта“ пьесăпа пĕрле вăл икĕ хутчен пичетленсе тухнă.

Чи малтанах ку комедие „Кулмалли пĕр сыпăклă пьеса (шутка)“ тенĕ. Комедие Ф. П. Павлов юлашки хут 1924 çулта, де-

кабрĕн 12-мĕшĕнче, тӳрлетсе пăхса тухнă. Унăн алçырăвне вăл Шупашкарти Чăваш музейне панă. Ун çинче вăл:

Ввиду того, что чувашская печать признала мою пьесу достойною для издания, кроме того, настоящая тетрадь сохранилась как единственный экземпляр авторского оригинала, который мне доставили акулевцы, нахожу достаточно смелости передать эту рукопись Центральному Чувашскому музею. Автор, 11/IV—25 г. г. Чебоксары.

тесе çырнă. Прологĕ (хăй калашле, фельетонĕ) пирки авторĕ музее панă алçырăвĕнче те асăнать.

„Чаршав уçăлсан, суда килнисем диван çинче виççĕн-тăваттăн калаçкаласа лараççĕ. Калаçни куракансене илтĕнмест. Çак пьесăна лартнă чухне фельетонне те выляс пулсассăн, ăна çав çынсемех выляççĕ," тенĕ. Фельетонĕ (комедин прологĕ, 1-мĕш курăнни) çавăн пек пулнă:

## ПРОЛОГ

— Суд çук, суд çук, теççĕ...
— Судсăр самана—тăварсăр пашалу вăл.
— Самана мар—салакайăк...
— Ан янтра, тĕнче ухмаххи! Мĕскер пел-

кетĕн... Халĕ мĕскер шатри сучĕ... „народнăй правă“ вĕт!

— Эпĕ суд йĕркипе ура та ярса пусман. Мана суд кирлĕ мар. Эпĕ судсăр та лайăх пурăнатăп... Йÿççине пĕтерчĕç, çавă кансĕр.

— М-ма-ма? Унтан-кунтан аптăрамастпăрçке... Хăм патма пыр, „кăвакалне“ сакăрвуннăпах парăп-çке. Пĕрре Ухтерккепе Çитăр ĕççе кайрĕç. Ухтеркке, пĕр-иккĕ сыпсанах, мачча çине пăхса юрлама пуçларĕ.

— Ухтерккинне ун чух пуçне çапса шăтарнă, тет.

— Кам?

— Кам пĕлет вĕсене...

— Юманай ялĕнче çын çапса пăрахнă, тет...

— Кам-ши? Акă тата!..

— Эй, тĕнче ухмаххи... „тет“ те „тет“, ялан „тетлетсе“ ларать.

— Паян суд таврашсем килнĕ...

— Судсăр май килет-и вара?

— Судсăр ăçтан пурăнатăн. Мана хамах „Катăк Çăвар“ ĕнер халăх çинче каларĕ: Савалей, сана пĕрре ислетсе илетĕп-ха, сассăр пăшалпа перетĕп“, тет.

— Ман хамăн та суда памалли пурччĕ те, ĕнер килсе патăм: суд пур-и, тетĕп. Пур! тет. Вара чунăм лăштах турĕ. Каюра Петĕрĕ те суда пынă та, кускалать анчах.

— Ах турă, тĕнче çĕнĕрен çуралнă пекех

туйӑнчӗ-ҫке... Чутах вӗтсе ҫиетчӗҫ, судне час тумалла мар-ши, тет.

— Шукӑль Микулая, лаша вӑрланӑшӑн, виҫӗ ҫула тӗрмере лармалла тунӑ, тет.

— Лайӑхрахчӗ вӗсене, вӑррисене. Ҫавна шыраҫҫӗ вӗсем...

— Матак Кришкине, тырӑпа сутӑ тунӑшӑн тата ытти спекуляципе хӑтланнӑшӑн, пилӗк ҫуллӑха, тет.

— Мускав Энтрине, Илле арӑмне ыталанӑшӑн, тӑхӑр уйӑха, тет.

— Хе-хе! Лартӑр унта тепӗр Энтри ҫураличчен...

— Хы-хы-хы! Хо-хо-хо!! Ха-ха-ха!..

К. Е. Егоров аллинче усраннӑ алҫырӑвӗ тӑрӑх, „Судра“ комедин прологӗ ҫавӑн пек. Ӑна кайран кӑшт урӑхлатарах та выляна. Пролога халӗ выляса парсан та ӗҫе питех пӑсас ҫук пек, ман шутӑмпа. Вӑл комедири ӗҫ хӑҫан пулнине систерет те, „суда килнисен“ рольне выляканӗсене кӑштах чӗмсӗр лартасран хӑтарать.

Пичетленсе тухнисемпе алҫырӑвӗсем хушшинче комедин пысӑк уйрӑмлӑхӗсемех ҫук. Ф. П-чӑн малтан ҫырнинче вирьялларах, тӑван ялӗнчи пек сӑмахсемпе сӑмах ҫаврӑнӑҫӗсем ҫеҫ ытларах пулнӑ.

„Ялта“ пьеса тӑрӑх халӗ ҫамрӑк композитор А. Орлов-Шуҫӑм юлташ опера ҫырать.

Ăна вăл иккĕмĕш вариант тăрăх тата ăна çĕнетерех, раснах юлашки картинне вăйлатса, кăтартасшăн.

Ку пьесăна Ф. П. Павлов хăй те музыкăллă драма тăвасшăн пулнă. Кашни пайнех юрăсем кĕртсе ăна илемлетнĕ. Кайрантарах Ф. П. Павлов тата музыкăллă комеди çырас шухăшпа çунса çӳретчĕ; ун пирки вăл поэтсемпе те калаçса пăхнă, либретто çырса пама ыйтнă.

„Ялта"—Ф. П. Павлов чăваш театрĕ пирки хăй шухăшланă шухăшĕсенчен пĕрне ĕçпе туса пани пулать. 1919 çулта Хусанта Чăваш театрĕнче ĕçленĕ иккĕмĕш режиссер (кайрантарах Чăваш красноармеецсен труппин организаторĕ тата аслă режиссерĕ) пулнă Тал-Мăрса драматургпа (Георгий Васильевич Зайцевпа) иксĕмĕр Ф. П. Павлов патне номера кайсаттăмăр. Ун чухне Ф. П. Хусанта институтра вĕренетчĕ пулас. Федор Павловичпа Тал-Мăрса çавăнта чăвашсен оригиналлă пьесисем („Судра", „Ухатер", „Вăхăтсăр вилĕм" т. ыт.) çинчен, малашне мĕнле пьесăсем çырассипе пирĕн драматурги ĕçĕсем çинчен калаçрĕç, вăл мĕнле çулпа каясси çинчен те сăмах хускатрĕç. Ф. П. Павлов пьесăсене юрăсем, кĕвĕсем, вăййăсем, ташăсем кĕртсе ытларах илемлетме кирли çинчен каланăччĕ. Пирĕн драматурги украи-

нецсенни евĕрлĕрех пулмалла, терĕ. Çавăнпа та „Ялта“ драмăна унăн сăнавлă ĕçĕ теме те юрать. Ăна вăл кайрантарах сырнă, анчах çулнех татса калаймастпăр. Шемшерте хор кружокĕ организацилесе ĕçленĕ вăхăтра çырма тытăннă пулмалла.

„Ялта“ драмăна кăштах урăхлатма кирлине кайрантарах Ф. П. Павлов хăй те калатчĕ. Çавна шута илсе, ăна çĕнетнĕ те. Постановка валли çĕнетессе ана Парне тата Н. Айзман çĕнетнĕ, эпĕ редакциленĕ май вăл ĕçе хутшăннă.

„Ялта“ драмăна мĕншĕн çĕнетме кирлĕ пулнă-ха?

Çырасса пит те ăста çырнă пулин те, „Ялта“ пьесăра Ф. П. Павловăн уççăн татса паман ыйтăвĕсем пурри палăрать. Сăмахран, акă, Ванюк, çартан таврăннă хыççăн, ял куштанĕпе—Çтаппанпа вирлĕ кĕрешесси ыйтăнне, хăйĕн юратнă арăмне Елюка персе пăрахнине тата ытти хăшпĕр ыйтăвсене ĕненмелле мар пек туйăнаççĕ.

Ф. П. Павлов ялта этемсем пурлăх тата тивĕçлĕх тĕлĕшĕпе те капитализм вăхăтĕнче пĕр маррине лайăхах пĕлсе тăнă, ял куштанĕсем чухăнсене пусмăрласа мăшкăласа пурăннине витĕрех курса тăнă. Пьесинче хăшпĕр типсене питĕ лайăх кăтартать вăл. Анчах пьесăри хăшпĕр геройсене (ялти вăй-

сене) вӑл тивӗçлипе хӑйсен чӑн-чӑн класлӑ вырӑнне çивӗччӗн тӑратса, чӑн-чӑн пурӑнӑçри пек кӗрештерейменпек туйӑнать.

„Ялта" драмӑна постановка валли çӗнетсе пичетленӗ вариантра халӗ чылай çӗнӗ шухӑшсем палӑраççӗ.

„Ялта" „4 пайлӑ драма" вырӑнне „5 картиналлӑ пьеса" пулса тӑнӑ. Улӑштару енчен чи палли—пьесӑри геройсене хӑйсен тивӗçлӗ класлӑ вырӑнне тӑратни. Çӗнетнӗ пьесӑра ӗнтӗ Елюкӑн, Ванюкӑн т. ыт. пурӑнӑçне улӑштарса пыраканӗ социаллӑ процессем иккенне лайӑххрах туятӑн.

**Елюк** — карт лайӑх тухманнипе „ах, ырӑ пулас çук", „чӗре ырра сисмест", „турӑ тепӗр тӗслӗ çырнӑ" тесе калакан хӗрарӑм вырӑнне, авалхи йӑласене пӑхӑнса, „эпӗ тин сан патна пырсан та хам телее тупас çук" тесе, Çтаппан майлӑ хыттӑнах тӑрса, вилме те хатӗрленекен хӗрарӑм вырӑнне, халӗ, кив пӗркенчӗке хывса пӑрахса, Ванюк майлӑ, çартан таврӑннӑ мӑшрипе—чухӑн Ванюкпа пӗрлешсе, унпа пӗрле çӗнӗ пурӑнӑçшӑн кӗрешӗве тухма хатӗр хӗрарӑм пулса тӑрать

**Ванюк**—ял чухӑнӗ, Россия пролетарипе пӗрле революци тума хатӗрленсе çитнӗ çар сынни. Вӑл халӗ хӑйӗн класлӑ тӑшманӗпе (Çтаппанпа, ӗмӗрхи пусмӑрпа) тӳрех тытӑçса

ӳксе кӗрешекен пулса тӑнӑ. Вӑл, хӑйӗн арӑмне персе пӑрахса, „ухмаха ерсех“ таҫта „чупса тухса кайса“ кӗрешӳрен пӑрӑннӑ пек курӑнмасть.

**Ҫтаппан** та тек простӑ „авланнӑ ҫын“ мар ӗнтӗ ку пьесӑра. Пурӑнӑҫ ӑнманни ҫине „тарӑхнипе“ ӗҫсе, хыттӑн пусса утса ҫӳрекен, тата „пӗчӗк ача пек алӑ тӑсса“ чунтан-вартан хӗрарӑма юратакан „вутчулӗ пек тивсе каякан чӗреллӗ“, шыва сикнӗ Елюка ҫӑлакан ҫын сӑнӗ выранне, вӑл—ултавҫӑ, ял куштанӗ, кулак, ҫынна чуралатса, унӑн ӗҫ вӑйне ӗмсе пурӑнакан тип пулса тӑнӑ. Юратӑва та вӑл хӑйӗн пурлӑхӗпе сутӑн илесшӗн, юрату сӑлтавӗпе ҫыннӑн пурлӑхне те (малтанхи арӑмӗнне те, Пӑрчканӑнне те) хӑй енне сӑптӑрать, хӑй тӗллевне ҫитсе хыпса илессишӗн вӑл вӗҫӗмсӗр улталама, суйма та хатӗр. (Суя ҫыру, шывран туртса кӑлартӑм тесе суйса „хама шывран туртса кӑларнӑшӑн эпӗ—санӑн“ тесе калаттарса, Елюка хӑй майлӑ ҫавӑрни. „Ванюк — дезертир“ тесе суйни т. ыт. те).

**Пӑрчканӗ** те хӑйӗн пуянлӑхне упраттарас тесе Ҫтаппанпа пӗрлешесшӗн ҫунакан хӗрарӑм мар, пуянпа пӗрлешсе унӑн пурлӑхне ӑмсанса, „пыллӑ-ҫуллӑ“ пурӑнӑҫне кӗрсе ӳкме ӗмӗтленекен, анчах ку тӗлӗшпе пуянӑн пархатарне курман, улталаннӑ середнячка.

**Муçça та, Палля та** халĕ урăх сăнлăрах ĕнтĕ. Çĕнелнĕ сăнсем пьесăра тата пур.

Диалогсене кĕскетнĕ, хăшпĕр курăнусем те тухса ӳкнĕ.

Ĕлĕк „Ялта" драмăна куракане, пьеси хăйне кăмăла килнĕ, хытă хумхантарнă пулин те, Çтаппан пек куштансене тарăхса курса ларнă пулин те, „çухалса кайсарах" театртан тухнă. Елюксем пĕтнĕшĕн кулянса, пуçне усса таврăнма та пултаратчĕ вăл. Халĕ пьеса пысăк оваципе, савăнăçлă пĕтет, куракана вăл кĕрешĕве мобилизацилет.

Акă мĕн çырнăччĕ 1932 çулхи хаçатра ку пьесăна Чăвашсен академиллĕ театрĕнче выляса пани çинчен:

„...Вак-тĕвек çитменлĕхĕсем палăраççĕ пулин те, куракана вăл килĕшет.

Чăваш ялĕнчи кĕрешĕве, Октябрь çеç пире çав çтаппансемлĕ, пусмăрлă, тĕшмĕшсемлĕ ялăн тăкăска „реальноçĕнчен" хăтăлма чăн çул уçса панине туйса илетĕн. Епле кĕрешме кирлĕ пулнине, халĕ те çтаппансен юлашкийĕсемпе пĕр килĕшӳсĕр çапăçма, вĕсен тымарĕсене кăкласа ывăтма кирлине татах та хытă ĕненсе, хаярлăхпа кĕрешĕве авăрланатăн".

Ф. П. Павловăн мĕнпур творчествипе интересленекенсем пуррине асра тытса, тата вăл тĕрлĕ жанрпа çырнине кăтартса парас

тесе, эпир сборнике унăн пĕчĕкрех произведенийĕсене те кĕртетпĕр.

**„Вĕлле хурчĕ“.** Ф. П. Павлов хăйĕн хĕртантăшне К. Э-на аса илсе çырнă лирикăллă юрă. К. Э пирки тунсăхлани Ф. П. творчествинче те, пурăнăçĕнче те асăнма тивĕç йĕрсемех хăварнă.

**„Тăпачă юрри“** чăваш халăх юррисене, раснах ĕç юррисене (*„Каска юрри“*, *„Пир çапакансен юрри“*), вĕсене илемлетмелли майсене, янтравлăхне сăнаса вĕреннĕ май çырнă речитативлă сăвă. Ун тăрăх композитор Б. П. Воробьев юрă çырнă

**„Майра ухатникĕ“**—Шупашкарти упа тытатпăр тесе каппайса çӳрекен сунарçăсенчен тăрăхласа çырнă шӳтле калав. Ăна Ф. П. Павлов „Капкăн“ журнал редакцийĕ ыйтнипе çырнă.

Ф. П. Павловăн произведенийĕсем тата пур. Вĕсене халĕ йĕркелесе çитерейменнипе, вĕсен кĕске списокне кăна кĕртетпĕр.

## Ф. П. ПАВЛОВ ÇЫРНĂ ПРОИЗВЕДЕНИСЕМ

### 1. ЮРЛАМА ТАТА МУЗЫКА ВАЛЛИ ÇЫРНИСЕМ

1. **„Ача-пăча сасси“**—ачасем валли çырнă вăйă-юрăсем, 21 юрă.
2. **„Хитре юрăсем“**—музыкăпа каласа пĕччен юрламалли юрăсем, 10 юрă.
3. **„Сăрнай“**—илемлетнĕ чăваш юррисен кĕнеки, 1924 çулта Шупашкарта пичетлесе кăларнă.
4. **„Çĕнĕ юрăсем“**—Октябрь революци 10 çул тултарнине хисеплесе кăларнă илемлĕ юрăсен сборникĕ. Унта Ф. Павловăн 7 юрă кĕнĕ. Шупашкарта 1928-мĕш çулта пичетленсе тухнă.
5. **„Çĕнĕ сăрнай“** гармониленĕ е çĕнĕрен çырнă юрăсен сборникĕ. Унта Ф. Павловăн 18 юрă кĕнĕ.
6. **„Сăрнайпа палнай“**—симфониллĕ оркестр валли çырнă.
7. **„Марш“**—Чăваш автономийĕ 10 çул тултарнине уявланă тĕле духовой оркестр валли çырнă.

8. **„Чӳк“** (киремете кӗлтуни)—соло, хор юрласа тата оркестрпа каласа ирттерекен вӑййӑллӑ юрӑ-сценка.

9. **„Вӑййӑ“**—оркестрпа хор тата соло валли сценка (пичетленмен).

10. **„Хӗрлӗ ҫара каякансен юрри“**—хорпа юрлама гармониленӗ юрӑ. „Сунталра“ пичетленӗ. Ленинградра вӗреннӗ чухне Ф.П. Павлов тата ҫӗнӗ юрӑсем ҫырнӑ. (**Кӑвак лутка**“, „**Уллах юрри**“).

11. Скрипка валли этюдсем.

12. **„Кӗтӳҫ“** —скрипкӑпа пианино валли ҫырма тытӑннӑ лирикӑллӑ кӗвӗ (ҫырса пӗтереймен).

13. **„Чӑваш юррисем“**—Ф. П. ҫырса илнӗ 175 кӗвӗ, сӑввисем 1700 яхӑн (пичетленмен).

14. Г. Ф. Федоров юрласа панӑ юрӑсем.

## 2. ЛИТЕАТУРА ПРОИЗВЕДЕНИЙӖСЕМ

1. „Судра“—пӗр пайлӑ комеди.
2. „Ялта“ —4 пайлӑ драма.
3. „Майра ухатникӗ“—шӳтлӗ калав, 1930 ҫулта „Капкӑн“ журналта пичетленнӗ.
4. „Тевик“—чӑваш паттӑрӗ ҫинчен кӗвӗлесе ҫырнӑ поэма.
5. „Лурский“—повесть, вырӑсла.

6. „Ошибка“—калав, вырӑсла.
7. „Ӑвӑн ҫапни“—сӑвӑ.
8. „Колчак ҫинчен“ диалог тата ытти те.

## 3. СТАТЬЯСЕМ, РЕЦЕНЗИСЕМ

1. „Речитативы в Чувашской народной музыке“. 1923 ҫулта „Красное жало“ журналта тухнӑ.

2. „Чӑваш музыкӗ“—1923 ҫулхи чӑвашла пысӑк календарьте тухнӑ монографи.

3. „Чӑваш хорӗ Мускавра“—„Ӗҫлекенсен сасси“ журналта тухнӑ.

4. „Сунтал“ журналта Ф. П. статьйисем чылай. Сӑмахран: „Чӑваш кӗсли“ (1928 ҫ.), „Чарӑннӑ сасӑ“, (1929 ҫ.), „Ҫырмари юрӑ“ (1928 ҫ.) „Чӑваш музыкӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем“ (1928 ҫ., 1—7 №№).

5. Хаҫатсенче, журналсенче „Аллегро“, „Хветке“, „Х. П.“ е „Х. Павлов“ тесе алӑ пусса ҫырнӑ рецензисем, искусство тӑрӑх ҫырнӑ статьисем чылай.

6. Чӑваш музыкӗ ҫинчен Мускавра Ленин ячӗпе хисепленсе тӑракан библиотекӑра ҫырса илнисем тата ытти хаклӑ алҫырӑвӗсем те пулма кирлӗ.

---

## ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| **Н. Васянка.** Композитор, драматург (умсӑмах) . | 3 |
| **„Судра“** (пӗр сыпӑклӑ комеди) . . . . . . . . . | 23 |
| **„Ялта“** (4 пайлӑ драма, малтанхи вариант) . . . | 55 |
| **„Ялта“** (5 картинӑллӑ пьеса, иккӗмӗш вариант) | 121 |
| **„Майра ухатникӗ“** (кулӑшла калав) . . . . . . | 179 |
| **„Вӗлле хурчӗ“** (Юрӑ) . . . . . . . . . . . . . | 189 |
| **„Тӑпачӑ юрри“** (сӑвӑ) . . . . . . . . . . . . . | |
| **„Ҫырмари юрӑ“** (статья) . . . . . . . . . . . . | 192 |
| Редакторӗ асӑрхаттарнисем . . . . . . . . . . . | 203 |
| Ф. П. Павлов ҫырнӑ произведенисем . . . . . . | |
| 1. Юрлама тата музыка валли ҫырнисем . . . | 213 |
| 2. Литература произведенийӗсем . . . . . . . . | 214 |
| 3. Статьясем, рецензисем . . . . . . . . . . . | 215 |



Редактор **Н. Васянка**

Зак. № 236. Тир. 3000 экз. авт. л. 7 печ. л. 6,75. НТ 3513

г. Чебоксары, тип. № 1 Упр. Издательств и полигр. при СНК ЧАССР.

Цена 3 руб.

Ф. П. ПАВЛОВ

СОЧИНЕНИЯ

на чувашском языке

Госиздат ЧАССР